к84.09(=Чув)
Э53
4-46203



Валентина Эльби

# ЧĔНТЕРЛĔ КĔПЕР

Национальная библиотека ЧР
4-046203



К84.09 (= Чув)
Кур
Э53



Валентина Эльби

# ЧĔНТĔРЛĔ КĔПЕР

Кр

ЧĂВАШ АССР КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1967

ПРОВЕРЕНО
20 07 13 СЕН 2017

11207-губ

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

7—6—3
150—66М

И-46203

Национальная библиотека
Чувашской Республики

# Ч ЁНТĔРЛĔ КĔПЕР

Утать урампа пĕр ушкăн çын, васкамасăр, ерипен. Тӳрех тавçăрса илен — экскурсантсем. Е унта, е кунта чарăнса тăраççĕ. Улăм шлепке тăхăннă çын кашнинчех ушкăн умне тухса калаçать. Экскурсовод ĕнтĕ вăл.



Çапла, халĕ Атăл тăрăх пăрахутпа ярăнакансем Шупашкара кĕмесĕр иртмеççĕ. Пурте чăвашсен тĕп хулипе паллашасшăн. Хула урамĕсенче урăх çĕршывсенчен килнисемпе те тĕл пулма пулать. Курччăр, ара, эпир мĕнле пурăннине.

Ушкăнпа ермешрĕм эпĕ те. Нумай та каймарĕç, улăм шлепкеллĕ çын çапла пĕлтерчĕ:

— Сире тин çеç туса пĕтернĕ чĕнтĕрлĕ кĕпер курма чĕнетĕп.

Эпĕ савăннипе чутах ташша ямарăм. «Чĕнтĕрлĕ кĕпер...» Пĕлесчĕ вĕсен çак ят ăçтан тухнине!

Ав вăл, чĕнтĕрлĕ кĕпер. Аякранах курăнать. Калăн, сывлăшра çакăнса тăрать, тейĕн. Карлăкĕсем мĕнлерех!

Çывхаратпăр. Мăн колоннăсем курăнса каяççĕ. Хăйсем питĕ тăп-тăп, мăнаçлăн курăнаççĕ. Çичĕ пар бетон юпа. Ывăç тупанĕсем çинче çĕклесе тăраççĕ кĕпере. Колоннăсем хушшипе кĕпер айĕн автобуссем каллĕ-маллĕ чупаççĕ. Перĕнмеççĕ маччана, кĕпер çӳллĕ.

Чупчăрах автобуссем, çӳреччĕрех çыннисем халĕ çул пур чух. Кайран, Шупашкар ГЭСне тусан, Атăл шывĕ тулса хăпарĕ те, пĕчĕк пăрахутсем ишме тытăнĕç.

— Хайпăлкка шывĕ урлă хывнă кĕпер,— тет экскурсовод.— Ун урлă троллейбуссем чи малтан пин те тăхăр çĕр утмăл пиллĕкмĕш çулта Аслă Октябрь уявĕ умĕн çӳре пуçларĕç. Ку кĕпере тунă çĕрте мĕн пурĕ те хĕрĕхаллă çын çеç ĕçленĕ. Анчах та вĕсен аллинче калама çук хăватлă техникă пулнă. Ку чĕнтĕрлĕ кĕпере...

Ушкăнтан уйрăлса эпĕ сăрталла хăпаратăп та кĕпер çине кĕретĕп, мĕн тери сарлака вăл, вăрăм. Кунтан экскурсовод сăмахĕ те, çынсем хăпартланса калаçни те илтĕнмест. Пулин, пур-пĕрех вĕсенчен ытларах пĕлетĕп. Ку таврари вырăнсем пĕтĕмпех манăн куçăм умĕнче улшăнса илемленчĕç. Кĕперĕ, чĕнтĕрлĕ кĕперĕ вара маншăн чи çывăх япала.

Тăратăп эпĕ кĕпер карлăкĕ çине тайăнса. Вăхăт сăпки иртсе кайнă çулсене илсе çитерет. Уç кăна историе

юлнă кун-çул страницине, куç умне каллех, паянхи пекех, тухса тăрать çывăх тусăм Атнер, бригадă ывăлĕ Ухвань, Михаил Трофимович бригадир, Аркадий пичче — крановщик...

## I

Қарлăклă картлашка тăрăх васкаса пĕр ача чупать. Мĕнле ача? Қам вăл? Палласа илесшĕн тинкерсе пăхмасан та юрĕ. Вăл ача — эпĕ, Ленти. Қиле васкатăп. Қартлашкийĕ вара кукăр-макăр сукмаках. Пĕрре шырланкă тĕпнелле, тепре сăрталла хăпарать, унтан сĕвек вырăнпа тӳррĕн иртет. Пирĕн килĕ ав лере, çырма лапамĕнче. Сăртне купалаканĕ, юри тенĕн, ансăр та тӳрем лапамсем яката-яката хăварнă. Лапамсенче вара пур çĕрте те йывăç пӳрт. Вĕсен икшер чӳречи ту куçĕсем пекех туйăнаççĕ.

Тĕнче кунта çак вакă картлашкасенче тытăнса тăрать, тейĕн. Қартлашкапа çырма тĕпĕнчи çăл хĕрне шыв ăсма анан, картлашкапа юлташ патне чупан, картлашка тăрăх хăпарса хула урамне тухан. Қартлашкасăр ниçта та пĕр утăм ярса пусаймастăн. Қартлашкан пĕр пусми çинче чарăнса тăратăн та йĕри-тавра пăхса шухăша каятăн: хула тесен, хула мар, ял тесен, ял мар. Пĕр-пĕр халапра пурăнмастпăр-ши эпир?

Çырма хăякĕсенче çуртсем сахал мар, тӳр рете лартсан, самаях вăрăм урам тăсăлмалла. Çурчĕсем нумайтарах киввисем, пăч-пач çĕнни те курăнкалать. Пирĕн пӳрт ĕнтĕ лапчăнсах ларнă. Çĕрĕк. Тахçантанпах пурăнатпăр хамăр унта. Эпĕ çеç мар, атте те çакăнтах çуралса ӳснĕ, тет. Çуртне асатте çамрăк чухне çавăрнă имĕш.

Хăнăхнă çыннисем кунта пурăнма. Қаç пулать те ир çитет. Аслисем ĕçе çӳреççĕ. Таврăнсан, çу кунĕсенче пахча çимĕç туса илесшĕн кил таврашĕнче çĕрпе айланаççĕ. Эпир ачасем шкула чупатпăр. Çу çитсен яра кун Атăл хĕрринче шыва кĕретпĕр.

Çулла, пĕррехинче, ирех агитаторсем килтен киле кĕрсе пухăва йыхăрса çӳрерĕç. Кун йĕркинче пĕртен пĕр ыйту: çырма айлăмĕсенчи çуртсене урăх çĕре куçарасси.

Çак хыпара илтсен хыпăнса ӳкрĕç çыннисем, пĕр харăс çĕр ыйту тухса тăчĕ: мĕншĕн, хăçан, ăçта? Анчах тĕпĕ-йĕрĕпе ăнлантаракан тупăнмарĕ.

Қакмалли куна пурте кĕтетчĕç. Пĕрисем пахчара ĕçлесшĕнччĕ. Теприсем Атăл леш енне хĕртĕнме каяс-шăнччĕ. Ку хутĕнче вара аллисене сулчĕç.

— Тарам пултăр, тепĕр чух,— терĕç.— Халĕ пухăва.

Шăп каланă вăхăтра пухăнчĕ халăх. Эпир те, ачапăча, пысăккисенчен юлмарăмăр.

Кӳршĕсем пĕр-пĕрин çумне пырса ларнă май сывлăх сунаççĕ, калаçаççĕ.

Сăмах-юмах пуçланиччен халăх умне пысăк ӳкерчĕк тухса çакрĕç. Ӳкерчĕк çинче çав тери илемлĕ хула. Юнашар тăракан Атнер тантăшăм кăшкăрса та ячĕ:

— Э-э! Ара, ку пулас Шупашкар!

— Эпир пурăнакан Шупашкар-и? — ыйтрăм, тĕлĕнсе.

— Ара çав.

Хирĕç ним калама та пĕлмерĕм. Пулас Шупашкар çине пăхатăп куç илмесĕр. Ах, чаплă-çке.

— Атнер, кала-ха, çав хула варнелле тăсăлса кайни мĕн вăл? — терĕм, ăна аякĕнчен чавсапа кăлт-кăлт тĕккелесе.

— Хăшĕ?

— Сенкер лентăсем евĕр курăнаканни.

— Эсĕ те çав,— тет хăй çеç пĕлнипе мухтанса.— Ара, вĕсем — юхан шывсем. Атăла юхса кĕрекен Шупашкар шывĕпе Хайпăлкка шывĕ.

Ĕненес килмест. Халĕ вĕсен тĕпĕнче шăнкăртатса юхакан шыв ура пакăлчинчен иртеймест. Ку ӳкерчĕкри шывсем вара çыран тулли.

— Шупашкар ГЭСне тусан, шăллăм, çапла хăпарать Атăл,— ăнлантарать мана татах Атнер.

Апла пулсан Шупашкар шывĕ те, пирĕн тип çырма та тулать. Тĕмсĕлсе пăхатăп пулас Шупашкар çине. Ăна Атăл енчен ӳкерсе кăтартнă. Уйрăмах мана хулан икĕ юхан шыв хушшинчи пайĕ килĕшет. Вăл Атăл хĕрне утрав евĕр çавракa тăсăлса тухать. Лере ав, шалта, икĕ шыв урлă та кĕпер хывнă. Унталла та кунталла троллейбуссем кумаççĕ. Çыранĕсем тăрăх симĕс йывăççем. Вĕсем хушшипе курăнакан темиçе хутлă çуртсем тата мĕнлерех илемлĕ! Ĕмĕтĕм вĕçет пуласлăхалла. Тен, çак юхан шывсем тăрăх пăрахутсем Атăлтан кĕрсе ишсе çӳрĕç. Вĕренмелле мар-ши ман капитана? Хамăр пӳрт умĕн иртĕп. Ту-тут! кăшкăрĕ пăрахучĕ. Салют! тейĕп. Анне чӳречине яр! уçса ярать, хĕрлĕ тутăрпа суллать. Саламлать мана, телей сунса. Тупата, пулатех ку. Ĕмĕтĕм çитетех, шанатăп. Урăхла пулма та пултараймасть. Шанатăп, шанатăп. Куçа хупсан та куратăп-çке: ав, ав, сенкер лентă çийĕн шурă акăшла шăвать пăрахутăм.

— Капитанĕ кам çав? — ыйтĕ пĕр-пĕр ватă.

— Ленти. Ара, хамăр кӳршĕ ачи,— ăнлантарĕ тепри, хавхаланса.

Савăннипе йăл кулатăп. Пухура мĕн калаçнине итлемен те эпĕ.

— Кума, эпир пурăнакан вырăн ăçта ара? Тăнтан кайрăм шыраса.

Кăна хыçра ларакан аннем калаçать-çке. Унăн сасси мана ĕмĕтри кунсенчен уйăрчĕ. Ыйхáран вăраннăн чăлт-чалт! пăхкаларăм. Чăнах, ăçта пирĕн пӳрт? Тен, тупаттăмччĕ пулĕ, анчах Атнер ăшшĕ анне сăмахне пӳлчĕ:

— Сирĕн пӳрт, Анна Петровна, шыв тĕпĕнче.

Çынсем темшĕн кулса ячĕç.

— Тур çырлахах, шыв тĕпĕнче пурăнмалла-и?

— Мĕншĕн шыв тĕпĕнче пурăнас,— терĕ пуху иртте-рекеннисенчен пĕри, куçлăхли,— пурăнма сире пурсăра та кермен пек çуртсене куçаратпăр.

— И-и-их! — аллипе сулчĕ вăрăм сухаллă старик.

Унтан вăл туйи çине чавсапа тĕренчĕ те каларĕ: — Пирĕн çырма шывпа туличчен, ун урлă кĕпер хывиччен темиçе хут та чăрăш хăйĕн симĕс йĕппине тăкĕ-ха. Ĕмĕрсем ăçта пуçланнă çавăнтах вĕçленĕç.

Ĕненес килмест ку мучие. Қапла пĕтĕм ĕмĕт саланать.

Қуçлăхлă çын саспах кулса ячĕ:

— Ай-яй, шанмастăн иккен эсĕ, мучи. Шыв тулсан тин çырма урлă кĕпер хывма тытăнни алкум вĕçне туй килсен тин кĕнчеле арлама ларни пулĕччĕ. Пире, совет çыннисене, апла юрамасть. Сирĕн çырма урлă кĕпер тума паян-ыран тытăнатпăр.

Пур çын та пĕр пек мар иккен. Шавлаççĕ. Қашниех хăйĕн шухăшне калать. Савăнаканнисем нумайтарах. Чĕркуççи таран пылчăк ишсе йăлăхтарнă. Вĕсем асфальт сарнă урампа утасшăн. Қутăнла çаптаракансем те тупăнчĕç. Хирĕçлеççĕ пурне те, тиркеççĕ. Ним те кирлĕ мар çав этемсене: шывĕ те, кĕперĕ те. Хăйсем çавăрнă йăвинчен хăпасшăн мар. Пачак ĕненменнисем те хăйсен сассине пачĕç: «Пулас хула хут çинче çеç, ăна пуçтах художник çеç халăха илĕртме ўкерсе панă. Çавăнпа та калаçса чĕлхе тутине яни те харам».

Тĕлĕнтерсех ячĕç çынсем мана. Халăх пухăвĕнче такамран тем илтĕн.

— Эх, ачам,— терĕ пухуран киле таврăннă чух анне,— кирек хăçан та хăвăн ăс-тăнупа пурăнмалла. Эпĕ ниçта та куçмастăп.

Нимле канаш пама пĕлместĕп аннене.

Хыпар калаçупа çеç юлмарĕ, ĕçе куçрĕ. Ана çырма тăрăхĕнче пурăнакансем часах курчĕç.

## 2

Қăнтăрла иртсен Атнер ман пата чупса килчĕ те хыпалансах пĕлтерчĕ:

— Пирĕн пўрте виçмине ишеççĕ!

— Мĕншĕн? — тесе ятăм ним калама пĕлмен енне.

— Кĕпер тума тытăнаççĕ.

— Халех-и?

— Ахă.

— Ай-яй!

Атнерсен килĕ пирĕн умри айлăмра. Кантăкран пăхсан кăмака мăрйи аванах курăнать.

— Эсир хирĕçлемерĕр те-и? — ыйтатăп.

— Мĕншĕн?

— Хĕрхенместĕр те-и?

— Тупнă хăрăк-хурăк пӳрте хĕрхенме,— тет вăл.

Чăнах та ĕнтĕ, Атнерсен пӳрчĕ пирĕнни пекех кивĕ, пĕр кĕтесĕ тайăлнă. Хĕлле темĕн чул хутсан та ăшăнмастчĕ. Çил вĕрсе тăнине ура сисетчĕ. Пĕчĕккисем кăмака çинчен анмастчĕç çав. Ашшĕ кăçал çулла пӳртне юсама шутлатчĕ-ха.

— Пире хваттер панă!

— Ну? — тĕлĕнетĕп кĕтмен хыпартан.

— Эпир çĕнĕ хваттер курма каятпăр. Сана чĕнме килтĕм. Пыратна пĕрле?

Мĕнле юлăн çакăн пек çĕртен? Малашне юлташăм ăçта пурăнассине пĕлмеллех. Эпĕ çакă ырă хыпара аннене пĕлтересшĕнччĕ, анчах вăл килте çук.

Хваттер панăшăн пуринчен ытла Атнер аппăшĕ — Нина савăннă. Вĕсем патне пырса кĕнĕ-кĕмен мана вăл хул айĕнчен ярса тытрĕ те эх! çавăрать. Хăй кулать, юрлать.

— Пĕлетĕн-и, Ленти, часах эпир лайăх хваттерте пурăнма тытăнатпăр. Ĕнтĕ тинех пианинă туянса параççĕ.

Аран-аран Нина аллинчен вĕçерĕнтĕм, пăчăртаса вĕлерет пулĕ тесеччĕ.

Нина хăйĕн аккордеонне ярса тытрĕ те унăн пӳрнисем клавишăсем тăрăх йăпăр-йăпăр чупрĕç вылянса. Çиĕнчех çепĕç кĕвĕ чуна тыткăнларĕ. Ытла та пултаруллă хĕрача çак Нина. Ку таврара пурăнакансем ăна чаплă музыкант пуласса кĕтеççĕ. Шанни çитетех. Вăл

ахальтен музыкă шкулĕнче вĕренмест. Пианинă ăна çăкăр евĕрех кирлĕ. Ашшĕ укçине те хатĕрленĕ тетчĕ таккçанах. Туянсан картлашкасем тăрăх килне илсе те çитерес çук, çырмана ўксе ванĕ. Илсе çитерсен та каллех пĕчĕк пўртре ăçта лартăн çав хатĕр илемлĕ те паха япалана.

Пуçтарăнма тытăнчĕç. Нинăпа амăшĕ вара хăнана кайнăнах хитре кĕпе тăхăнчĕç. Ашшĕне те çĕнĕ костюм кăларса пачĕç арчаран.

Қапăрланса çитсен тухрăмăр килтен. Қалинкке умĕнченех картлаç пуçланать. Вăл ансăр, ун тăрăх иккĕн юнашар утаймăн. Чи малтан Нина вĕçсе пырать. Ури çĕре лекместех ун. Унтан Атнер, эпĕ. Хыçалта ваттисем: амăшĕпе ашшĕ. Қайăк хурсем евĕр карталанса пыратпăр.

Хулара пирĕнтен çавăрăнса пăхмасăр çын иртмест. Аçтан сисеççĕ-ши? Е телейпе савăнăç пит çине çырăнать? Атнер ашшĕ те çул çинче çĕр хут та чарăнчĕ пуль. Қашни паллаканпах пуплет, хваттер илни çинчен калать. Лешсем саламлаççĕ.

Хĕрлĕ площаде çитсен автобус çине лартăмăр. Халăхĕ нумай, тĕрткелешеççĕ. Мĕншĕн-ха пĕри те çуран утасшăн мар? Эпĕ хуть ярăнма çав тери юрататăп. Мел пулсан нихăçан та анмăттăм. Билет сутаканни ыр курать, никам та хăваламасть ăна, ярăн кунĕн-çĕрĕн.

— Ленин проспекчĕ! — пĕлтерчĕ кондуктор.

— Амăшĕ, ачасем, пирĕн анмалла, хатĕрленĕр,— асăрхаттарать Атнер ашшĕ.

Хĕсĕнкелесе тухрăмăр автобусран. «Мир» кинотеатр çумĕпе иртетпĕр. Мĕнле хитре çурт, çĕп-çĕнĕ! Қартинăсем çакăнса тăраççĕ. Паян кунта «Джульбарс» кино пулать. Кинотеатр пĕтĕм урама илем кĕртсе ларать. Нумаях та утмарăмăр.

— Акă пирĕн хваттер,— тет ашшĕ, умри темиçе хутлă çурта кăтартса.

— Атте, кўр уççине! — ыйтать Нина.

— Ах, ытла тӳсӗмсӗр ҫак пирӗн Нина,— ятласа илчӗ амӑшӗ.

Ашшӗ Нинӑна кӗсйинчен уҫӑ кӑларса тыттарать. Лешӗ вӗҫтерчӗ, никам хуса ҫитес ҫук.

— Ас ту, хӗрӗм, пирӗн хваттерӗ вӑтӑр пиллӗкмӗшӗ!

— Пӗлетӗп, аттеҫӗм!

— Эх, пӑрчӑкан, лара-тӑра пӗлмест,— вӑрҫанҫи тӑвать амӑшӗ.

Анчах уҥ ҫине пӗрре пӑхсах ӑнланатӑн, хӗрӗ вӑрт-варт пулнӑшӑн хӑй чунтан савӑнать-ха. Тем вӑхӑтра Нина алӑкран кӗрсе те ҫухалчӗ. Ав, иккӗмӗш хутри пӗр чӳречине уҫса та ячӗ. «Аля-ля-ля» юрлать хӑй.

— Васкӑр, васкӑр, хаклӑ хӑнасем! — йыхӑрать пире Нина.

Амӑшӗ сывлӑш пӳлӗннипе аптӑрать. Ҫавӑнпа та уттине кӑшт та ӳстерейместъ. Вӗсемпе шай пыма пире кичем. Атнерпе иксӗмӗр пӗр-пӗрне куҫ хӗскелерӗмӗр те тапса сикрӗмӗр. Вӑрт-варт хӑпартӑмӑр иккӗмӗш хута. Сылтӑмри алӑк тӑрринче цифрӑ — «35». Ҫакӑ ӗнтӗ Атнерсен хваттерӗ. Алӑк уҫса урата урлӑ каҫсанах пӗчӗк коридор. Мала иртрӗмӗр. Мӗнле пысӑк пӳлӗм! Ҫап-ҫутӑ. Урайӗ йӑлтӑртатса тӑрать. Пӑхсан, сӑн курӑнать, чӑнчӑн тӗкӗрех. Темшӗн пӗр-пӗр кермене кӗнӗн туйӑнчӗ мана. Нина савӑнать, юрла-юрла вальс ташлать. Ытла та ҫӑмӑл ҫав, юр пӗрчиех.

Ваттисем те ҫитрӗҫ. Атнер амӑшӗ пысӑк пӳлӗме куҫпа виҫсе ҫаврӑнчӗ. Тутине пӗркелерӗ. Те кӑмӑллать, те ҫук, ӑна куҫран пӑхса чухлаймарӑм. Кухньӑна утса кӗчӗ мӑнаҫлӑн, тахҫанах кунта пурӑннӑ пек. Атнер ашшӗ ӑна юрасшӑн. Шыв кранӗсене пӑркалать. Юхать шывӗ сивви те, вӗриййӗ те. Эпир те Атнерпе иккӗн алӑ тӑсатпӑр. Шывӗ кӑтӑклантарать, таврана фонтанла сирпӗнет, пӳрнесем хушшипе ҫул тупса шӑнкӑртатать.

— Эй, малайсем, ан ашкӑнӑр,— хӑтӑрса илчӗ пире

Атнер ашшĕ.— Килĕр плита умне, газ çунтарса кăтартам.

Çутнă шăрпăкпа пĕчĕк çаврашкана перĕнтерчĕ те, вут хыпса та илчĕ. Çулăмĕ кăн-кăвак. Вĕри парать.

— Пилĕк минутра чей вĕрет.

Мĕн каласси пур, питĕ хăвăрт. Примуспа чейникри шыв вĕрессе кĕтсе ывăнан çав. Çутçанталăк ырлăхĕ.

Атнер ашшĕ, пĕр кукăра иртсе, пурне те чĕнсе илчĕ.

— Ваннăй, теççĕ кăна,— ăнлантарать.

— Шап-шурă тарăн таканана шыв тулать.

— Кĕр, амăш, çăвăн,— сĕнет ашшĕ. Лешĕ мăртмарт.

— Ытлашши мухтанса сӳпĕлтететĕн,— тет.

— Хваттерĕ чаплă та, ма мухтанас мар.

— Халлĕхе чаплă та-ха, йĕпе-сапа çитсен, стенасем шӳсен, ларса макрăн çав.

— Ха, ларса макăрмалла пулсан, куçмăпăр,— таварчĕ ашшĕ лăпкăн.

— Çук, куçатпăр! — кăшкăрса ячĕ Нина,— чăлăшчалăш пӳртре тек пурăнас килмест.

— Чим-ха, хĕрĕм, сана пĕр япала кăтартман-çке эпĕ,— терĕ ашшĕ, кĕсйинчен уçă кăларса. Вăл тепĕр пӳлĕм алăкне уçма тытăнчĕ.

— Ку пӳлĕм те пирĕн-и? — тĕлĕнет Нина.

— Пирĕн, хĕрĕм, пирĕн.

Алăк яри уçăлчĕ. Унта клубри пек йĕпхĕн хура пианинă лара парать.

— Ой! — кăшкăрса ячĕ Нина.

Унччен ташласа, тĕпĕртетсе çӳрекенскер ури чăлханнăн вырăнтан тапранаймарĕ.

— Нина, ку сана парне, хваттер илнĕ ятпа. Вĕрен кăна тăрăшса,— терĕ ашшĕ.

Тӳрех пианинă калама тытăнать пулĕ тенĕччĕ эпĕ. Çук. Нина малтан ашшĕне хытă, хытă чуп турĕ, унтан амăшне, пире. Пианинăна вара ачашламан вырăн та хăвармарĕ.

— Ларăр пурте,— хушрĕ Нина.

Ку пӳлĕмре унччен те çынсем пурăннă тейĕн, йĕри-тавра çĕнĕ пукансем, сĕтел, стена çумĕнче картинăсем. Çемйине систермесĕр тăрăшнă ашшĕ. Пулаççĕ-мĕн тĕнчере çав тери ырă аттесем.

Нина пианинă хушшине ларчĕ. Малтанах вăл клавишсем тăрăх пӳрнисене вылянтарса тухрĕ. Мĕн тери сасăсем янрамарĕç-ши! Мăнни, хулăнни, çинçи, шыв юххи пек шăнкăртатаканни. Унтан Нина питĕ илемлĕ кĕвĕ калама тытăнчĕ. Тăнланăçемĕн эпĕ Атнерсен çĕнĕ хваттерĕнче ларнине те манса кайрăм. Çу кунĕсем тăраççĕ пулин те, мана музыкă темшĕн кĕркуннехи вăрмана илсе çитерчĕ. Хĕрлĕ-сарă тумпа капăрланнă йывăçсем пурте. Вĕрене патне пытăм утса. Вулли йĕкĕр ывăça кĕрет. Лăстăр-лăстăр силлетĕп майĕпен ачашшăн. Вĕлтĕр-р, вĕлтĕр-р вĕçсе анаççĕ çулçăсем, çăлтăрсем çуннăнах. Эпĕ аллăма тăсатăп. Ав пĕри ывăç тупанĕ çине ӳкрĕ. Мĕн тери илемлĕ вăл. Сап-сарă. Эрешлĕ хĕррисем. Ай, çил вĕрсе иртрĕ вăштăр-р-вăштăр-р. Çулçăма кăлт-кăлт тĕрткелет, ман ывăç тупанне кăтăкласа. Çитрĕ шавлă çил ачи те. Курчĕ илемлĕ сарă çулçăна. Пĕр çĕклерĕ, пĕр хăпартрĕ, пăлтăр-палтăр çавăрчĕ, илсе кайрĕ вăйă выляма аиккинелле. Çакăнпа музыки те вĕçленчĕ. Нина тăчĕ.

— Сарă çулçăсем тăкăннă чух мĕнле илемлĕ,— терĕм эпĕ.

Атнер ман куçран тĕлĕннипе чăр-р пăхса илчĕ те, çамкине пӳрнипе пăталанăн тĕксе, хушса хучĕ:

— Винти пушанман пулĕ-çке?

Ним те чĕнмерĕм.

Музыкă итленĕ хыççăн амăшĕн кăмăлĕ пачах çемçелчĕ.

Тепĕр кунне пирĕн çырмари картлашкасем пушă тăмарĕç. Ир пуçласа каçчен халăх утрĕ. Япала çĕклерĕç. Вĕсем пурте, Атнерсен çемйи пекех, çĕнĕ хваттере пурăнма куçаççĕ. Хавaслă хăйсем. Васкаççĕ. Çапах та

пĕр-пĕринпе чĕлхе якатмасăр тӳсеймеççĕ. Қашниех хăйĕн хваттерне ырлать. Текех вут-шанкă пирки кулянма кирлĕ мар. Çуртне яланлăхах хутса ăшăтнă, шывне кӳнĕ, хуран айне кăвайт хумасăрах çулăмĕ ялкăшать. Ан ӳркен вĕретме, пĕçерме. Ырлăх.

Аннен алли ĕç патне пымасть, шав пăхать кантăкран. Хваттере куçакансене ăмсанать. Малтан хамăр килтен яхăнне те каясшăн марччĕ, халĕ ав урăхла: пӳрчĕ те кивĕ, картлашкисем те йăлăхтарнă, çырмана шыв ăсма анасси те асап...

— Ытлашши хыпăнса ӳкес мар-ха,— лăпкăн калаçать атте.— Çырмари пĕтĕм халăха вырăнтан тапратрĕç пулсан, эпир те юлмастпăрах. Пĕр харăс ним те пулмасть.

Мана хама акă чăннипех те кичем, уй варне пĕччен тăрса юлнăнах туятăп. Атнер юлташăм çывăхра çукшăн ку. Халиччен картлашкапа пĕрле анса хăпаратăн та — ун патне çитнĕ те. Юлташсăр пурнăç, пурнăç мар.

## 3

Нумай-и, сахал-и вăхăт иртрĕ, кĕпер хывакансем персе те çитрĕç. Ушкăнĕ йышлах та мар, анчах çав тери хастарскерсем, кăнтăрла та, çĕрле те ĕçлеме тытăнчĕç. Пире ниçта та куçарма шутламаççĕ. Пӳрчĕ пирĕн халлĕхе чăрмантармасть имĕш. Эпĕ савăнатăп, манăн пĕрре те каяс килмест кунтан. Мĕншĕн? Қайсан, пысăк çырма урлă вăрăм та çӳллĕ кĕпер мĕнле хывнине курмасăр юлатăп. Манăн пурне те курасчĕ, пурне те асра хăварас килет. Атнере шеллетĕп. Пĕрре те килсе каймарĕ. Пысăк стройкăн пуçламăшне кураймасть. Ку вăл коммунизмра пурăнмалли кĕпер.

Кĕске вăхăтрах мĕн чухлĕ улшăну пулчĕ. Çырмапутăксене тăпра тултарса самант тикĕслерĕç. Пушанса юлнă пӳртсене куçарчĕç. Вĕсене пĕренен-пĕренен илсе сӳтмен. Апла ĕç вăраха тăсăлнă пулĕччĕ. Бульдозер пы-

рать те пěр кěтесěнчен тăрс! тěртет. Пулчě те, турттар ăçта кирлě.

Тăратăп хамăр пўрт умěнче кěпер тăвакансем мěнле ěçленине пăхса. Машинăсем патěнче ялан пěр ача явăçса çўрет. Карттус сăмсине каялла çавăрса лартнă. Куçлă-куçлă кěпепе. Манран аслă та, кěçěн те пулас çук хăй. Тем тесен те, пěр çулхисем. Эпě улттăмěшне куçнă, вăл та çаплах-тăр. Анчах та хăйне вăл çав тери ěçчен, патвар тыткалать, пурне те пěленçи çўрет. Калăн, кунта вăл чи аслă инженер, пурте ăна пăхăнаççě. Шоферсем чăнах та пěри те тепри унпа калаçаççě, кулаççě, тем ыйтаççě. Вăл калать, кěсъерен блокнот кăларса çыркалать. Тата вăл аллинчен кěреçе ямасть пачах. Тăкса хăварнă хăйăра салатса саркалать. Мěнле ача-ши ку? Калаçса пăхасчě унпа. Тен, мана та ěçлеме илеççě? Анчах та вăл асăрхамасть мана. Виçěм кун та, ěнер те, паян та курмăш пулчě. Эпě мěн кăна тумарăм-ши? Кайăкла шăхăрса юрларăм, темиçе хут пуç хěрлě тăрса алă çинче утрăм. Вăл пур чăн-чăн нимуй, сукkăр. Пулать вěт этем.

Тепринче эпě хапха умне хам тунă планер модельне илсе тухрăм та çав ача патнелле вěçтерсе ятăм. Моделěм сывлăшра çаврăнчě-çаврăнчě те чутах ун пуç тěлне тăрăнмарě, юрать-ха, пăрăнса ěлкěрчě. Эпě модель хыççăн чупрăм.

— Мěн эсě, ěçсěр аптăранăскер, ашкăнатăн? — тет хайхискер. Сасси çиллес.— Кай кунтан. Стройкă таврашěнче çўреме юрамасть.

— Сана юрать-и? — хирěçлерěм.

— Юрать. Эпě — бригадă ывăлě,— тет ача пуçне каçăртса, мăнаçлăн.

Кěнеке вуланине аса илтěм те патлаттарса хутăм:

— Полк ывăлě теесшěн мар-и эсě?

— Полк ывăлě — вăрçăра, бригадă ывăлě — мирлě ěçре!

Вăт, мěн терě. Хăюллăскер, чěлхи тин хăйранă хěçлех



Ч-46203
11207-дуб
Национальная библиотека
Чувашской Республики

касать. Ăна парăнтарас, çĕнтерес килни тыткăнларĕ. Кулас килмен çĕртенех ахăлтатрăм. Вара йĕлпешкеленсе çапла каларăм:

— Санăн яту таçта Ваня Солнцев мар-и?

— Çу-у-ук. Эпĕ — Ухвань. Бригадă çыннисем çапла чĕнеççĕ те.

— Ухвань, Ухвань,— йĕкĕлтекелерĕм.

Вăл мана кунтан кай тесе хăвалама тытăнчĕ. Ай, куштанскер.

— Машинă таптасан саншăн кам ответ тытать! — кăшкăрать.

Юпа евĕр тăтăм та вырăнтан та сикместĕп. Вăл, аллисене шăлавар кĕсйине чикнĕскер, хул пуççипе тĕрткелесе хăвалать. Ăш-чикĕм тулса килчĕ. Çиллĕме шăнарайман енне пĕррех тăрăнтартăм чышкăпа кăкринчен.

— Ах, эсĕ апла-и? — терĕ те бригадă ывăлĕ мана йăпăр-япăр ярса тытрĕ, сиссе те юлмарăм, эпир çыхăнса ӳкрĕмĕр. Вăйлă, мур илесшĕ, часах пĕтĕрсе чикрĕ упалла хăй айне. Çĕнтерсе тухăттăм-ши? Ќалаймастăп. Анчах пире куçлăхлă пичче пырса чарчĕ. — Килĕшмест капла, çамрăк çынсем.

Тăтăмăр иксĕмĕр те ура çине.

— Мирлешĕр, айвансем,— сĕнет пире пиччийĕ. Ăçта унта! Пĕр-пĕрин çине вăкăрла пăхатпăр. Куçлăхлă çын ку ачан ашшĕ-ши? Килессе машинă енчен килчĕ, путех шофĕр.

Çав çынах айккинерех выртакан планер модельне илсе тыттарчĕ мана. Ирĕксĕрех килелле уттарма тиврĕ.

Темиçе ярса пуссан, çаврăнса тăтăм та бригадă ывăлне каларăм:

— Хăравçă эсĕ! Аçупа хăтăлтăн! Эпĕ те чĕнсе тухма пултаратăп аттене.

— Чĕнех! — терĕ вăл, аллипе сулса.— Анчах та манăн атте çук.

Урăх сăмах хушма чĕлхе çаврăнмарĕ. Пуçа чикрĕм те вĕçтертĕм малалла.

Илтнĕ хыпар çаплах пуçран тухмасть. Мĕнле-ха вăл ашшĕсĕр ача? Вăхăчĕ-вăхăчĕпе чĕре хĕсĕне-хĕсĕне килет. Шеллетĕп ĕнтĕ ăна. Çавăнтах вирелле çĕкленет кăмăл. Ҫăна та ăнланатăп: мана вăл туслăн кĕтсе илмерĕ-çке. Çавăншăнах хĕрхенес шухăш та сирĕлчĕ.

Тепĕр кунне кĕпер тунă çĕре кайма мар, çаврăнса та пăхмарăм. Анчах та ним кĕтмен çĕртен тĕл пултăм бригадă ывăлĕпе. Тĕрĕссипе каласан, эпĕ куртăм çеç ăна, çывăхранах. Чĕнмерĕм. Арçынна мăнаçлăх кирлĕ. Питĕ туйрăм вăл манпа калаçасшăнне. Аçта курнă? Чўрече умĕнчи тăпрас çинче.

Темлерен-çке урам енчи чўрече яр! уçăлса кайрĕ. Кунта никам та мар, каскăн çил айăплă. Ванса та кайĕ, хупас тесе пытăм. Ыт ахальтен çеç пуçа урамалла кăларса пăхрăм. Шăп çакăн чух Ухване курах кайрăм, вăл тăпрас çинче лара парать. Мĕн кирлĕ ăна? Тен, тухса ĕнсе чикки тыттарас? Чĕре каллех вĕлт-вĕлт тапса илчĕ. Тепĕр тесен, çыхланас мар. Çўретĕр хăйĕн сукмакĕпе. Тутăр кĕпер. Эпир унсăрах пурнăпăр-ха. Хăйсене пулăштарас килмест, тархасшăн, сĕкĕнместпĕр.

Чўречене шалт хупса питĕрсен шурă кăтай каррине шутартăм. Вулас. Картиш енчи кантăк янаххи çинче кĕнекем выртать ав, питĕ интересли «Три мушкетёра». Куçсем йĕрке тăрăх чупаççĕ, анчах пĕр усăсăр, тăна ним кĕмест. Шухăшпа эпĕ унпа — Ухваньпе. Унччен те пулмасть, шăхлич сасси янраса кайрĕ. Вăл! Ăнланатăп, ăнланатăп! Ку вăл мана илĕртет. Хĕпĕртенипе ниçта кайса кĕмелле мар. Юн ура тупанĕнчен пуçласа пуç тўпине çити вĕресе хăпарчĕ. Мунча лавкки çинче ăшши панă хыççăнхи пек вĕри туйăнать.

Ухвань çаплах шăхлич калать. Кĕнекене пăрахса чупса пытăм. Çук, аллăм çĕкленмерĕ чўрече уçма. Кўренў çыхсах лартнă-мĕн мана. Çаврăнкаласа тăрап. Ним тума аптранă енне хăлхана мăкласа лартрăм мамăкпа. пĕрех хут илтес мар шăхлич сассине. Пăчăртаса хупрăм куçа та. Нумайччен тўсейрĕн-и вара капла? Тьфу! Сур-

тăм. Çава патне! Ухвань килнĕшĕн хĕпĕртемелле, вăл хăй аллине тăсать малтан. Эпĕ пур, юнтарса тăратăп. Çын-и эпĕ? Хăлха шăтăкĕнчен мамăк татăкĕсене кăларса петĕм çĕре. Тухса ыткăнтăм пӳртрен. Ёлкĕреймерĕм. Тăпрас çинчен вăл тăрса кайнă. Пĕр-пĕчченех юлтăм, шăп хам ухмахшăнах.

Çакăн хыççăн, тепĕр кунах, эпир Атнерпе пионерсен лагерьне тухса кайрăмăр. Çу каçах пурăнтăмăр унта. Таврăнсан кĕпер тăвакансен çывăхĕнче тем чухлĕ çӳресен те лещ бригадă ывăлне тĕл пулаймарăм. Аçта кайса кĕнĕ-ши вăл? Ыйтса пĕлме хăяймастăп никамран та. Унта ĕçлекенсене хирĕç пулсан, хама айăплăн туйса иртсе каяттăм.

Хĕл çитрĕ, çуркунне те пулчĕ. Çырма тĕпĕнче çаплах кĕпер тăвакан халăх ĕçлет.

## 4

Пуçтаратăп хамăн япаласене, чăматана чикетĕп.

— Пурăн-ха ĕнтĕ тата пăртак, Ленти мăнукăм,— тархаслать мана кукамай.— Кĕтĕве хирĕç ĕнене кайса илекен çын пурришĕн савăнаттăм. Ял сывлăшĕ те хăвна сиплĕрех.

Пулĕ. Ёненетĕп. Хăнара пурнăçĕ те пылакрах. Çапах та чун килех туртать. Çуллахи каникула тухсан тепĕр куннех килтĕм яла. Эрне пурăннă, çитет. Сыв пуллашса тухатăп хăнаран.

Шухăш вĕçет. Темшĕн мана кĕпер туса пĕтернĕнех туйăнать. Киле çитсен тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм. Кĕперĕ çук-ха. Анчах тавралăх пачах улшăннă. Шăп çырма тĕпĕнче шап-шурă юпасем ӳссе ларнă. Сăвайсем, тет. Пирĕнтен аякрах та мар, тӳрем вырăнта чугун çул хывнă. Анчах та рельсăсем хушши сарлака, унта вăрăм сарай туса лартнă. Рельсă çинче пысăк кустăрмаллă семафор кашти евĕр тем тăрать. Мĕнле япала ку? Сарайĕнче мĕн тăваççĕ-ши? Пĕлес килет пурне те. Калаçасчĕ кĕпер тă-

вакансемпе. Ҫывхарма хăратăп. Аҫтан сăмах тупас? Тем аса илесле пӳрт ăш-чикки тавра пăхатăп. Куҫсем этажеркă ҫине ӳкрĕҫ. Рабочисене кĕнеке вуласа парас мар-и? Чим, кĕнеке мар, айван. Тупрăм мĕн вуласа памаллине. Хул айне ҫĕнĕ хаҫатсем, «Ялав», «Тăван Атăл» журналсене хĕстертĕм те уттартăм.

Рельсă патне ҫывхарсанах, мана кĕреҫе сухаллă ҫын тĕл пулчĕ. Хăй ҫамрăк, сухалне мĕншĕн ӳстернĕ-ши? Ҫастарма вăхăчĕ ҫук пулĕ.

— Пичче,— чĕнтĕм ăна,— хаҫат-журнал пăхса тухас килмест-и?.

Васкасах хаҫатсене саркалама тытăнтăм.

— Ачам, чăрмантарса ан ҫӳре. Хаҫат шухăшĕ мар пирĕн.

Ҫапла пулчĕ сухаллă ҫыннăн татăклă сăмахĕ. Ирĕксĕрех ман пăрăнма тиврĕ. Тем тусан та пăрахса каяс килмест. Пĕр тĕмеске тупрăм та тăтăм. Кунтан ывăҫ тупанĕ ҫинчи пекех пĕтĕм стройкă курăнать.

Рельсăсем ҫинче тăракан кустăрмаллă семафор кашти пĕлĕтелле кармашнă. Вĕсен ҫӳллĕшĕ сахалтан та пилĕк-ултă метр пулать. Нихăҫан та курман кун пек япала. Ҫӳлте, икĕ кашта хушшинче, каҫма евĕр хăмасем хунă. Каҫма ҫинче икĕ ҫын. Тем тăваҫҫĕ вĕсем, чухлаймастăп. Унччен те пулмарĕ, каҫма ҫинчен темле хура лаптăк вĕҫерĕнчĕ. Аялта — ҫын, лешĕ — кĕреҫе сухалли. Япали шăп ун пуҫĕ ҫине ӳкрĕ патлатса.Сухалли сулăнса, сулăнса кайрĕ те тĕшĕрĕлсе анчĕ. Ҫăна мансăр пуҫне никам та асăрхамарĕ пулас. Ҫывăхра пĕри те ҫук.

«Пулăшма!» приказ пачĕ мана ăшра такам. Хаҫат-журналăма пăрахрăм та тапса сикрĕм. Ҫиҫĕмле хăвăртлăхпа пыратăп. Манпа пĕр вăхăтрах ун патне тепĕр ҫын ҫитсе тăчĕ. Ку Ухвань иккен. Аҫтан шăтса тухрĕ вăл?

— Михаил Трофимчă, мĕн пулчĕ сире? — чĕнчĕ Ухвань. Иксĕмĕр икĕ хулĕнчен ярса тытрăмăр ăна.

— Пуҫ анраса кайрĕ,— терĕ Михаил Трофимчи.

— Чирлерĕр пулĕ? — татах ыйтать Ухвань.

— Çӳлтен темскер ӳкрӗ ун пуçӗ çине,— терӗм эпӗ.— Курсах тăтăм.

— Михаил Трофимчă, выртмалла сирӗн,— хушать Ухвань. Лешӗ хирӗçлемерӗ.

— Нимех те мар, иртет, тем кăмăл пăтранса килчӗ,— тет хăй çапах.

Пысăккисем пуçтарăнчӗç. Шавларӗç вара пӗр кана. Такама сиксех ятларӗç. Унтан «Васкавлă пулăшу» машини çитрӗ.

— Пирӗн бригадир вăл,— ăнлантарать пăшăлтатса мана Ухвань.— Тӗлӗнмелле лайăх çын.

Машинă ăшӗнчен шурă халатлă хӗрарăм тухрӗ. Врач тенине эпӗ килӗштерсех каймастăп, уколсем тунăшăнах. Çавăнпа та айккинерех пăрăнса тăтăм. Мӗн каларӗ-ши тухтăрӗ? Илтмен. Анчах та бригадире машинă ăшне лартма тытăнсан эпӗ те çывхартăм.

— Манпа пӗрле Ухвань çеç пырать,— пӗлтерчӗ Михаил Трофимович.— Ыттисен ӗçлемелле, план тултармалла.

Пӗрисем хирӗçлеме пăхрӗç, анчах кăлăхах. Бригадир сăмахӗ пуриншӗн те саккун.

Ухвань машинă ăшӗнче бригадирпа юнашар вырнаçрӗ. Вăл машинă алăкне хупиччен пуçне кăларса мана кăчăк туртса чӗнчӗ:

— Ленти!

Тӗлӗнсех кайрăм, ăçтан пӗлет вăл ман ята?

Эпӗ алăк умне яштах çитсе тăтăм.

— Пирӗнпе пыма кăмăлу пур-и? — ыйтрӗ. Пуçа сӗлтрӗм, вара кӗрсе лартăм.

Машинă тапранчӗ. Шăп. Никам та пӗр сăмах чӗнмест.

Çитес çӗре часах çитрӗмӗр. Михаил Трофимовича больницăна илсе кӗрсе кайрӗç, пире урамра кӗтсе тăма хушрӗç. Эпир крыльца умӗнчи сада кӗрсе сак çине лартăмăр. Кунта çамрăк йывăçсем ӳсеççӗ. Клумбăсенче чечексем чӗлтӗртетеççӗ. Сывлăш уçă. Чирлисене çакнашкал

таса сывлăш кирлĕ те. Сывалма пуçланисем путех кунта утса çÿреççĕ-тĕр.

Чĕнместпĕр. Кунашкал вăхăтра тем çинчен каласан килĕшет? Ухвань хăйсен бригадирĕшĕн кулянать ĕнтĕ. Алăк çинчен куçне илмест, йĕп çинчи пек тыткалать хăйне: сиксе тăрать, каллех ларать.

— Итле-ха, эсĕ ăçтан пĕлен ман ята? — терĕм, сăмах тапратса.

— Сирĕн пата пĕр хут çеç кĕрсе тухман эпĕ. Анчах аннÿн ялан пĕр сăмахчĕ: «Ленти таврăнаймарĕ-ха ялтан».

— Çапла, эпĕ ялта эрне пурăнтăм.

— Иртнĕ çура мана темшĕн кичем пусса илнĕччĕ,— терĕ Ухвань.— Пуçа усса çÿренине чи малтан Михаил Трофимович асăрхарĕ. Мĕн те пулин сиссен чуна кĕрсе тухмасăр чарăнмастех. Иксĕмĕр хушăри çапăçу çинчен те пĕлчĕ. Ас пачĕ вăл. Эпĕ акă паянчченех санран каçару ыйтаймарăм.

— Э-э, иртсе кайнă япалашăн мĕн калаçмалли пур, тахçанах манăçа тухнă.

Ухвань чĕнмерĕ, ни апла, ни капла каламарĕ. Туятăп, калаçу çыхăнмасть. Вăл каллех ура çине сиксе тăчĕ те, чĕвеленсе, лутра йывăç тĕммисем урлă кармашса алăк еннелле пăхрĕ.

— Мĕн мĕшĕлтетеççĕ çаплах? — терĕ.

— Ку бригадир сан тăван-и? — ыйтрăм Ухваньтен, вăл ман çума пырса ларсан. Сасартăк унăн куçĕсем йăлтăр çуталчĕç, çавăнтах сĕлкĕшленчĕç. Ассăн сывласа илчĕ. Вара çапла households:

— Тăван мар, пачах ют çын. Çав тери ырă кăмăллăскер. Вăл маншăн атте те, анне те.

Чарăнчĕ, вăл çăварне шыв сыпса лартрĕ, тейĕн. Малтанхи тĕл пулура илтни аса килчĕ: «...манăн атте çук!»— кăшкăрнăччĕ вăл. Амăшĕ те çук-ши вара? Чĕлхерек сăмах вĕçерĕннине хам та сисмерĕм.

— Аннÿ ăçта сан?

Ухвань пичĕ сасартăк улшанчĕ. Çĕçĕпе ăнсăртран кастарнă пÿрне ыратнă чухнехи пек куçĕ хĕсĕнчĕ, тути пĕрĕнчĕ, шăлĕсем кăчăл-л туса илчĕç. Пуçа кĕнĕ шухăш тĕрĕс иккенне туйса илтĕм, чараксăр чĕлхемшĕн аванмарлантăм. Тек ĕмĕрне те тапратассăм çук ку ыйтăва. Ҫапланса килнĕ чăмакка иртрĕ пулас ун. Ҫăварне уçрĕ те:

— Аннене пы...

Пуçланă сăмаха каласа пĕтереймерĕ. Шăп çак вăхăтра больницăн алăкĕ уçăлчĕ те, унтан шурă халат тăхăннă хĕрарăм тухрĕ. Ухвань ун патне вăркăнчĕ, эпĕ те юлмарăм.

— Мĕнле унта Михаил Трофимович?

— Аванах,— пĕлтерчĕ лешĕ.

Ухвань никам сисиччен шалалла йăшт! çеç чăмрĕ.

— Эй, пăшатан, ăçта эсĕ? Унта кĕме юрамасть! — кăшкăрса юлчĕ халатлă хĕрарăм.— Чирлисем çывăрасçĕ халĕ.

Алăк яриех уçăлса кайрĕ. Ҫоридорта Ухваньпе Михаил Трофимович тăнине куртăм. Хĕрарăмĕ вара мана та кĕме чармарĕ.

— Ухвань тусăм, эрнесĕр тухасси пулмасть кунтан,— терĕ бригадир.— Санăн яла кайса килмелле пулать, Мария Петровнăна пĕлтерме тивет, унсăрăн кÿренĕ.

— Эпĕ халех, вăштах кайса килетĕп,— терĕ те Ухвань, çавăнтах алăк патнелле туртăнчĕ. Юрать бригадир вăхăтра ярса тытма ĕлкĕрчĕ ăна. Вара хăйпе юнашар пукан çине лартса ăс пама пуçларĕ. Ура çине тăрсан сулахаялла е сылтăмалла ярса пусмаллине çеç каламасăр хăварчĕ. Ĕç тумалли пайтах пулать Ухванĕн.

Михаил Трофимович Мария Петровнăна памалли çыруне тыттарсан, эпир больницăран тухрăмăр.

— Ҫам ара вăл, Мария Петровна? — ыйтрăм.

Ухвань чăр-р пăхрĕ мана. Тÿрех ăнлантăм, эпĕ çав хĕрарăма пĕлменнинчен тĕлĕнет ĕнтĕ.

— Арăмĕ, паллах,— терĕ вăл юлашкинчен.— Учительницă, ялта ачасене вĕрентет.

Кĕпер тунă çĕре утса мар, чупса çитрĕмĕр.

— И-и, крансене хута янă! — кăшкăрчĕ Ухвань хаваслă сассипе. Ку крансем часах кирлĕ пулмаççĕ-ха, халĕ вĕсене ĕçлеме пултарнине çеç тĕрĕслеççĕ.

— Мĕнле крансем? — тетĕп.

— Суккăр мар пулĕ те эсĕ? Рельсăсем тăрăх мĕн шунине курмастăн-и?

Тинех ăнлантăм. Лешĕ, пĕлĕтелле кармашнă кустăрмаллă семафор каштисем — кран иккен. Пуçласа куратăп кунашкал крансене.

— Мĕн йăтаççĕ унпа? — татах тĕпчетĕп. Ухвань кӳренмест. Строительствă хуçи пекех ăнлантарать мана.

— Кĕпер каштисене, урай хăмисене. Вĕсене çав сарайĕнче монтажниксем сыпса тăраççĕ.

— Монтажниксем? — тетĕп ĕненмесĕр.— Аçта илтнĕ эсĕ кĕпере монтажниксем тунине? Кĕпере платниксем тăваççĕ.

Ухвань ахăлтатса кулса ячĕ.

— Тĕттĕм çын иккен эсĕ, Ленти,— тет вăл, кулма чарăнаймасăр.— Кунашкал пысăк кĕпере тунă çĕрте монтажниксем, бетонщиксем, электриксем, арматурщиксем, механизаторсем, штукатурсем ĕçлеççĕ.

## 5

Пĕр кун, икĕ кун, виçĕ кун иртрĕ. Ухвань çаплах ялтан килмерĕ. Вăл рабочисемпе пурăнакан общежитие темиçе хут та кайса пăхрăм. Кăлăхах. Айван çав эпĕ. Общежитинче мĕн туса лартăр? Таврăннă пулсан, чи малтан кĕпер тунă çĕре чупса килĕччĕ. Кунта вăл хĕвĕшсе çӳренине куçа хупсан та курăн.

Каçхине, çывăрма выртас умĕн Михаил Трофимовичпа Ухвань çинчен йăлтах аннене каласа патăм.

— Ах, айван эсĕ, Ленти,— ятларĕ мана анне.— Ара,

ку таранччен мĕн шăлна çыртнă эсĕ? Чирлĕ çын патне кучченеçпе кайса килмеллеччĕ.

Тепĕр кун ирхине анне апат-çимĕç тултарнă сумкă тыттарчĕ те мана больницăна ăсатрĕ.

Кĕрсе çеç тăтăм больницă коридорне, мана шурă халат тăхăнтарса шалалла илсе кайрĕç. Палатăна эпĕ кĕнине курсан, Михаил Трофимович савăнса ӳкрĕ. Тӳрех çапла каларăм:

— Ухвань çаплах ялтан килмерĕ.

— Аван, çапла кирлĕ те,— тет вăл.

Ним те ăнланмастăп. Ухвань килейменшĕн пăшăрханмалла пек, вăл хавасланчĕ.

Анне панă кучченеçсене тыттарсан вăл тĕлĕннĕн туйăнчĕ.

— Кунти апат çителĕклĕ, ма чăрмантăр?—тет хăй.— Атя-ха пахчана, уçă çĕре тухса ларар, калаçмаллисем пур.

Чĕрем кăрт-кăрт тапса илчĕ. Хăй бригадир, пысăк çын, мĕн калаçĕ-ши манпа, ача-пăчапа?

Эпир пĕркун Ухваньпе ларнă сак патне пытăмăр. Хăвăртрах пуçлатăрччĕ сăмахне. Чăнах та, вăл кĕттермерĕ.

— Ленти шăллăм,— терĕ вăл сухалне якаткаласа,— эпĕ сисрĕм, паçăрхи сăмах сана тĕлĕнтерчĕ. Çапла-и?

Мĕнле сăмах пирки вăл? Тавçăраймастăп. Михаил Трофимович эпĕ иккĕленсе пăхкаланине тӳрех чухларĕ.

— Ухвань пирки, ара, калап,— терĕ вăл.— Юри яла ятăм ăна. Пĕлсех тăратăп, Мария Петровна халĕ районти учительсен конференцийĕнче. Хăçан таврăнать ăшшă унтан? Çырура та систертĕм, яла пынă-пыман кăларса ямасть ачана. Вĕсем Шупашкара çитнĕ çĕре хам та больницăран тухатăп. Хамсăр стройкăра тем пулас пур шĕвĕрпе. Вăл ача ытлашши вĕри, харсăр. Каснă-лартнă амăшех. Инкек-синкекĕ кашни кун пулса тăракан япала мар та-ха... Çапах та вăл яла кайнăшăн чунăмра лăпкă. Тăлăх турат. Амăшсăр тăрса юлчĕ. Бетонщицăччĕ пирĕн

бригадăра. Пахса ытармалла марччĕ ун ĕçне. Чăн-чăн ылтăн алăсемччĕ. Пĕтрĕ çын.

— Мĕнле пулса тухрĕ апла? — терĕм нумайччен чĕнмесĕр ларнăскер.

— Пĕтĕмпех вăрçă айăплă, ачам.

Эпĕ ăнланмастăп. Бетонщица, вăрçă... Çыпçăнмаççĕ.

— Çапла, пĕтĕмпех вăрçă айăплă,— терĕ татах тепĕр хут, ман шухăша вуланăн.— Врачсем ăна йывăр ĕçре ĕçлеме чарнă. Итлемерĕ. Юратнă ĕç. Хăпăнаймарĕ унран. Хирĕçлеме пирĕнтен пĕри те хăяйман. Темиçе çул пĕрле ĕçленĕ. Хамăр республикăра çеç мар, Тутарстанра та эпир хывнă кĕперсем темиçе. Ухвань вара çу каçипех амăшĕпе — кĕпер тунă çĕрте. Уйра палаткăсенче пурăнаттăмăр. Апат пĕçеретчĕ. Бригадă валли плакатсем çыратчĕ. Ĕçĕ тупăнатчĕ. Вĕренӳ çулĕ çывхарсан ăна интернат-шкула ăсататтăмăр. Вăрçă инваличĕ пулнă Ухвань амăшĕ.

— Ухвань амăшĕ фронтра фашистсене хирĕç çапăçнă-и? — тĕлĕнтĕм.

Те илтмерĕ Михаил Трофимович мана. Чĕнмест. Чĕркуççийĕ çине чавсаланчĕ. Пуçне усрĕ. Хăйăр çинчи кирпĕч татăкĕ çине куç илмесĕр пăхма тытăнчĕ. Çак вăхăтра, тен, вăл эпĕ унпа юнашар ларнине те манчĕ. Апла пулин те, кăшт хусканса илме те именетĕп. Чылайччен çапла ларнă хыççăн ерипен те шăппăн каласма тытăнчĕ. Хăйпе хăй пуплет çын, пуçĕнчи шухăшне сасăпа каласа.

— ...Ас тăватăп вăл вăрçа кайнине,— терĕ. Кӳршĕсем-çке, унсăрăн мĕнле. Эпир ун чух пĕчĕккĕччĕ. Ялта ăна пурте Чĕкеç тесе чĕнетчĕç. Эпир, вĕттисем, Чĕкеç аппа, теттĕмĕр.

Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн вăрçă пуçланнă чух çапçамрăк хĕрччĕ Чĕкеç аппа. Халĕ те куç умĕнчех: çурăмĕ хыçĕнче чакăр лентă янă ука евĕр сап-сарă икĕ çивĕт. Тăлăх хĕрччĕ. Ватă кукамăшĕпе пурăнатчĕç, иккĕшех. Ĕçченшĕн юрататчĕç ăна пурте. Çитĕнсе çитнĕ ывăл пуррисем кинлĕх суйланă.

Чĕкеç аппа фронта хăй ирĕкĕпе кайрĕ. Çарта хăюллă разведчицă пулнă. Хаçат çине пĕр хут çеç çырмăн ун пирки. «Хĕрлĕ ялав» орденĕпе те наградăланă ăна. Темиçе хут аманнă. Госпитальте сывалать те каллех — фронта. Пĕррехинче инкек сиксе тухать (кун çинчен вăл мана больницăра, вилес умĕн каласа пачĕ). Украинăри пĕр ялта фашистсем ун йĕрĕ çине ӳкеççĕ. Тухса тарманиепле те май килмен. Вара ăна ялти пĕр ватă çын тип тарасана вĕренпе антарма пикенет. Кив чăпта, ăпăр-тапăр пăрахсан курмĕç, тесе шутланă старик. Фашистсем чăнах та тарасара разведчицă ларнине асăрхаман, анчах та старикĕн аллинче вĕренĕ вĕçерĕннĕ пирки Чĕкеç мелсĕр персе анать. Çавăн чух унăн çурăм шăмми сикнĕ. Кайран ялти карчăксем шăлса лартнă çурăм шăммине хăй вырăнне, сывалнă, татах çӳренĕ разведкăна хĕр, тăшмана çĕнтернĕ. Мирлĕ самана çитнĕ. Пурăннă, ĕçленĕ. Анчах вилĕм тĕвви хăй ĕçне тунă.

Ухвань пирĕн бригадăн усрав ывăлĕ пулса юлчĕ. Амăшĕн вил тăпри çинче сăмах патăмăр: бригадă вăйĕпе вĕрентсе çын тăватпăр. Кăçал та ав, амăшĕ пурăннă чухнехи пекех, бригадăна каникул вăхăтне ирттерме килчĕ. Пулăшать пире. Хуш кăна, тем те туса парать. Аслăскер.

Михаил Трофимовичпа эпир уйрăлтăмăр. Ун патне ыран та, тепĕр кун та, мĕн больницăран тухиччен килсе çӳретĕп. Вăл каласа панине нихăçан та манас çук, çын çинчен çырнă питĕ интереслĕ кĕнеке вуласа тухнă-нак туйăнчĕ.

Киле таврăнтăм. Çывăрма выртас умĕн яланхиллех анне мана хăйне хирĕç лартрĕ. Кун каçа эпĕ мĕн тунине, мĕн курнине ыйтса пĕлме юратать вăл. Ку хутĕнче эпĕ ăна Чĕкеç аппа пирки бригадиртан мĕн илтнине пĕр сиктермесĕр йăлтах каласа патăм.

— Ах туру, тек вăрçă ан пултăрах,— терĕ анне.— Ухвань амăшĕ мĕнле паттăр хĕрарăм пулнă.

## 6

Куҫа уҫнӑ-уҫман диван ҫине пӑхрӑм. Никам та ҫук. Ну-и этем. Ухвань каллех мана шуҫтарса хӑварнӑ. Хӑй хыҫҫӑн вырӑнне пухса тирпейлеме те ӗлкӗрнӗ. Вӑхӑт мӗн чул-ши? Тӑхӑр сехет!

Ҫуллахи каникул вӑхӑтӗнче яланах хӗвел систерме-сӗр хӑпарать.

— Ӳсен эсӗ, ҫавӑнпа ҫывӑран,— лӑплантарать анне. Ухвань урӑхла шутлать:

— Эсӗ ыйхӑ чӑпти, Ленти,— тет. Кулать.

Ухвань мӗн ялтан таврӑннӑранпах пирӗн патӑрта пурӑнать. Анне темшӗн-ҫке ӑна юратса пӑрахрӗ, хӑй ывӑлне пӑхнӑ пек пӑхать:

— Пирӗн йыш сахал, виҫҫӗн ҫеҫ, вырӑн такама та ҫитет,— тет.

Аннепе эпӗ килӗшетӗп. Пӗчӗк ҫынна общежитинче пысӑккисем хушшинче пурӑнма кичем. Ӗҫ хыҫҫӑн халӗ Ухвань мӗн каҫченех манпа. Хаваслӑ пире. Шахматла вылятпӑр. Кӗнеке вуласси те пулать. Журналсем те тем чулах. Атте журналсем нумай ҫырӑнса илет. Тата час-часах пирӗн пата Атнер килсе ҫӳрет. Виҫҫӗн эпир шыва кӗме, кинона каятпӑр. Михаил Трофимович та Ухвань пирӗн патӑрта пурӑннӑшӑн савӑнать.

Пирӗн Ухвань халӗ крановщик помощникӗ. Крановщикӗ ырӑ кӑмӑллӑ ҫын. Ӑна эпир Аркади пичче тесе чӗнетпӗр. Қалаҫма юратакансккер хӑй. Хушнӑ ӗҫе тӗплӗ тума темиҫе хут та ӑнлантарма пултарать. Ухване вӑл кран пайӗсене ҫу яма, крана ӗҫе хатӗрленӗ чух хӑш винтисене мӗнле уҫӑпа пӑрса хытармаллисене вӗрентнӗ. Кранӗ ӗҫленӗ вӑхӑтра вара Ухвань кабинӑра Аркади пиччепе юнашар ларать. Мӑнаҫлӑн пӑхкалать йӗри-тавра.

Кранӗ вӗсен ҫав тери вӑйлӑскер. Тимӗр бетон юпа-сене ним мар ҫӗклет.

Сменă хыççăн Аркади пичче кашнинчех пирĕн хапха умĕнче тытăнса тăрать. Çерем çине ларса тапак туртнă май, ачасемпе калаçать.

— Аркади пичче, мĕнле юпа çĕклерĕр эсир паян? — тет Атнер.

— Свай вăл, ачам,— ăнлантарать крановщик. Эпир çăвар карсах итлетпĕр.— Кĕпер свайĕ. Пĕр свайĕ кăна çичĕ тоннă. Унăн диаметрĕ — утмăл сантиметр. Мĕн пурĕ çирĕм çичĕ свай лартмалла. Вĕсене вун икшер метр тарăнăшне çапса кĕртмелле.

— Мăлатукпа çапса кĕртетĕр-и? — ыйтатăп.

Ман ыйтуран пурте кулаççĕ. Аркади пичче те лĕхлетет. Çурăмран лăпкаса çапла калать:

— Çук, ачам. Свай вăл пăта мар. Свая электричествă вăйĕпе ĕçлекен вăйлă механизм — пирĕн кран лартать.

Аркади пичче çапла чылай калаçкаланă хыççăн сыв пуллашса каять. Пирĕн пуçра шухăш вĕçет. Эпĕ Ухване ăмсанатăп. Вăл пулас крановщик.

— Крансăр, крановщиксĕр тĕнчере пĕр кĕпер те тăваймаççĕ,— тет вăл.

Эпир ахаль те пĕлетпĕр. Крановщик — лайăх специальноç. Атнерпе хамăрăн та крановщике вĕренмелле мар-ши, тетпĕр.

* * *

Ухвань пире Атнерпе иксĕмĕре паян кĕперĕн чи çӳллĕ колоннине лартнине курма чĕннĕччĕ.

Аса илтĕм те çавна вырăн çинчен хăпăл-хапăл сиксе тăтăм. Васкамалла, курмасăр юлас марччĕ.

Кĕпер тунă çĕрте манăн хамăн та ĕç пур. Питĕ пархатарлă ĕç. Эпĕ ĕçе кӳлĕнесси пĕтĕмпех Михаил Трофимовичран килчĕ.

Тахçанах-ха вăл, Михаил Трофимович больницăран тухнă хыççăнах, эпĕ кустăрмаллă крансене курма кай-

рӑм. Шӑп кӑнтӑр апат вӑхӑчӗ. Хӑш-пӗр рабочисем столовӑйӗнчен таврӑннӑ та пӗр тӗле пухӑнса ларнӑ. Картла выляҫҫӗ. Михаил Трофимович та пырса тӑчӗ.

— Намӑс мар-и сире картла вылямa? — асӑрхаттарчӗ вӑл.

— Мӗн эсир, бригадир юлташ.

— Ҫанатпӑр, апат вӑхӑчӗ иртмен-ҫке,— тӳрре тухрӗҫ рабочисем.

Бригадир, тем аса илнӗн, пӗр ман ҫине, тепӗр картла выляканcем ҫине пӑхрӗ. Вара ҫапла каларӗ:

— Юлташсем, ырантан пуҫласа кашни кунах, столовӑйӗнчен таврӑннӑ хыҫҫӑн, хамӑр планетӑ хыпарӗсене итлеме тытӑнатпӑр.

— Мӗн, мӗн? — терӗҫ темиҫен пӗр харӑс.

— Политинформаци?

— Ҫапла,— ҫирӗплетрӗ Михаил Трофимович.— Ку ӗҫе туса пыма Ленти пионера ыйтӑпӑр.

Михаил Трофимович мана чӗнсе илчӗ те политинформацие мӗнле хатӗрленмелли ҫинчен ӑнлантарчӗ. Асӑннӑ кунтанпа манӑн хисеплӗ ӗҫ пуҫланчӗ. Мӗн чухлӗ хаҫат-журнал вуламастӑп-ши кулленех! Тӗнчере ӑҫта мӗн пулса иртнине пӗтӗмпех пӗлетӗп. Манса каясран кӗскен тетрадь ҫине ҫыратӑп. Ҫапла рабочисене каласа панӑ чух пӑхса аса илме ансат.

Пӗрремӗш кун рабочисем умӗнче пупленине ас тӑватӑп-ха. Ҫав тери пӑшӑрхантӑм. Вӑтаннипе чӗлхе ҫавӑрӑнмасть, сассӑм илемсӗр. Юрать, ҫынсем сахал пулчӗҫ. Тепӗр виҫ-тӑват кунтан хӑнӑхрӑм. Ҫилте хам тӗллӗн мӗн чухлӗ доклад тӑватӑп. Рабочисем халӗ мана курсан:

— Пирӗн лектор,— теҫҫӗ.

Апат ҫисе тирпейленнӗ ҫӗре Атнер те килчӗ. Эпир чи ҫӳллӗ колоннӑна мӗнле лартнине курма кайрӑмӑр. Хамӑр савӑнӑҫлӑ. Рабочисем мар, эпир ҫав ӗҫе тӑватпӑр пекех. Ав Аркади пиччепе Ухвань ӗҫлекен кран. Пире ҫывӑха ямаҫҫӗ, юрамасть. Бригадӑ ывӑлӗ пире часах

асăрхарĕ. Вăл пире алă суллать. Тем калать, ăнланмарăмăр. Унччен те пулмасть Атнер кăшкăрса ячĕ:

— Ленти, пăх-ха, мĕн çӳллĕш юпа! Пĕлĕтех перĕнет.

Куртăм çеç, самант ăнлантăм.

— Кая юлнă! Пирĕнсĕрех...— йынăшса илтĕм йĕрсе ярасла.— Мĕшĕлтететпĕр, мăрансем. Хуть сан иртерех килесчĕ.

— Инçетре пурăнатăп та,— текелерĕ Атнер.

Нумайччен пăхса тăтăмăр. Анчах мĕн усси? Çыннисем тем тăрмашаççĕ. Халĕ пире Ухвань умне курăнма намăс. Апла пулин те, сменă пĕтессе кăмакаран кукăль пиçсе тухасса кĕтнĕ пек кĕтрĕмĕр.

— Куртăр-и, мĕнле чаплă сыпса лартрăмăр паян чи çӳллĕ колоннăна! — терĕ Ухвань пирĕн пата çитнĕ-çитмен.— Пирĕн кран çĕклесе лартрĕ вĕт.

Ененмерĕм. Колоннăна мĕнле сыпчăр, вăл çип марçке?

Аркади пичче каласа парсан, пурте паллă пулчĕ.

Сăвайсене çапса кĕртнĕ. Цементран бетонласа никĕс хывнă. Ун çине малтан çичĕ метр тăршшĕ колоннă лартнă. Паян çав колоннă çине татах çичĕ метр тăршшĕ колоннă хăпартса лартнă, варринчен сыпса.

— Ун çӳллĕшĕ халĕ вун тăватă метр-и? — ыйтрĕ Атнер.

— Çапла,— çирĕплетрĕ Аркади пичче.— Часах тата тепĕр чи çӳллĕ колоннине сыпатпăр.

— Эппин ун чух Ухваньпе пĕрлех тăрса тухатпăр,— тет Атнер.

— Мана çав кĕпер юпи завод труби пекех туйăнчĕ. Ăшĕ хăвăл-и çав колоннин? — ыйтрăм.

— Халь вăл хăвăл. Анчах та ăна бетонпа тултараççĕ. Чи варрине йывăç пăрăх лартса хăвараççĕ.

— Мĕншĕн? — тĕлĕнетĕп.

— Сывлăш çӳреме.

— Хăвăрах тунă-и юписене?

— Мускаври заводран илсе килнĕ.

Пирĕн умра коммунизм стройки. Ухвань çав стройкăра ĕçлет. Ăна чăннипех те ăмсанмалла. Бригадă ывăлĕ çав вăл. Эпир Атнерпе çӳретпĕр çак стройкă тавра сулланса. Мĕншĕн пĕрисем тивĕçлĕ кунта ĕçлеме, теприсем çук? Чуна кăшт пусармалăх пĕр ĕç пур-ха ĕнтĕ. Рабочисене планетă хыпарĕсене пĕлтерсе тăратпăр. Юлашки вăхăтра Антер та пулăшать мана. Ку çеç сахал пек туйăнать пире. Мĕн тума пулать татах? Ĕçлеме илмеççĕ. Вĕсене çын кирлĕ мар. Чăнах йышĕ сахал, анчах та вĕсен аллинче вăйлă техникă. Вун сакăр çула çитменнисене çав техникă патне çывăха ямаççĕ. Çул çитни çеç сахал, вĕренни кирлĕ.

Юнашар ларакан Атнер ури çине сиксе тăчĕ те каларĕ:

— Ленти, тунтикунсенче хаçат çук, рабочисене концерт парар мар-и?

Атнер сĕнĕвĕ мана кăмăла кайрĕ. Қилĕшрĕмĕр. Çак минутран вара пирĕн чăн-чăн асап пуçланчĕ. Мĕн кĕртмелле концерт программине? Пуçа минрететпĕр. Паллах, концерчĕ кану концерчĕ пулмалла. Унта кулăш сценкисем те кĕртсе ямалла. Вăхăт самаях шурĕ, анчах программăна пĕр номер те хушăнмарĕ.

Акă чи çӳллĕ колоннăсенчен иккĕмĕш колоннине сыпмалли кун çитрĕ. Çĕрĕпе çывăрмарăмăр темелле Атнерпе. Усси пулчĕ. Ку хутĕнче Ухваньрен юлмарăмăр. Хĕвел тин тухнă, курăк çинче — сывлăм. Сулхăн çӳçентерет. Эпир стройкăна кĕмерĕмĕр, юраманнине пĕлетпĕр. Ухвань хăйсен кранĕ патне уттарчĕ, унта Аркади пичче крановщик тем тĕпĕртетет.

Тĕмеске çине хăпартăмăр. Қунтан пурте курăнать. Ав, иртнĕ кунсенче лартнă чи çӳллĕ колоннă, юнашар — çурмаран хуçăлнă юман вулли пек паклак юпа. Çумĕнчех сыпмалли выртать.

Часах Аркади пиччен кранĕ кĕрлеме тытăнчĕ.

— Мĕнле çĕклĕ-ши?

— Алсемпе, паллах,— хушса хурать Атнер.

Ытла та айван ача-çке Атнер.

Кĕрлет кран. Чĕри ун мотор çав. Пăх та кур, кран çĕрте выртакан колоннă юпине хĕскĕчпе кĕстерчĕ. Йăтать! Урра! Ай, вăйлă-çке.

Чылайччен тĕрмешрĕç. Патак татăкĕ мар çав, йывăр. Мĕн пысăкăш вăл. Диаметрĕ утмăл сантиметр. Кунта та геометри. Кăçал шкулта геометрипе тăрăшма тивет.

Курса тăни ахаль иртмерĕ. Ман пуçа паха шухăш пырса кĕчĕ.

— Атнер, концерта кĕпер юррипе пуçламалла,— пĕлтертĕм.

— Шухăшна ырламалла. Анчах сăмахне кам, музыкине кам кĕвĕлĕ?

— Чăваш халăх юрри пур-иç.

Эпĕ çавăнтах «Чĕнтĕрлĕ кĕпер» юрра юрласа ятăм.

— Сăмахне тăна ил эсĕ,— хушать мана Атнер.— «Чĕнтĕрлĕ те кĕпер — юман юпа» тенĕ. Ăçта кунта юман юпа? Кивелнĕ. Пурнăçран юлнă.

— Улăштарас,— сĕнтĕм. Анчах та ни эпĕ, ни Атнер ку таранччен сăвă çырса курман. Çапах та сăмах шырама тытăнтăмăр. «Тимĕр», «цемент», «бетон»... Пĕри те килĕшмест. Ах, йывăр-çке.

— Тупрăм,— терĕ Атнер, ку таранччен пĕр чĕнмесĕр шухăшласа ларнă хыççăн.

— Кала.

— Чĕнтĕрлĕ кĕперĕн колоннисем...

— Юрласа пăхар, атя.

Чĕнтĕрлĕ кĕперĕн колоннисем
Авăнать, авăнать, тееççĕ.
Авăнать, авăнать, ай, теççĕ,
Тем чул авăнсан та, утсем каçаççĕ.

— Чиперех тухать,— кăшкăрса ятăм.

Атнер хирĕçлет.

— «Утсем каçаççĕ» тенĕ. Ăçта халĕ Шупашкарта ут-

сем? Ниçта пĕр лаша тупаймăн. Утсем çеç каçаççĕ пулсан, вăл чаплă кĕпер те мар. Троллейбуссем çӳресен вара кĕперĕн чапĕ ӳсет.

Каллех шухăша путрăмăр. «Утсем» сăмаха ниепле те улăштарма çук иккен. Каллех Атнер çăлчĕ. Тăваттăмĕш йĕркене çапла юрлама сĕнет:

«Çук, авăнмасть, троллейбуссем каçаççĕ».

Мĕн, начар мар. Шухăшĕ лайăх. Юрласа пăхрăмăр. Кĕвве вырнаçать.

Çак юрра хамăр майлă тунă хыççăн эпир хамăрта вăй пуррине туйрăмăр. Эрне хушшинче программăна туса çитертĕмĕр. Юрăсем кĕртрĕмĕр. Темиçе сценкă çыртăмăр. Выляма Аркади пичче те хутшăнма пулчĕ. Аккордеонпа, паллах, Атнер аппăшĕ — Нина калать.

Хамăр концерт программине Михаил Трофимович бригадире паллаштартăмăр. Вуласа тухрĕ те йăл кулчĕ.

— Пултаракан ачасем эсир. Тӳрех калатăп, рабочисем хапăл тусах йышăнаççĕ сире.

Пире чун кĕчĕ. Кунне-çĕрне пĕлмесĕр репетици тума тытăнтăмăр. Тăрăшсан пулать иккен. Ĕнтĕ концерт ирттерме вырăн суйламалла. Кĕпер тунă çĕрте, айккинче, пĕр-ик вакун лараççĕ. Çав вакун хушшине чаршав карас. Кăна пире Аркади пичче крановщик ăс пачĕ.

Концерт пуласси çинчен виçĕ кун малтан пĕлтерӳ çакрăмăр.

Кунсем питĕ хăвăрт иртрĕç. Кĕтнĕ самант çитрĕ. Чаршав çакнă. Рабочисем столовăйĕнчен кăнтăр апачĕ çисе килессе кĕтетпĕр. Пухăнаççĕ-и пирĕн концерта? Çав тери пăшăрхантарать. Мĕн тейĕр? Иккĕн килчĕç. Пирĕн, паллах, сак çук. Çĕр çине лармалла. Унтан татах, татах килчĕç. Савăнатпăр, чаршав хыçĕнчен вĕлтвĕлт пăхатпăр. Вун пилĕк-вун улт çын пурах.

Михаил Трофимович пирĕн пата чаршав хыçне хăй кĕчĕ. Пионер галстукĕсене юсакаларĕ пирĕнне.

— Пуçлăр,— хушрĕ вăл.— Хăюллă тыткалăр хăвăра.

Вăл рабочисем хушшине кайса ларчĕ. Эпир Атнерпе иксĕмĕр икĕ енчен чаршав умне тухрăмăр та концерта çапла пуçларăмăр:

Эпĕ. Кĕпер тăвакансене...

Атнер. Пионерла хĕрӳллĕ...

Иксĕмĕрте. Салам!

Куракансем алă çупса ячĕç.

Эпĕ. Паян эпир сире пĕчĕк концерт кăтартасшăн.

Атнер. Анчах малтанах каçару ыйтасшăн: эпир чăн-чăн артистсем мар-ха, вĕренекенсем çеç. Килĕшмесен, ан ятлăр. Çитменнине хăвăр çитерĕр.

Эпĕ. Кăмăла кайсан алă çупăр. Ку вăл пирĕншĕн пысăк парне пулĕ.

Рабочисем кулса ячĕç, халех алă çупрĕç. Ку пире хавхалантарчĕ. Эпир пуç тайрăмăр.

Атнер. Концерт пуçланчĕ.

Чаршав умне Нина тухрĕ. Хул пуççийĕ урлă аккордеон çакнă. Вăл пирĕн хушша тăчĕ. Эпир виççĕн чăваш халăх юррине тытăнтăмăр.

Чĕнтĕрлĕ кĕперĕн колоннисем
Авăнать, авăнать, теессĕ.
Авăнать, авăнать, ай, теççĕ,
Çук авăнмасть, троллейбуссем каçаççĕ.

Юрă вĕçленсен пуç тайрăмăр. Куракансем алă çупса ячĕç. Мухтаççĕ. Эпир чаршав хыçне пытантăмăр. Кăшт тăхтасан тухрăмăр чупса, чăн-чăн артистсем пекех, хамăрпа паллаштарма.

Эпĕ. Юрлакансем: Атнер пионер...

Атнер *(аллипе мана кăтартса)*. Ленти пионер...

Эпĕ. Аккордеонпа Нина Сараева каларĕ. Халĕ вăл сире Огинскинне «Полонез» каласа парĕ.

Нина чаршав умне тухрĕ, эпир кĕтĕмĕр. Пирĕн сценкă валли декораци хатĕрлемелле. Çак пĕчĕк спектакльте Атнер хĕрача рольне вылять. Кулсах вилмелле. Хăй айăплă. Пьесине çырнă, хĕрачине тупман. Ав, мекеçлен-

сех хěрача кěпине тăхăнать-ха, Нинăнне, тахçан тăхăнса çӳренине тупнă ěнтě. Тутăр çыхрě те никам палласа илейми пулса тăчě. Пьеси тăрàх хěрачи — октябренок. Умěнче Ленин сăнлă пěчěк çеç çăлтăр.

Декораци мěн пурě те сарă картон хутран хатěрленě юпа, ăна шуратрăмăр. Кěпер юпине, колоннине пěлтерекен япала ку.

Нина каласа пěтерчě. Чаршав уçăлчě. Колоннă çумěнче хěрача (Атнер ěнтě) нăшăкласа йěрсе ларать. Рабочи тухать. Ку роле Аркади пичче вылять. Вăл малтан хěрача йěнине илтмест.

Р а б о ч и *(тӳпенелле пăхкаласа)*. Хěвел тин çеç анчě, самант тěгтěмленчě-çке. Э-э, çумăр пěлěчě капланса килет-мěн.Васкас, çумăр çăвиччен киле çитес. *(Ача йěнине илтет.)* Чим-ха, такам йěрет мар-и? *(Тăнласа тăрать.)* Чăнах. Ача сасси. Ăçта вăл? *(Унталла-кунталла пăхкалать. Курать.)* Ай, ав кěпер колонни çумěнче ларать. Инкек пулнă унпа, тем тесен те. *(Ача патне утса пырать.)* Ачам, мěншěн йěретěн?

Х ě р а ч а. Эпě, эпě *(ěсěклет)* пиччерен çухалса юлтăм.

Р а б о ч и. Ăçта пурăнан эсě?

Х ě р а ч а. Ялта.

Р а б о ч и. Ялта? Хулана мěншěн килнě эсě?

Х ě р а ч а. Кěпер курма килтěмěр.

Р а б о ч и. Ну мěнле?

Х ě р а ч а. Кěперě çук. Юписем темиçе.

Р а б о ч и. Шутларăн-и?

Х ě р а ч а. Шутларăм. Вун тăваттă.

Р а б о ч и. Эсě тепре килнě çěре туса пěтеретпěр. Пиччӳ ăçта сан?

Х ě р а ч а. Эпир юпасем хушшинче вылярăмăр. Эпě пытантăм, мана шыраса тупмарěç. Пăрахса кайрěç пуль. *(Тата хытăрах ěсěклесе йěрсе ярать.)*

Р а б о ч и. Ан йěр эсě. Мěн тăвас-ха санпа?

*(Икě ача вěсен умěнчех иртсе кайма пиконеççě. Кěпе*

*çаннисем çинче паллăсем: «МÇТ» — милицин çамрăк тусĕсем. Пионерсен рольне эпир Ухваньпе иккĕн вылятпăр. Эпĕ пĕрремĕш, вăл иккĕмĕш пионер).*

Р а б о ч и *(пионерсене асăрхаса).* Акă вĕсем, хĕрачан пиччĕшĕсем. Эй, эй, ачасем?

1-п и о н е р. Пичче, эсир пире чĕнетĕр-и?

Р а б о ч и. Сире. Йăмăкăра мĕншĕн пăрахса хăварнă эсир? Вăл йĕрет. Çухатма юрамасть.

2-п и о н е р. Мĕнле йăмăк?

1-п и о н е р. Пирĕн йăмăк çук.

Р а б о ч и. Қилĕр-ха çывăхарах. *(Хĕрача çине тĕллесе.)* Сирĕн хĕрача-и ку?

2-п и о н е р. Çук.

Р а б о ч и. Хĕрача, çак камарадоссене палламастăн-и?

Х ĕ р а ч а *(йĕме чарăнса).* Мĕн вăл камарадос?

Р а б о ч и. Ну эппин — юлташсене.

Х ĕ р а ч а. Эпĕ ку арçын ачасене палламастăп.

Р а б о ч и. Шел. Çухалса юлнă, ялтан килнĕскер. Мĕн тумалла ĕнтĕ?

1-п и о н е р. Милицин ачасен пӳлĕмне илсе каятпăр. Ĕçĕ те пĕтрĕ. Эпир шăпах милицин çамрăк тусĕсем.

Х ĕ р а ч а. Эпĕ милицие каймастăп, каймастăп. *(Каллех йĕме тытăнать.)*

Р а б о ч и. Чим-ха, хĕрĕм, капла хирĕçнипе ĕç тухмасть. Санăн пиччӳ те унта пулĕ-ха.

1-п и о н е р. Çавăнта, паллах.

2-п и о н е р. Сана кĕтет.

1-п и о н е р. Пӳлĕмре вылямалли теттесем темĕн чухлех.

Х ĕ р а ч а. Пичче те унта пулсан пыратăп.

Р а б о ч и. Паçăрах çапла кирлĕ. Кĕпер курма çитес çулла кил. Ун чухне кĕпер урлă троллейбуспа чуптарăпăр.

Х ĕ р а ч а *(тăрса рабочи аллинчен пырса çавтăнать).* Чăнах-и?

Рабочи. Ма суяс? Хам та ăсатма пыратăп.

*(Пурте тухса каяççĕ. Чаршав. Куракансем каллех алă çупаççĕ. Малалла мĕн пулассине пĕлтермелле. Тăхтама тивет. Атнерăн юрламалла. Хĕрача тумне хывмалла-ха ун. Акă эпир виççĕмĕр те чаршав умне тухрăмăр.)*

Эпĕ. Сирĕн умра шăллĕпе аппăшĕ. Вĕсен ячĕсене эсир пĕлетĕр. Юрлаканни — шăллĕ. Юрă ячĕ — «Котелок».

Аçта, камран вĕреннĕ пулĕ Атнер çак юрра? Чуна тивекен юрă. Пĕр ача уйра котелок тупать. Салтак котелокĕ. Шăтăк котелок. Пульă ун витĕр тухнă. Хуçи фронтра Іăван çĕршыва хӳтĕлесе тăшмана хирĕç çапăçнă. Хăюллăскер, нимĕнрен те хăраман. Анчак та пĕррехинче ӳкет те вăл, тăраймасть. Тăшман пульли тухнă чĕре витĕр. Котелокĕ вара халĕ те пурăнать, унпа çĕр улми пĕçереççĕ.

Атнер юрласа пĕтерсен, манăн пĕлтермелле.

Эпĕ. Юптару... «Слонпа Моçкă». Авторĕ — вырăссен паллă юптаруçи — Крылов. Бригадă ывăлĕ Ухвань вулать.

Куракансем вулачченех алă çупса ячĕç.

Эпĕ чаршав хыçне кĕтĕм. Юлашкинчен Аркади пиччепе иксĕмĕр эпĕ çырнă пĕчĕк сценкă выляса памалла. Аркадий пичче — милиционер, эпĕ ял ачин рольне вылямалла. Эпир декораци хатĕрлеме тытăнтăмăр. Ял урамĕ, йывăç.

Ухвань пĕтерчĕ, чаршав уçăлчĕ. Аркади пичче, милиционер тумне тăхăннăскер, йывăç çумне тайăнтарнă мотоциклне юсан пекки тăвать. Ун патне арçын ача (эпĕ ĕнтĕ) унталла-кунталла пăхкаласа йăпшăнса çывхарать.

Арçын ача *(шăппăн)*. Милиционер пичче, эсĕ сăмакун юхтаракансене тытма килмен пулĕ те?

Милиционер *(мотоциклне юсама пăрахса)*. Ун пеккисем пур-и-мĕн?

Куракансем кулса ячĕç.

Арçын ача. Пур.

Милиционер. Камсем юхтараççĕ вара сăмакунне?

Арçын ача. Пирĕн аттепе анне.

Милиционер. Аçупа аннӳ?

Арçын ача. Алай.

Куракансем каллех ахăлтатаççĕ.

Милиционер. Ăçта?

Арçын ача. Сад пахчинчи мунчара. Каятăн-и тытма?

Милиционер. Каятăп. Вĕсем саккуна пăсакансем.

Арçын ача. Каятăн пулсан, эпĕ хыпарлани çинчен аннепе аттене ан калăр вара.

Милиционер. Эх, эсĕ те çав. Ху — пионер. Киревсĕр ĕç çинчен калама хăрамарăн пулсан, калĕ ан шиклен ĕнтĕ.

Арçын ача. Шикленсе мар, çапах та...

Куракансем тата хытăрах кулаççĕ.

Милиционер. Юрĕ-çке, эппин. Ăçта-ха вăл сирĕн мунчăр? Ăçтан каймалла?

Арçын ача *(айккинелле тĕллесе)*. Ав, ав çав сад пахчинче. Карти урлă тӳрех каçăр.

Ĕнтĕ чаршав хупăнчĕ.

Ял ачине выляма тăхăннă карттуса хыврăм та, чаршав умне тухса, концерт пĕтни çинчен пĕлтертĕм. Çав тери хытă алă çупрĕç.

Пирĕн концерт кĕпер тăвакансене килĕшнĕ. Каярахпа та эпир ăна рабочисем ыйтнипе кăтартрăмăр.

Пирĕн концерт хыççăн çак кĕпере пурте «Чĕнтĕрлĕ кĕпер» теме пуçларĕç.

Шкулта вёренӳ çулĕ пуçлансан акă мĕн илтме тивĕçлĕ пултăмăр: пионер дружинин чаплă линейкинче Атнерпе иксĕмĕре ялав умне чĕнсе кăларчĕç те тав турĕç, çуллахи каникул вăхăтĕнче рабочисене концерт парса канма пулăшнăшăн. Пирĕн çинчен шкула рабочисем çырса янă-мĕн. Чунтан савăнтăмăр.

## 8

Шкултан таврăнсан чи малтанах эпĕ почтă ещĕкне пăхатăп. Çыру килмен-ши тусăмран? Паллах, Ухваньрен кĕтетĕп. Ăна вĕренме ăсатса янăранпа нумай вăхăт иртрĕ. Вăл вĕренекен интернат-шкул аякра, урăх республикăра. Унтан хамăр хулари шкула вĕренме нимпе те пăрахса килмест, амăш вырнаçтарнă шкул нимрен те паха ĕнтĕ. Эпир пĕр-пĕрин патне çыру çӳрететпĕр.

Ас тăватăп-ха, малтанхи çырune уçсанах акă мĕн вуланăччĕ:

«Сентябрь. 1964 çул.

Хаклă Ленти, Атнер!

Эсир çаплах ман асран тухмастăр. Кунти юлташсем те лайăх. Эпир сире ăмăртăва чĕнесшĕн...»

Ыт ахальтен-ши, пире шухăш парса-ши, калаймастăп, çапла ыйтнăччĕ вăл: «Михаил Трофимовичран кайса пĕлĕр-ха: сирĕн умăрти кĕпере тума миçе тоннă тимĕр каять?» Айванла ыйту пек туйăнчĕ. Ара, кĕпере тимĕртен тумаççĕ-çке, бетонран, шухăшлатăп. Çапах та çав кунах, Атнерпе иксĕмĕр, кĕпер тунă çĕре бригадир патне вĕçтертĕмĕр.

— Тĕрĕссипех калаймастăп, анчах эпир хамăр кăна тăватă çĕр тоннăна яхăн арматурă туяннă,— терĕ вăл.

— Мĕн вăл арматурă? — персе ятăм. Çавăнтах хамран хам вăтанса хĕрелтĕм. Михаил Трофимович чиперех ăнлантарса пачĕ:

— Кĕпер сăвайĕсем, юписем пĕтĕмпех бетонран. Бетон тимĕр каркассăр, тепĕр тĕслĕ каласан — тимĕр пралуксемсĕр, тытăнса тăмасть.

Куя хыççăн шухăша путрăмăр. Хамăр çине илес мар-и çавăн чухлĕ тимĕр-тăмăр пухма? Ăна арматурă туса кăларакан завода ярса парас. Вăт пулĕччĕ ырă ĕç. Тăрăшсан вăй çитерме пулатех, нумай чух ахалех сулланса çӳретпĕр уроксем хыççăн. Отряда пĕлтертĕмĕр. Пионерсем кĕрсех тавлашрĕç. Килĕшрĕç. Çавăн пекех хĕрсе ĕçе тытăнчĕç.

Октябрь уявĕ тĕлне пӳрт çӳллĕш икĕ купа пухрăмăр. Шкулти аслă вожатăй пире мухтать. Ăсатмалла, ун чух эпир пухнă тимĕр-тăмăр миçе тоннă тайни паллă пулĕ.

Чĕнĕве йышăнса ăмăртăва тухни çинчен Ухване çырса ятăмăр.

Почтă ещĕкĕнче кăвак конверт выртать. Илетĕп те уçса вулатăп. Ухвань пире тата Аркади пичче крановщикпе Михаил Трофимович бригадире курас килет тесе çырать. Хĕл иртсенех, çу çитет, каллех пирĕн пата килĕн. Вăл унчченхи пекех кĕпер пирки ыйтать: «...туса пĕтермеççĕ-и-ха?»

Ухване савăнăçлă хыпарсем пĕлтерме питех те хавас.

Халĕ кĕллехи вăхăт. Çанталăкĕ сивĕ. Тепĕр чух çĕр çумĕпе асар-писер çил вĕрсе юр пĕрчисене шăлать. Тăман асать, куçа уçмалла мар. Лапка-лапка юр та çăвать. Анчах та кĕпер тăвакансем самантлăха та ĕç пăрахмаççĕ. Сарайĕнче кĕпер каштисене майлаштараççĕ. Тимĕр-бетон кашта. Ăна рельсăсем тăрăх çӳрекен кустăрмаллă, семафор пек çӳллĕ крансемпе кăна кĕпер юписем çине кайса вырнаçтараççĕ. Ĕнтĕ кĕпер урайне те сарсах пыраççĕ.

Эпир пурне те курма ĕлкĕрейместпĕр. Ĕç вĕсен хăвăрт пулса пырать.

Пирĕн те васкамалла. Çырăва почтă ещĕкне ярсан, Атнерпа каллех тимĕр-тăмăр шырама чупрăмăр.



# Тинĕс чечекĕ

Вăрăммăн янраса кайрĕ шкул коридорĕнче горн сасси. Кăна пионерсем юлашки шăнкăрав хыççăн илтрĕç. Йыхăрать горн туссене пĕрле пухăнма. Мĕн пулнă? Каламасăрах паллă, пурте пĕлеççĕ. Пурнăçа кĕнĕ йăла



тăрăх паян, сентябрĕн пĕрремĕшĕнче, çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа палăк умне симĕс кăшăл хума каймалла.

* * *

Палăкĕ шкултан ытлашши инçех те мар, çапах урамран урама тухса ял варринчи аслă уçланкăна çитмелле, стройпа утмалла илемлĕн, халăх пăхса савăнтăр.

Аякранах курăнать палăк. Моряк вăл. Лентăллă, сăмсасăр карттус тăхăннă матрос. Мăнаçлăн пăхса тăрать. Ҫирек кам та пĕрре куç хывсах чухласа илет: вăй питти патвар, нимрен хăраман çын. Мĕн чухлĕ çак этемре ырă кăмăл, хăюлăх, тĕрĕслĕх, тăшмана курайманлăх. Ҫашниех палланă ăна кунта, калаçнă, кулнă пурăннă чух. Ара, вăл ялти ытти ачасем хушшинчех ӳснĕ. Ятуллă çитĕннĕ, пакчари мăкăнь пекех. Сывланă таврари ешĕл вăрмансен, тăван уй-хирсен, улăх-çарансен симлĕ шăршипе; чӳхеннĕ çу кунĕсенче кукăр-макăр юхса выртакан Эль шывĕнче. Ҫавăнпах-и тен, йăрăс пӳллĕ, сарлака çан-çурăмлă çитĕннĕ. Вĕреннĕ тăрăшса, ĕçленĕ вăй хурса. Вăйăсенче ташласа-юрласа савăннă. Ҫул çитсен ăна çара илнĕ. Моряк пулса тăнă яш. Службă çар карапĕ çинче пуçланнă, Хура тинĕсре. Ун умĕнче вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕс сарăлса выртнă. Умра та хыçра та, айккинче те — шыв, шыв, шыв. Сĕнккесе тăма юраман хуралта, çивĕч куç кирлĕ. Пурне те курмалла, асăрхамалла, туймалла, сисмелле: шыв çинчине те, шыв айĕнчине те; Тăван çĕршывăн тинĕс чиккине пăсса тăшман ишсе ан килтĕр.

Тимлĕ тăнă хуралта чăваш каччи. Командирсем юратнă ăна. Хăюллă моряк ӳстернĕшĕн ашшĕ-амăшне те çыру урлă темиçе хутчен тав тунă.

Ҫул хыççăн çул иртнĕ. Чăваш ачин Тинĕс Ҫар флотĕнчен киле таврăнма вăхăт çывхарнă. Кĕтнĕ ăна ялта: ашшĕ-амăшĕ, тăван-пĕлĕшĕ, савнă хĕрĕ. Анчах телей пӳрмен моряка, ĕмĕтленни çитмен, сая кайнă. Нимĕç

фашисчӗсем сасартӑк Совет ҫӗршывӗ ҫине тапӑнса килнӗ. Хӑрушӑ вӑрҫӑ пуҫланнӑ. Ҫамрӑк моряк ҫарти юлташӗсемпе пӗрле Тӑван ҫӗршыв ирӗклӗхне хӳтӗлеме тӑнӑ. Шыв ҫинче те, тип ҫӗр ҫинче те тӑшмана ҫапа-ҫапа хуҫнӑ хастар моряксем. Анчах пӗр тан мар ҫапӑҫура паттӑрсен вилӗмӗпе вилет чӑваш каччи. Вӑл ашшӗ-амӑшӗн, тӑвансен, кӳршӗсен, ял-йышсен, ача-пӑчасен телейӗшӗн пуҫне хунӑ. Ҫапла вӑл — ҫӗнтерӳ сухатусӑр килмест.

Пирӗн халӑх нихӑҫан та паттӑрсене манман. Ҫавӑнпа та ҫамрӑк моряка ял варринчи аслӑ урамра палӑк лартса чыс тунӑ. Пионерсем кун ҫинчен лайӑх пӗлеҫҫӗ. Вӗсем ҫак морякӑн мухтавлӑ ҫапӑҫу ҫулӗпе похода тухрӗҫ. Унӑн ҫарти командирӗсенчен, юлташӗсенчен ҫырусем илчӗҫ, ашшӗ-амӑшӗ, тусӗсем, ӑна вӗрентнӗ учительсем каласа панисене тетрадь ҫине ҫырса хучӗҫ. Халӗ ҫав хаклӑ ҫырусемпе тетрадь шкулта йӗркеленӗ «Ҫар мухтавӗн пӳлӗмӗнче» упранса тӑрать.

* * *

Шкул коридорӗнче горн вӑй вылять, параппанӗ пӑнтӑр-пӑнтӑр тӑнкӑртатать. Кун пек чух йӑраланни килӗшмест. Вӑрт-варт тӑчӗҫ строя. Нумай та вӑхӑт иртмерӗ, тапранчӗ колоннӑ. Унӑн пуҫӗнче кӗрлӗ ялав вӗлкӗшет. Малти ретре утакан икӗ пионер — хӗрачасем симӗс кӑшӑл йӑтнӑ.

Юратаҫҫӗ ялти алла туя тытнӑ ватӑсем стройпа ҫӳрекен пионерсене. Яланах ӑшшӑн пӑхса юлаҫҫӗ вӗсем ҫине. Паян ачасем ӑҫта утассине ыйтмасӑрах чухлаҫҫӗ. Темиҫен палӑк карти ҫумӗнче паҫӑртанпах тӑраҫҫӗ.

Часах пионерсен колонни те ҫывхарчӗ. Палӑк унччен хиллех мӑнаҫлӑн курӑнса тӑрать. Ушкӑнти пӗр ача вара моряк нихӑҫанхинчен те урӑхла хаваслӑраххине туять. Кам пӗлет, пулӗ те. Сӑлтавсӑр мар. Ача моряк ҫине куҫне хӗссе йӑл кулчӗ, анчах та кӑна никам та сисмерӗ.

Вожатӑй морякӑн кун-ҫулӗ ҫинчен каласа кӑтартрӗ,

вара симĕс кăшăла палăк çумне тайăнтарса хума хушрĕ. Пионерсем паттăра салютлама сылтăм аллисене çамка тĕлне çĕклерĕç. Икĕ хĕрачи, малтисем, стройран тухса малалла утрĕç. Қалинккене уçса карта ăшне кĕчĕç. Қăшăл хума çывхарсан, «ах!» терĕç. Вĕсем пĕр вырăнта шак! хытса тăнине асăрхарĕç пурте самант. Темĕскер курчĕç-им? Тинкереççĕ ачасем. Тĕрĕс. Ав вăл! Анчах мĕскер-ши хĕрачасене çав териех хумхантарса пăрахнăскер? Пионерсем малалла туртăнчĕç. Вожатăй тӳсеймерĕ, кăшăла çĕклесе тăракан хĕрачасем патне пычĕ. Моряк умĕнче мĕн ларнине курчĕ те тĕлĕнчĕ.

— Қурăр, тахăшĕ пуринчен те малтан килсе моряка питĕ паха парне кӳнĕ,— терĕ вăл.

Пионерсем парне çине пурте пăхма тытăнчĕç. Тĕлĕнеççĕ.

— Мéн ку? — кăшкăрса ячĕ пĕр хĕрачи.— Аквариум тес, пуллисем ишмеççĕ.

— Пăхăр-ха, пăхăр! — тет тепри,— шыв айĕнче япяка вак чулсем! Ахах пĕрчи евĕр йăлтăртатаççĕ.

Вожатăй айккинерех пăрăнса сăнама тытăнчĕ. «Ял пионерĕнчен», тесе çырнă. Қам ăс çитернĕ-ши çакнашкал япала тума? Хăш пионерĕ, уйăрса илме хĕн. Қуракансем калани пурте тĕрĕс. Савăчĕ чăнах та пысăк. Вăл кантăкран, пулăсем усрамалли аквариум пекех. Тăптулли тăрă шыв, витрене яхăнах пулĕ. Тĕпĕнче — вак чулсем. Қашни чулнех ăста художник станокпа якатнă, вара тĕрлĕ сăрпа сăрласа илемлетнĕ, тейĕн. Çакна тума, паллах, нумай вăхăт кирлĕ пулнă ăна. Çук, пĕр кун е пĕр эрне, е уйăх кăна мар, çулталăкĕ-çулталăкĕпе ырмиканми ĕçленĕ. Шакăртма чулсен илемне сăнласа пама сăмах та тупса çитереймĕн. Хăш чулĕсем йĕпхĕм хура та сарă пилĕклĕ. Тепри — çерçи çăмартиех, чăп-чăпар. Виççĕмĕшĕ — мрамор татăкне илсе кăйранăнах — шапшурă. Ытти чулсем хӳшшине çав шуррисене ретĕн-ретĕн хурса пилĕк кĕтеслĕ çăлтăр тунă. Питĕ хитре. Қуç илмесĕр пăхас килет. Пăхса тăни çеç мĕн вăл, чăвашăн тытса

курмасан чунĕ канмасть. Ав, сарă çӳçлĕ ачи аллине шыва чикме пикенчĕ, анчах ăна çавăнтах темиçен хăтăрса пăрахрĕç:

— Юрамасть!

— Эпĕ пĕр чулне çеç илсе пăхасшăнччĕ.

Юнашар тăраканни вара çăмăллăн кăна ăна ĕнсе чикки тыттарчĕ. Кун хыççăн чутах тытăçса ӳкмерĕç вĕсем, юрать-ха çăвăр автансене вăхăтра хӳтерчĕç юлташĕсем.

Лентă ярса çивĕтленĕ хĕрача тетте чулсем йăлтăртатса выртакан савăтăн кантăк стени çумне çырсə хунине асăрхарĕ те:

— Шăпланăр-ха, шăпланăр! Тĕлĕнмелле пĕлтерӳ!— терĕ тантăшĕсене.

— Мĕн?

— Пĕлтерӳ? — ыйтрĕç пĕр харăс.

Тусĕсем лăплансан, лешĕ вулама тытăнчĕ:

«Моряк пичче, çак савăтри тинĕс чечекĕ сире вĕçĕ-хĕррисĕр сарăлса выртакан хăватлă та юратнă Хура тинĕсĕре аса илтертĕр.

Ял пионерĕнчен».

Чăр-р пăхса илчĕç пионерсем пĕр-пĕрин куçĕнчен.

— Кам илсе килсе лартнă ку пĕчĕк тинĕсе? — ыйтрĕ çырнине вуласа панă хĕрачиех. Шăп. Никам та «Эпĕ!» тесе, мухтанса, сăмсине каçăртакан пулмарĕ.

Вожатăй та пĕлеймерĕ. Вăл палăк патне килмен ачасене аса илме тăрăшрĕ. Çук, никам та юлман. Тĕрĕссипе шутласан, парне илсе килнĕ ача паян хăйне палăртманни вожатăя килĕшрĕ. Килĕшмесĕр, дружинăра унашкал ача пурри савăнтарать. Вăл вĕçкĕн, çăмăлçакскер мар, сăпайлă тата тӳсĕмлĕ, ĕçе юратакан, çынна хисеплекен, хăй те паттăр çын пулма ĕмĕтленекен ача.

Татти-сыпписĕр калаçрĕç, тавлашрĕç пионерсем пĕр-пĕринпе парнене хак панă май. Шухăша путакансем те пулчĕç. Амсанчĕç ĕнтĕ пĕчĕк тинĕс хуçине. Тата мĕнле

арçын ача тинёсе курма ан ёмётлентёр? Моряк чунлисем сахал мар-çке ушкăнра. Вăйлă хумсем çийён хăватлă караппа ишесси илёртмест-и вара хёрӳ чёреллисене?..

Нумайччен калаçнă хыççăн ачасем саланчёç килёсене. Анчах ниепле те манаймарёç палăк умёнчи пёчёк тинёсе. Ирхине те, каç кӳлём те килсех тăчёç вёсем кунта. Çук, нихăçан та пёчёк тинёсён шывё пăтраннине асăрхамарёç, тёпёнчи тетте чулсем те витёнмерёç юшкăнпа. Тусан пёрчи те ӳкмест шыва варалама. Е моряк вăркăш çилпе пёр чёлхеллё? Çӳлтен çӳп-çап вёçсе ансан, у-у-ф! вёрет пулё айккинелле çил ачийё.

Уйăх та иртрё вёренме тытăннăранпа. Пёр ирхине шкула пырсан ним кётмен туман çёртен ачасем пёчёк тинёс хуçи тупăнни çинчен хыпар илтрёç. Никам та шутламан. Пурăнать çын ним сас хурасăр, унтан сасартăк чапа тухать, палăрать. Пăх та кур, тёлёнмелле мар-и ёнтё?

Пёчёк тинёс хуçи — Кантратти. Кам шутланă-ха вăл çавнашкал тавçăруллă, маттур ача тесе? Чёмсёр, çынпа калаçмасть. Кёнекешён вара чунне пама хатёр. Кирек хăçан та пилёкри чён пиçиххи хушшинче унăн кёнеке.

Амăшёпе çеç пурăнать Кантратти. Çулла урам тăрăх йытă хăваласа ан çӳретёр тесе, амăшё ăна кӳршёри Иван мучие пулăшма кётӳ кётме янă. Çӳренё вара вăл фермă ёнисене çитерсе колхоз уй-хирё, вăрман катисем тăрăх.

Кантратти пёчёк тинёсе мёнле туни çинчен ачасем шкулти илемлё литературă кружокё кăларса тăракан алăпа çырнă журнала вуласан пёлчёç. Унта Кантратти çырнă калав пур. Ёненмесен, уçăр çав журнала, тупăр калавне. Акă вăл —

«ЁМЁТ ЮППИ»

Пур-ши ытти ачасен ёмёт? Пёлместёп, калаçман никампа та. Ман ёмёт питё пысăк. Çитменнине пёрре çеç мар, темиçе — юплё-юплё. Пур юппинче те пулса кура-

тăпах. Ним кĕтмен çĕртен пурнăç мана сасартăк ĕмĕтĕн пĕр юппи çине кăларса тăратрĕ. Çӳрерĕм те вара. Чунăм киленчĕ.

## МАЛТАНХИ КУН

Ку кун ялтан тухса кайман эпĕ. Анчах çак кун пуçланчĕ те.

Çу каçипех Иван мучипе çӳресе çав тери хăнăхса çитрĕм ăна. Тек унсăр самант та пурăнассăн туйăнмастчĕ. Тем те пĕлет вăл, итлеме çеç ан ӳркен. Пуринчен ытла Мишша ывăлĕ çинчен калаçать. Аçтан ан калаçтăр ĕнтĕ, кил-йышĕнче пĕртен пĕр çын ун. Вăл та пулин аякра пурăнать — Находкă хулинче. Çĕршыв картти çине пăхсан, вăл хула инçетри хĕвелтухăçĕнче, Япони тинĕс хĕрринче ларнине куратăн. Пысăк порт вăл, унта тинĕс карапĕсем кĕреççĕ. Мишши океан тăрăх ишсе çӳрекен карап капитанĕ, таçти çĕршывра та пулать имĕш.

Кăнтăр апачĕ хыççăн ĕнесене Эль шывĕ хĕрринчи тапăртан кăлартăмăр та Йĕклĕ çырмине кĕртсе ятăмăр. Утă çулса пуçтарнă хыççăн кунта калама çук хӳхĕм курăк шăтнă. Сĕткенлĕ курăка ĕнесем мăшлатса çиеççĕ. Тараканни çук кĕтӳре. Çавăнпа та Иван мучипе иккĕн пĕрле çырма хĕрринчи тĕмеске çине вырнаçрăмăр.

— Кантратти, тытăн-ха,— пуçне сĕлтсе кăтартрĕ вăл ман пиçиххи хушшинчи кĕнекене,— леш капитанĕ мĕнле унта, пурнать-и?

Эпир унпа Жюль Верн çырнă «80 пин километр шыв айĕн» кĕнекене вулаттăмăр. Ăна, иккен, шыв айĕнче кимĕпе пĕччен ишекен, ватăлса çитнĕ чирлĕ капитан пурнăçĕ пăшăрхантарать.

Иван мучи эххĕм! эххĕм! ӳсĕркелесе чĕртнĕ чĕлĕмне ĕмме тытăнчĕ. Эпĕ кĕнеке уçса вулама майлашса лартăм. Çăвар та уçма ĕлкĕреймерĕм, çурăм хыçĕнче «Ух!» терĕ пире хăратса. Ялт! çаврăнса пăхрăм. Шурă карттус тăхăннă çын тăра парать. Паллаймарăм.

— Ай тӑрах, кам пулчӗ ара ку? — тет Иван мучи. Анланаймарӑм, ун сасси шӳтлӗн, тӗлӗннӗн тухрӗ.

— Иван мучин путсӗр ывӑлӗ — Мишша! — пулчӗ лешӗн тавӑрса каланӑ сӑмахӗ. Унтан тӳсеймерӗ, «атте!» тесе кӑшкӑрса ячӗ те мучие ыталаса илчӗ.

— Нумайлӑха-и, ывӑлӑм? — аранах ыйтрӗ мучи куççулӗ витӗр.

— Пур-ха вӑхӑт санпа калаçмалӑх, ан кулян.

Иван мучипе ывӑлне çав тери ӑсатас килчӗ яла, килне. Мӗнех вара, кӗтӗве чиперех çӳретсе фермӑна çитереттӗм. Ахалех шанмаççӗ. Пуринчен ытла ывӑлӗ килӗшмест.

— Қаçченех сирӗнпе пулатӑп,— терӗ çеç. Хӑй хӑлат çунатне сарнӑн аллисене хӑлаçларӗ.— Тӑван уй-хирӗн тутлӑ сывлӑшӗпе кӑкӑра уçӑлтарас килет. Ачашлаччӑр сарӑ кӑвак чечексем куçӑма. Тахçанах курман, мӗн тери тунсӑхларӑм.

— Хӑм-м, темччен аташса çӳремеççӗ ӑна, киле килсех тӑраççӗ,— хушса хучӗ мучи.

— Эх, атте, атте, час-часах килсе тӑрӑттӑм та, анчах океансемпе тинӗссем ытла анлӑ; тухса çеç кай, ним мар çулталӑк иртет.

— Вуçех таврӑнсан та...

— Халь тин ӗнтӗ тинӗссӗр пурнаймӑп, аттем.

Сӑмах татӑлчӗ, çинçе çӗртен çип татӑлнӑнах. Пӗр хушӑ шӑп лартӑмӑр. Унтан Мишша пичче мана пуçласа курнӑн куçне хӗссе пӑхрӗ те ӑшшӑн йӑл кулса ыйтрӗ:

— Қам ачи ку?

— Наçтук кинӗн ывӑлӗ — Қантратти.

— Наçтук инкен? Ас турӑм.

Ун сассинчен вӑл мана пачах пӗлменнине чухларӑм. Иван мучи çавӑн пеккине сыхласа çеç тӑрать. Май пур чух тӑрӑхласа илмесен канӑçне çухатать тейӗн. Пуçларӗ:

— Эккей, тавçӑрусӑр, моряк моряка палламасть.

Вăл темле тинĕсре те ишсе çӳренĕ. Вун пилĕк çулхи капитан та ун тусĕ.

Ывăлĕ ним тупса калаймасть. Ашшĕне ĕненнĕ пекех туйăнать. Тинĕсре эпĕ кĕнеке геройĕсемпе çеç пулатăп, ниушлĕ çавна ăнланмасть. Вăл ман куçран ыйтуллăн пăхать: «Чăнах-и?» — тет-ши. Эпĕ именнипе пуçа чикрĕм.

— Саламлатăп! — терĕ капитан мана çурăмран лăпкаса.— Савăнатăп пирĕн йыша хастар моряк хушăннишĕн. Ан пăшăрхан, паян тип çĕр, ыран — тинĕс. Кӳр аллуна.

Тăсрăм сылтăммине. Ух! Чăмăртарĕ те вара, пĕр-пĕрин çумнех сыпçăнчĕç пӳрнесем. Илтнĕччĕ Иван мучиренех: алла хытă чăмăртакан сын — ырă кăмăллă, шанăçлă. Эпĕ темшĕн питĕ хĕпĕртерĕм.

Ашшĕпе ывăлĕ калаçчăр ĕнтĕ тăраниччен. Ĕне хăваланçи пулса, айккинелле пăрăнтăм.

### ЫРĂ ÇАВРА ÇИЛ

Эпир Мишша пиччепе поезд çинче. Пĕчĕк пӳлĕм. Купе, теççĕ ăна. Çӳлти сак çинче выртса пыратăп. Ман айра çемçе вырăн: ансăр тӳшек, шурă простынь. Сăпкари евĕрех туятăп хама. Ярăнтарать. Юрă та пур. Ăна поезд урасисем юрлаççĕ. Кĕвви ытла та пĕр майлă: тăкăр, тăкăр, тăкăрр... Итле-итле куç хупаххисем хупăнаççĕ. Эпĕ куçа ирĕксĕрех чаратăп. Пăтара çакăнса тăракан карттуса курсан, ыйăх сирĕлет. Мĕнле карттус манăн! Моряксен! Ăçта каятăп? Каласан ĕненме май çук. Кăнтăра, Хура тинĕс хĕррине. Вă! ăçта. Мĕнле пулса тухрĕ-ха ним кĕтмен-туман çĕртен? Шухăшласан, хама хам ĕненместĕп. Тĕлĕкре мар-ши тесе, темиçе хут та питрен чĕпĕтрĕм. Ай! ыратать. Эппин чăнахах та каятăп. Ĕç çапла çаврăнса килчĕ, йĕркипе калам.

Кĕтӳ кĕртнĕ хыççăн Иван мучисем патне кайрăмăр. Пăхатăп — сĕтел çинче темле çимĕç те пур. Ку ывăлĕн

кучченеçĕсем. Мана та шутарчĕç сĕтел хушшине. Сăйлаççĕ, ăна та кăна астивсе пăхма хушаççĕ. Пуринчен ытла мана пулă килĕшрĕ. Халиччен илтмен ун ятне: «баракуд» тет-и? Ах тутлă. Çиетĕп, çиетĕп... Мучи сăмахĕ ман хăлхана та кĕмест, тем калать вăл ывăлне таттисыпписĕр. Эпĕ çаплах пулăпа айланса ларатăп. Чылайччен лартăм. Вара сĕтел хушшинчен тухса алă çурăм. Сиссе те юлмарăм, мĕншĕн Мишша пичче тăрса чăматанне уçрĕ пулĕ? Унччен те чулмарĕ, ман хул пуççи çине темĕскер йалг! ывăтрĕ. Ярса тытрăм. Ай-уй, ара ку кĕпе-иç! Кăвак çухавли, хĕррипе икĕ шурă йăрăмли. Çанă сулли те — çавах. Лайăххăн куç хывма та ĕлкĕреймерĕм, татах тем ывăтрĕ ман ытама. Э-э, тавçăрса илтĕм. Матроссем кĕпе айĕнчен тăхăнса çӳрекенни — йăрăм-йăрăмли — телняшкă текенни.

— Қапăрлан-ха, Қантратти,— сĕнет Иван мучи,— ял ачисене пĕрре кĕвĕçтер.

Йăпăр-япăр хывса ывăтрăм çири тĕс кайнă кĕпене. Мишша пичче парнеленисене тăхăнтăм, малтан йăрăм-йăрăмлине, вара кăвак çухавлине.

— Ай тăрах, каснă-лартнă моряк, виççе çĕлесен те кунашкал шăп пулас çук,— мухтать Иван мучи, кулarах. Унтан сасартăк тутине пĕрчĕ, куçне чарчĕ тем усал япала курнăн. Қаллех хĕсрĕ куçне тем виçнĕн. Вара тин сăмах хушрĕ:

— Ах! шел, ах! шел. Лентăллă карттус çитмест, аттушăн халех карап çине лар та Эль тăрăх яра пар! Иш!

— Эль тăрăх пăрахут мар, кимĕ те пĕвелесен çеç ишет,— терĕм.

— Ишĕччĕ-ха пăрахучĕ те,— парăнмасть мучи.

— Карттус çитмест эппин? — терĕ Мишша пичче, чăматанĕнче тем пăтраштарса.— Тупатпăр. Акă вăл карттусĕ тата кĕске шăлавар.

— Кĕске шăлавар? — тĕлĕнчĕ мучи.— Ай-ай-ай! Моряксем кĕске шăлавар тăхăнаççĕ-и?

— Юнгăсене юрать.

Ĕнтĕ мĕн парнелени пурте ман çире. Пĕри те тепри çавăркаласа пăхаççĕ мана. Эпĕ ятуланса, чиперленсе кайнинчен тĕлĕнеççĕ.

— Ат, кала ĕнтĕ ăна чăваш ачи, тесе,— ырлать мана мучи.

Хам тăрăххăн пăхатăп. Шел, пысăк тĕкĕр çук, йăлтах курăттăм. Аса илтĕм, килте куç кĕски çук чух, анне çĕнĕ тутăр çыхсан чăп шыв тултарнă витре умне пырса тăратчĕ, йăлт! çеç пăхса илетчĕ. Хăвна ытараймасăр пăхса тăрсан сăн каять имĕш. Эпĕ те тӳсеймерĕм, ыткăнтăм тĕпел кукрине. Ав витре. Вăшт! пăхрăм. Шывĕ тĕпĕнче çеç, çавах та куртăм сăнăма. Чăнах чипер. Пит пачах улшăннă. Урама тухсан ачасем паллĕç-ши? Виркĕнес ак тăкăрлăка, пĕлсех тăратăп, унта ачасем лапталла выляççĕ... Çук, вăтанатăп çын куç умне курăнма. Ку тарана çитсе те кĕске шăлавар тăхăнса курман. Эпĕ çеç мар, ытти ачасем те ялта кĕске шăлаварпа çӳремесççĕ. Малтанлăха кил хушшинче уткаласа çӳресе хăнăхмалла. Тепĕр тесен, çĕнĕ тума эпĕ Октябрь уявне тăхăнса каятăп. Унччен арчанах чиксе хуратăп.

Мĕнле шухăшлană, ун пек пулмарĕ. Çывăрса тăрсанах Мишша пичче мана хăй парнеленĕ тума тăхăнма хушрĕ. Илĕм-тилĕмпех ялтан тухса кайрăмăр. Пире никам та хирĕç пулмарĕ. Чӳречерен куракансем, тен, паллаймарĕç.

Э-э, калама ас туман та. Қаçхине çапла калаçу пулчĕ:

— Ыран курорта тухса каятăп,— терĕ Мишша пичче, савăннине пытармасăр.

— Чим-ха,— чарчĕ ăна ашшĕ.— Илсе кай Қантраттине хăвпа. Тĕнче куртăр. Ялтан ниçта тухса курман вĕт ачи. Ас пур, мĕнле кĕнекесем вулать.

— Лайăх канаш,— тет ывăлĕ, алă çупнă пек икĕ аллипе çатлаттарса. Унтан мана ыталаса илчĕ те ыйтрĕ: «Қилĕшетĕн-и манпа Хура тинĕс хĕррине пыма?»

Ыйтать тата. «Аюк» теме ухмах-и эпĕ.

Аннене часах çавăрчĕç. Малтан хирĕçкелерĕ. Хăраса тăтăм. Килĕшрĕ. Ха, ун ачи мар-и эпĕ?

Çапла, пурнăçăма ырă çавра çил пырса кĕчĕ те айĕнçийĕн çавăрчĕ, мана килтен илсе тухрĕ.

Поезд çил кастарса малалла, малалла ыткăнать.

## ТУ ВИТĔР ТУХСАН

Ывăнма пĕлмест пирĕн поезд. Ăçти кăна хуласене кĕрсе тухмарĕ-ши? Пăртакçă тăрса сывлăш çавăрать те каллех малалла.

Хĕвел эпир вăраниччен нумай малтан тухнă ĕнтĕ, хĕртсе пăхма тытăннă. Çăвăнса шăлăннă хыççăн ирхи апата лартăмăр. Проводници сĕтел çине вĕри пылак чей лартса хăварчĕ.

Сасартăк пирĕн поезд çĕр ăшне чăмрĕ. Вакунта тĕттĕм. «Ой!» сас тухса кайрĕ ман, хам сисмен çĕртенех.

— Ан хăра, туннель,— тет мана Мишша пичче. Ту витĕр шăтарса тунă çулпа пыратпăр.

— Ĕнер кăна тӳрем вырăнпа чупатчĕ пирĕн поезд,— терĕм,— ниçта пĕр сăрт-ту, çырма-çатра курăнмастчĕ.

— Украинă çĕреччĕ вăл, çатма пек тикĕсчĕ.

Пĕр ту витĕр тухрăмăр. Малта темĕн чухлех вĕсем.

— Кавказ тăвĕсем, шăллăм, кур,— тет Мишша пичче.

Акă мĕнле иккен вĕсем, шĕвĕркке тăррисене пĕлĕтелле тăснă çынсем пекех йышпа пурăнаççĕ. Шкулта учительницă пире карттă кăтартнă. Сăртсене мĕншĕн-ха хăмăртарах, хĕрлĕпе сăрланă? Çавăнпа та мана хĕрлĕ пылчăк юхса тăнăн туйăнатчĕ. Вырăнта пĕрре те ун пек мар иккен. Вĕсем хурарах симĕссĕн курăнаççĕ.

Поезд çул суйланăн е унталла, е кунталла пăрăнать, каллех туннеле кĕрсе каять. Çапла чылаях вăхăт иртрĕ. Унччен те пулмарĕ, Мишша пичче кăшкăрса ячĕ:

— Тинĕс!

— Ăçта?

— Кил кунта!

Эпӗ сулахай енчи чӳречерен сӑртсене пӑхса пыраттӑм.

Чупса пытӑм Мишша пичче патне. Пӑхрӑм кантӑкран, анчах тӳрех ним те ӑнланмарӑм, ҫывӑхрах янкӑр тӳпе курӑннӑн туйӑнчӗ. Сӑнарах пӑхрӑм. Ой! Мӗн курнине ӗненместӗп. Ниушлӗ тинӗс ҫакнашкал! Шыв! Тастанах сарӑлса выртать, вӑл, ҫине кантӑк витнӗн, ҫутӑ сенкерӗн курӑнать. Тинӗс ҫийӗн куҫ лерелле, лерелле шӑвать. Мӗн тейӗн? Вӑл тӳпепе пӗрлешнӗ. Кунта ҫывӑхра мӗнле? Пӑхатӑп, пирӗн поезд ҫыран хӗрринчех чупать иккен, пилӗк-ултӑ утӑм та пулмасть пулӗ. Мӗнле ҫыран ку, атьсемӗр? Мана тӳрех хамӑр ял ҫывӑхӗнче юхса выртакан Эль шывӗ аса килчӗ. Унӑн ҫыранӗсем сип-симӗс курӑкпа витӗннӗ. Чечексем пуҫ таяҫҫӗ. Ҫеҫкисем хӑшӗсем шыва перӗнсех лараҫҫӗ вара. Тинӗс? Мӗнлескер япала ку? Ешӗл курӑка юратмасть-и? Ҫыранра шакӑр-р шап-шур ҫаврашка чулсем выртаҫҫӗ. Вӑт тӗнче!

Вакун кантӑкне аялалла шутарса антартӑмӑр. Айяй! Мӗнле калаҫать иккен тинӗс хӑйӗн ҫыранӗпе. Чӗлхи вара питӗ тӗлӗнмелле: шӑкӑр-р, шӑкӑр-р, чаш-ш! чаш-ш! Калӑн, мунча чулӗ ҫине шыв сапрӗ, тесе.

Эпӗ чӳрече умӗнчен хӑпма пӗлмерӗм, ҫаплах тинӗс ҫине пӑхатӑп. Хӑш-пӗр тӗлте темшӗн поезчӗ ҫыран хӗррине пӑрахса тинӗсрен пытанать, иҫӗм ҫырли уйӗсем урлӑ каҫать. Туннель ӑшне те кӗрсе тухать. Ӗнтӗ тӑтӑшах чарӑнма пуҫларӑмӑр.

— Курортлӑ хуласем,— тет Мишша пичче.

Пӗр хулара станци ҫурчӗ ҫине ҫырнине вуларӑм: «Сочи». Илтсе ку хула ҫинчен. Анчах та эпӗ вакун чӳречинчен питӗ сахал куратӑп. Ав илемлӗ йывӑҫсем.

— Пальмӑсем,— ӑнлантарать пичче.

Урамрах ӳсеҫҫӗ кунти пальмӑсем, пирӗн енче вара пӳлӗмре ҫеҫ.

Сочи хыҫҫӑн миҫе хут чарӑнтӑмӑр-ши, шутласа пымарӑм.

— Хатĕрлен, шăллăм, çитессинче пирĕн тухмалла,— асăрхаттарчĕ Мишша пичче.

Моряк костюмне тăхăнтăм. Анчах та хам пăшăрханатăп.

— Сисмесĕр иртсе кайсан?

— Хула ятне пĕлетпĕр-иç,— лăпкăн калать пичче.

— Ялан манса каятăп.

— Гагра.

Ķаллех туннеле чăмрĕ поезд. Куçа хупрăм, пур пĕрех ним те курăнмасть. Тĕттĕм. Çĕр айĕнчен тухрăмăр. Ой, ку айккинче çап-çутă. Хĕвел хавассăн пăхать. Куç умне тӳрех хула тухса тăчĕ. Тем тесен те çакă ĕнтĕ эпир анса юласси. Тинех поезд чарăнчĕ. Хыпалансах вокзал çурчĕ çинче çырса хунине шыратăп. Тĕрĕс. Ав «Гагра» тесе çырни. Эппин тĕрĕсех анса юлатпăр.

## ПЫСĂК ЧАНА АСА ИЛТЕРЕТ

Поездран анса юлтăмăр, йĕркеллех темелле. Перрон çинче мĕн чухлĕ çын! Пасарти пекех хĕвĕшет. Пирешкелех çул пĕлмеççĕ-ши? Эпир кăшт айккинерех супрăмăр та чарăнса тăтăмăр. Мишша пичче чăматанне çĕре лартрĕ те пирус чĕртсе ячĕ. Темшĕн пирĕн çине пĕри те тепри пăхать, пăшăлтатса илеççĕ.

Хура мăйăхлă çӳллĕ арçын хĕремесленсех кăшкăрать, такамсене чĕнет. Нумай та вăхăт иртмерĕ, шкул ачисем кăйсен учительне сырса илнĕн, ун тавра халăх пухăнчĕ... Тем ăнлантарать. Талпăнчĕç вара таçталла.

Асăрхарĕ пире те мăйăхли. Аякранах кăшкăрчĕ:

— Эй, моряксем! Аслипе кĕçĕнни! Сирĕн хăш санаторине каймалла?

Вăл иккен «Челюскинец» санаторирен, çынсене кĕтсе илме поезд патне тухнă. Пирĕн те унтах каймалла.

Вокзал хыçĕнче пысăк автобус тăрать. Эпир те унта кĕрсе лартăмăр. Çыннисем питĕ хаваслă. Мăйăхли шӳт-

лет, лешсем ахăлтатсах кулаççĕ, сăмахпа тем перкелешеççĕ. Çавсене итлесе пырса сисмерĕм те эпĕ: те аякка кайрăмăр, те çывăха.

— Çитрĕмĕр! — терĕç.

Чӳречерен пăхрăм. Автобус пысăк хапхаран чаплă çуртăн картишне кĕрет. Анлантăм. Санатори текенни çакă ĕнтĕ.

Мишша пичче мана:

— Лар кăмпа айне,— терĕ,— эпĕ путёвкăна кĕрсе парам.

Чутах кулса яраттăм, ара кăмпа айне çын лараймасть ĕнтĕ. Эпĕ иккĕленсе тăнине курчĕ те вăл аллипе тĕллесе кăтартрĕ:— Ав çав сулхăна.

Тĕрĕс-мĕн, чăн-чăн шăна кăмпи. Анчах та вăрманта ӳсекенни мар, çын ăсталани. Юпа тăррине çаврашка çине пир карнă та ун айне сак лартнă.

Йĕри-тавра пăхкаласа ларатăп. Мана тинĕс те курăнать, тусем те курăнаççĕ. Вĕсем çывăхрах, ал çеç тăс. Тĕнче... Мĕнле хатарлă вăл кунта, пĕрре те пирĕн ёнчи пек мар. Темшĕн кунта тавралăх мана пысăк чана аса илтерет. Тĕпĕнче — шыв. Хĕррипе, айлăмсенче — виноград тĕммисем, мандарин йывăççисем, кипариссем, пальмăсем, фикуссем тата ытти йывăçсем ӳсеççĕ. Шывĕ вĕрекен сĕт пек тухса тарасран, ăна çӳллĕ-çӳллĕ сăртсем картласа тăраççĕ.

Пĕлĕтленсе килчĕ. Ту тăрринчен кăвак пĕлĕтсем шуса анаççĕ. Тӳпе ишĕлет тейĕн. Хăвăрт куçаççĕ хăйсем. Ăçта васкаççĕ-ши? Тен, вĕсем те тинĕсе курасшăн? «Кăмпа» тăррине йĕкел ӳкнĕн, пăт-пат! пăт-пат! туни илтĕнчĕ. Çумăр çума тытăнчĕ.

— Кантратти,— илтрĕм эпĕ хам ята. Мишша пичче чĕнет иккен. Чупса пытăм.— Тусăм, сана санаторине илмеççĕ.

— Ман каялла каймалла-и ĕнтĕ?

— Хыпăнса ан ӳк-ха эсĕ тӳрех. Хваттер тупăнчĕ, юнашарти çуртрах. Хуçи кунта санаторинче ĕçлет.

Хваттер мана питĕ килĕшрĕ: таса, хăтлă. Çапах та килте ларма кичем. Çумăр çăвать пулин те тула тухрăмăр.

— Қаяр, тинĕс хĕрне,— чĕнет Мишша пичче,— тинĕс сывлăшĕ питĕ усăллă, тет, сывлăха çирĕплетет.

Утрăмăр. Тинĕсĕ сывăхрах. Унăн хумĕсем çырана пыра-пыра çапни илтĕнсех тăрать: ш-ш-шав! ш-шав!

— Ой-ой! Асса кайнă!

Қу сăмахсене пичче тинĕс пирки каларĕ ĕнтĕ.

Эпир юри сулхăн пулма тунă шыв яман брезент аслăк айĕнчи сак çине кĕрсе лартăмăр. Çынсем кунта татах пур. Пĕри те шарламаççĕ, пурте асса кайнă тинĕс çине пăхаççĕ. Эпĕ те меллĕрех вырнаçса карлăк çине тайăнтăм та тинĕсе тинкерме тытăнтăм. Мĕн хăтланмасть ку тинĕс? Чăнах урнă. Шавлать, ӳхлетет! Хумĕсем пӳрт çӳллĕшĕ хăпарса мăкăлтатса чупса килеççĕ те çырана мĕн пур вăйран кĕрс! кĕрс! çапаççĕ. Шыв пĕрчисем ман пата çити сирпĕнеççĕ. Чылай шалта тем курăнать. Çыран хĕрринчен çĕмĕрсе илсе тухнă кĕпер вăл, те путнă карап хăми-пĕрени. Ярăнать çав япала хум çинче. Вăл ни путмасть, ни çыран хĕрне çитеймест.

Çапла, тинĕс асать. Чим... Мĕншĕн унăн асмалла, тулашмалла? Ăна никам та кӳрентермен-çке. Ăнланмаççĕ çынсем, тен, пачах урăхла, унăн савăнăçĕ пулĕ? Хĕпĕртенипе ташлать-тĕр... Лере, тинĕс пĕлĕтпе пĕрлешнĕ тĕлте, вăл тăхлан тĕслех — сăрă. Қăшт сывăхарах вара кантăк хытарма шĕвек лăканать тейĕн. Çийĕ унăн — кăваккăн-симĕссĕн курăнать. Қуç кунталла шăвать. Тинĕс хăймаланса кăпăкланать, шуралать. Сĕт вĕресе хăпарнăн çырана чаш-ш! туса çитет те ух! ухлатса çӳлелле çĕкленет, гранит хӳме çийĕн пĕрхĕннĕ шыв пĕрчисем сывлăшра шурă чечек çыххи евĕр чĕнтĕрленеççĕ те ялт! каялла сикеççĕ.

Вĕçĕ-хĕррисĕр пăхса ларма пулать тинĕсе, пур-пĕрех тăранаймастăн.

Тинĕс ташланипе килеисе çынсем мĕн пирки пăшăрханнине те асăрхаман. Хăлхана «Путать!» тенĕ сасă пырса кĕрсен, чăлт-чалт пăхкаларăм унталла-кунталла. И-их! Тинĕсре çын. Пуçĕ çеç курăнать. Те ишет, те çук. Анчах та ăна тинĕс чуччу ярăнтарать: пĕр унталла, пĕр кунталла шутарать.

— Çăлмалла ăна! — терĕç.

Çиййĕнчех паттăрĕ те тупăнчĕ. Вăл пÿрт пысăкăш йăваланса килекен хум ăшне сикрĕ, ăна витĕр шăтарса тухрĕ. Ишрĕ вара путаканни патне. Лешĕ аякрах та мар. Тинĕс ытамĕнчен çăлса тухрĕ-тухрех вĕт.

Чылай вăхăт иртрĕ. Тинĕс кăшт лăпланнă пек. Те мана çеç çавнашкал туйăнать.

Тинĕс хĕрне анма гранит хÿме çумĕпе картлаç хунă. Унта хăма çине çырса патак лартнă: «Шыва кĕме юрамасть, хăрушă». Мĕн тейĕн, тупăнчĕ харсăр çын. Картлашкапа тинĕс хĕрне анчĕ вăл. Пăхма çамрăках та мар хăй.

— Тинĕс вăйне виçесшĕн,— терĕç.

Мĕнле виçет-ши? Пĕлес килнипе çав çын çинчен куç илместĕп. Хайхискер тем çÿллĕш йăванса килекен хума хирĕç мăнаçлăн тăчĕ, юпа евĕр хытса. Унччен те пулмарĕ хум çынна чаш-ш пырса çапрĕ, хăйĕн ăшне пĕтĕрсе чикрĕ, пытарчĕ. Вара çынна улăм çÿппине çĕкленĕн чуллă çыран хĕрне лач! тухса пăрахрĕ, хумĕ хăй çавăнтах каялла чакрĕ. Тарчĕ! Мĕскĕн çынĕ ни вилĕ, ни чĕрĕ выртса парать.

Тăн пырса кĕчĕ пулас этеме, вăл тепĕр хум пырса çитиччен тăват уран картлашка патнелле упаленчĕ.

— Тав ту тинĕсе, ĕнсÿне хуçса яманшăн,— терĕç каллех çынсем.

### АСЛАТИ

Шăпăр-р, шăпăр-р çăвать çумăр. Йывăр пĕлĕтсем аялтанах куçаççĕ. Çанталăк тĕттĕмленнĕçемĕн тĕттĕмленет. Кĕр-кĕр-р аслати авăтрĕ. Çат! çатлаттарчĕ.

— Мĕне аҫа ҫапрĕ вара? —текелесе, ун-кун пăхкаларĕҫ брезент лупас айĕнче ларакансем. Ҫунни-мĕн курăнмасть.

Кĕр кĕрлĕрĕ каллех аслати. Кăшт вăхăт иртрĕ те ҫат! ҫат! ҫат! тутарчĕ виҫĕ хут. Кунашкал аҫа ҫапнине нихăҫан та илтмен. Мана ҫеҫ мар, ыттисен кăмăлне те каймарĕ.

— Ак тамаша, тинĕсре аҫа та урăхла ҫапать-и? — текелерĕҫ.

Нумай-и, сахал-и вăхăт иртрĕ, татах вăраммăн та ҫиллессĕн кăлтăртатса кĕрлерĕ аслати. Хĕреслĕ-мĕреслĕ ҫиҫĕм ялтăрарĕ. Ҫывăхрах тупăран пенĕн ҫат! ҫат! ҫат! ҫатлаттарчĕ виҫĕ хут умлă-хыҫлă.

Аслати авăтни, пĕр харăс виҫҫĕллĕ аҫа ҫапни, тинĕс ахăрни чуна вирелле тăратрĕ. Ҫынсем пĕри те тепри лупас айĕнчен тухса чупрĕҫ. Хăрарĕҫ пулас. Эпир те юлмарăмăр, кайрăмăр.

## НОДАРИ

Тĕлĕкре манпа кушак ҫури вылять пек. Ах, ура тупанне чĕрнипе кăлт-кăлт тиверткелесе илет. Эпĕ ăна хăваларăм, тытса та ывăтрăм. Вăл пур тикенеклех ҫыпăҫать те ҫыпăҫать. Ҫиллĕм тулса килнĕ енне тапрăм урапа.

«Охо! Ку ача усал иккен!» тенине илтрĕм. Ҫав вăхăтрах ура тупанне хыттăн кăна кăтăкланине туйрăм. Куҫ чарах уҫăлчĕ, ыйхă та сирĕлчĕ. Умра кăтра пуҫлă ача, ман тантăш, тăра парать. Хура куҫĕ йăлтăрать кăна.

— Кам кирлĕ сана? — тетĕп.

— Эсĕ.

Тăрса лартăм. Кил хуҫисем ăҫта-ши? Ун-кун пăхкалатăп.

— Юрĕ-ҫке ĕнтĕ, кӳтсе ан лар,— татах сăмах хушать, кантăк каррине уҫнă май, ҫак ача. Пӳлĕм ҫап-

çутă çуталса кайрĕ. Хам çаплах шухăшлатăп: мĕн кирлĕ-ши ку кăтра пуçа?

— Тăр, тăр! — хистет мана татах арçын ача.— Çăвăн та апат çиме лар.

Мĕнле этем ку? Ним те ăнланмастăп. Вăл тавçăрса илчĕ пулас.

— Çак кил хуçи ачи эпĕ,— тет.— Мана Нодари тесе чĕнеççĕ, грузин. Сан ятна пĕлетĕп — Кантратти.

Çак сăмахсене илтсен ялт! çеç ура çине сиксе тăтăм та çăвăнма тытăнтăм.

Нодари пĕлтерчĕ:

— Пиччӳ аннене апатшăн укçа тӳленĕ.

Ĕнентĕм, пĕр сăмахсăр апат ларса çирĕм.

— Халĕ ĕнтĕ тинĕс хĕрне каятпăр.

— Пиччене чĕнме тивет,— сăмах хушрăм эпĕ.

— Ăна кĕтсен, хĕвел те сĕвĕрлет. Çынна ирхи хĕвел пайăрки çеç усăллă.

Каллех ăна ĕнентĕм. Чупрăмăр. Эпĕ тинĕсе аякранах куртăм. Паян вăл пачах урăхла. Талккăшпех пĕр тĕслĕ вăл. Çутă симĕс пĕркенчĕкпе витĕннĕ: лăпкă, хумĕсем сарăлса тикĕсленнĕ. Аякра шурă пăнчă. Мĕн-ши? Мана темшĕн тӳрех Лермонтов сăвви аса килчĕ те эпĕ такмаклама тытăнтăм:

Пĕччен парăс шуррăн курăнать
Кăвак тинĕс тĕтри ăшĕнче...
Мĕн инçе, ют çĕрте вăл шырать?
Мĕн хăварнă вăл хăй килĕнче?

— Парăс мар, чарлан вăл,— тет Нодари.

Чарланĕсем йышлăн-мĕн. Эпĕ темшĕн айккинче пĕччен ишсе çӳрекеннине асăрханă.

Антăмăр тинĕс хĕрне. Нодари те, эпĕ те урана ним те тăхăнман. Утма кунта питĕ хĕн. Чул урана ыраттарать.

— Ай-уй! — кăшкăрса ячĕ Нодари.— Пăх-ха: чарлан выртать шыв хĕрринче.

— Вилнĕ тем?

— Шел, мазут юххине лекнĕ. Тĕкĕ мазутпа варалансан, шыв витĕр çапать, вара чарлан вилет. Часах ăна пуçтарса илсе каяççĕ.

Эпир шыва кĕмелли вырăна иртсе кайрăмăр.

Тинĕсе тӳрех кĕтĕмĕр. Ķунта ярса пусма тата кĕнгерех. Пĕр чул мăклашки ура пӳрнине ыраттармаллах пырса çапăнчĕ, чутах йĕрсе ямарăм.

Ёнтĕ шывĕ пилĕк таранах.

Нодари самант та тăхтамарĕ, шыв çине ярт тăсăлса выртрĕ, пăлт! çаврăнчĕ, çурăм çинче ишме пуçларĕ, вара тем вăхăтра чаш-ш шыва чăмрĕ. Пулă ку ача. Эпĕ шалалла тепре ярса пусрăм. Шывĕ тăп-тăрă! Тĕпĕнче мĕнле илемлĕ чулсем выртаççĕ. Тĕлĕнтермĕш! Пулăсем! Пĕри ман чĕркуççине лексе кăтăклантарчĕ: те курăк тесе çыртса пăхасшăнччĕ-ши? Пĕшкĕнсе алла чикрĕм, пулли тарчĕ. Пĕшкĕнсе татах сăнатăп. Ķурăк тавраш пачах ӳсмест. Юшкăн та çук. Чулсем çеç. Çул тума сарнăн выртаççĕ. Тепĕр пăхсан, кавир евĕрлех туйăнать, ытла чăпар, илемлĕ. Ķашни чулăн хăйне расна тĕс. Эпĕ шывра тăнине те манса кайнă пулас, пĕр чулне илме лăпчăнтăм. Çăвара шыв кĕчĕ. Ай, тăварлă. Чулне илтĕм-илтĕмех. Шап-шурă, яп-яка, хур çăмарти пысăкăш. Ķунашкал чул сайра хутра хамăр хиртех тупăнать. Ваттисем ăна темшĕн аçа чулĕ, теççĕ.

Нодари каялла ишсе килчĕ. Эпĕ чул тытса пăхса тăнине курсан тĕлĕнчĕ пулас.

— Мĕн эс? Пăрах. Халиччен чул курман-и? Атя, иш!

Эпĕ кунашкал вĕçĕ-хĕррисĕр сарăлса выртакан шывра ишсе курман та кăшт шикленетĕп. Мĕн пулать те мĕн килет, тапрăм та урапа шыв çине ишсе тухрăм. Çăмăл! Путас тесен те путаймăн!

## ПАТША ХĔРĔН ПУШМАКĔ

Килте апат çисе пуçтарнă хыççăн Нодари шăлавар кĕсйинчен сĕгел çине ик-виç ывăç чул кăларса хучĕ, пĕри те аçтăрхан майринчен пысăкки çук.

— Тинĕс хĕрринче пуçтартăм.

Унтан Нодари сарлака тĕплĕ кĕленче савăт кăларса лартрĕ. Чей чашки çине хĕвел çаврăнăш çăвĕ ячĕ. Шкапран шурă мамăк татăкĕ илсе килчĕ.

Иксĕмĕр те сĕтел хушшине лартăмăр. Нодари мамăк татăкне çу çине пуçать те чул катăкĕсене сăтăрма тытăнать. Чулсем çулланнă хыççăн чĕрĕлнĕнех туйăнаççĕ, çав тери илемленеççĕ. Хура тĕслисем йăлтăртатаççĕ.

Эпĕ чул купине сиркелетĕп. Қашнинех тытса пăхас килет. Пурте çерçи çăмарти пек çаврака мар. Ак мыскара! Пĕри чăн-чăн пушмак. Тĕпĕ шурă, çийĕ кăвак.

— Мĕн ку? — ыйтатăп.

— Тинĕс патши хĕрĕн пушмакки,— терĕ Нодари.

Аларан ямастăп ăна. Ара, купара татах пур пушмаксем: пĕчĕкки, пысăкки, вăтамми... Тинĕс патшин миçе хĕр-ши?

— Ку мĕне аса илтерет? — тет Нодари, хăй аллинчи чула кăтартса. Тӳрех, ним шухăшласа тăмасăрах тавçăрса илтĕм: кипкеленĕ ача. Хăмăр утиялпа чĕркенĕ те шурă пиçиххипе урлă пирлĕ ярса çыхнă.

— Қунта канма килекен хĕрсем,— тет,— хăйсене килĕшекен чул татăкĕ тупаççĕ те шăтарса çинçе çиппеле тиреççĕ. Вара ăна чи хаклă йышши ахах вырăнне хурса çакса яраççĕ ума.

Сĕтел çинчи чул катăкĕсем пурте хĕвел çаврăнăш çăвĕпе çăвăнчĕç. Малалла мĕн кĕтет-ши? Нодари вĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн илсе йĕркеллĕ хурса тухрĕ кĕленче савăт тĕпне. Унтан стаканпа шыв илсе килсе ячĕ. Ĕçĕ пĕтмен-ха. Қĕленче савăтне çĕклерĕ те картишне тухрĕ. Эпĕ те ун хыççăн утрăм.

Қантăк умĕнчи сак çине лартрĕ савăта Нодари. Хĕвелĕ çакна çеç кĕтнĕ-ши, пуçларĕ шевлине вылятма! Қĕленчери чул катăкĕсене чун кĕчĕ, çăлтăрсем евĕр йăлтăртатаççĕ. Шутсăр тĕлĕнсе пăхатăп. Мана вĕсем чечексем пек туйăнаççĕ. Çапла. Тем тесен те тинĕс чечекĕ.

### ТИКЕНЕК ÇЕÇПĔЛ МАР

Илĕртӳллĕ çав тинĕс. Хăпса каяймасăр шалт хăшкăлан. Мĕн чухлĕ çын шывра ишеççĕ, кайăк-хурла чӳхенеççĕ. Хĕвел çинче хĕртĕнсе выртакансен шучĕ çук.

Нодари тинĕс чечекĕ кăтартнăранпа эпĕ пачах канăçа çухатрăм. Шав çӳретĕп шыв хĕррипе каллĕ-маллĕ. Çипрен юхса тухнă шăрçана пуçтарнăн чул катăкĕ суйлатăп. Чулĕсем чăннипех илĕртеççĕ. Пĕрне, теприне пĕшкĕне-пĕшкĕне илетĕп. Ывăç тупанĕ çине хурса ытарайми пăхатăп. Купа ӳсет те ӳсет. Хурсан пăтавкка тулать. Анчах Нодари курчĕ те кулса ячĕ:

— Сан вакун тара илме тивет,— тет, ман чулсене суйлама тытăнса.— Тинĕс хĕрринче чул нумай пулĕ. Асра тыт, тикенек çеçпĕл мар, ăна ачаш та илемлĕ супăнь чечекĕпе те арпаштарма юрамасть.

### ПУЛĂ КĔТĔВĔ

Кăнтăр апатне каяс умĕн тинĕс хĕрри вара пушанса юлать. Хĕвел хĕлхемĕсем ку вăхăтра усăллă мар тет-и. Усăллă мар çеç пулни юрĕ-ха, сиенлĕ, имĕш, çыншăн. Çавăнпа та ĕнтĕ канакансем хӳтлĕхе пуçтарăнаççĕ. Эпир те Нодарипе сăрт çинчи сулхăн лупасĕ айне кĕрсе лартăмăр. Тин çеç пухнă чулсене суйлама пикеннĕччĕ, тахăшĕ кăшкăрса ячĕ.

— Пулă кĕтĕвĕ!

Эпĕ ялт! хыçалалла çаврăнса пăхрăм, нимле кĕтӳ те çук.

— Ăçта? — теççĕ çынсем.

— Ав, ав! — тет манпа юнашар ларакан çын, аллипе тинĕс еннелле тăсса.

Унталла-кунталла тинкерсе пăхатăп. И-и-и! курах кайрăм. Эй! Мыскараçă тинĕс. Хăй çурăмĕ çине чăк! чăк! чăк! çурла лартса тухнă. Хурçăункăсем тăрăх хĕвел шевли вăй вылять, йăлтăр-ялтăр çуталать. Çапах та мĕн амакĕ-ха? Э-э-э, тавçăртăм. Пулăсем выляççĕ-мĕн, сывлăшра сике-сике илеççĕ, авăнса, кĕмĕл пĕкĕ

евӗр куранаççӗ. Мӗн чухлӗ пулă! Ушкӑнпа çӳреççӗ, мур илесшӗсем. Эх! Тытасчӗ пӗрне çеç е сӗрекепе сӗрсе кӑларасчӗ пӗр харӑс. Ҫлӗртрӗç сынсене, çыран хӗрнех çывхарчӗç, вара тем тӗлте шыва кӗрсе çухалчӗç.

### ШУРӐ ТАКАСЕМ

— Тинӗсре паян шурӑ такасем чупаççӗ,— терӗ Нодари ирхи апата ларнӑ чух.

Шыв çӗр пичӗ мар, унта мӗнле така чупма пултартӑр-ха? Ҫавӑнпа та:

— Ан суй,— терӗм.

Нодари темшӗн тутине çеç пӑркаласа илчӗ.

Ҫӑп-кап хыпкаларӑмӑр та шыва кӗме тухса вӗçтертӗмӗр.

Ав тинӗс. Чӑнах, ун çийӗнче паян шурӑ такасем йӑпӑрр-йӑпӑрр чупаççӗ те шыв тӗпне янк! анса каяççӗ.

— Нодари-и, мӗне пӗлтерет ку?

— Хӑшӗ?

— Ара, шурӑ такасем?

— Эсӗ те çав,— пуçне пӑркаласа илчӗ Нодари,— хумсем кӑпӑкланса чупаççӗ. Ку вӑл çанталӑк пӑсӑласса пӗлтерет.

Тинӗс каллех хӑйӗн чуллӑ çыранне хумсемпе кӳпкеме пикеннӗ.

### МЕДУЗӐ

Ишсен-ишсен шывран тухма ура çине тӑтӑм. Сасартӑк умра хӑрушла япала куранса кайрӗ. Шари-и кӑшкӑрса ятӑм хӑранипе. Нодари ваштах ишсе пычӗ.

— Медузӑ! — терӗ вӑл хавас сасӑпа.— Ан хӑра, çыртма çӑварӗ çук унӑн.

Нодари ал лаппипе тӗрте-тӗрте ӑна çырана кӑларчӗ.

Ҫынсем пухӑнчӗç. Тахӑшӗ ачасене ярӑнтармалли хӗрлӗ хырӑмлӑ, шурӑ тӗплӗ капрон кимӗ илсе пычӗ. Кимме шыв тултарчӗ те унта медузӑна ячӗç.

Халиччен эпĕ нихăçан та медузă курман. Вăл каснă-лартнă кукар яшкине шăнтса тунă студень. Лĕнчеркке. Хăй улăм шлепке манерлĕ. Хĕррисем тĕрĕллĕ, сенкер хăю тыттарнă пекех. Шлепке ăшĕнче купăста пуçĕ ÿс-нĕн тулса тăрать.

— Мĕнпе тăранса пурăнать? — ыйтрăм эпĕ.

— Вĕтĕ пулăсемпе. Нăйлакана лекет те пулă, майĕ-пен ирĕлет,— тет Нодари. Қăшт тăхтасан вăл çапла хушса хучĕ: — Тинĕсре тăвăл пуçланать, хÿтĕ вырăн шыраса кунта килнĕ вăл.

Қăнтăрлаччен кимĕре пурăнчĕ медузă, вара ăна тинĕсе ячĕç.

## ХĔВЕЛ КАЛАÇНИ

Мишша пиччесен санаторийĕн алăкĕ çумĕнче иртен-пех пĕлтерÿ çакăнса тăрать. Унта çанталăк пăсăласси çинчен çырнă. Ку хыпар канакансене самаях пăшăрхан-тарчĕ. Пурте хĕвеле саваççĕ. Çавăнпах ĕнтĕ çутçанталăк вăрттăнлăхĕ пирки кам мĕн пĕлет, çавна калать.

— Чимĕр-ха, хĕвел мĕнле анĕ,— терĕ тинĕс хĕррин-чи паркра сак çинче Мишша пиччепе иксĕмĕр хушăра ларакан Нодари те.

Эпĕ часах мĕн илтни-калаçнине манса кайрăм. Парк-ри кÿлĕре акăшсем ишсе çÿреççĕ. Çавсене куçран вĕ-çертместĕп. Мăйĕсене пĕкĕ пек авнă. Эк, тытса çакса ярăттăм тин! тин! шăнкăрав.

— Ай-ай, хĕвел сукмакĕ çине пĕлĕт катрамланса хăпарчĕ,— илтрĕм эпĕ Мишша пичче сăмахне.

— Ăçта? — хам кĕтмен çĕртен ыйтрăм.

— Ав, тинĕспе пĕлĕт пĕрлешнĕ çĕрте,— тет Нодари.

Пăхрăм та куртăм: тĕтрепе витĕннĕ, кăвак сăн çапнă вăрман ларать.

Çапла пĕлтертĕм те.

— Тинĕсре мĕнле вăрман ÿстĕр! — ахăлтатса кулса ячĕ тантăшăм грузин ачи.— Талккишпех пĕлĕт карса илнĕ.

Лайăхрах сăнарăм. Чăнах-иç. Кăвак пĕлĕт тĕнче илемне хăй хыçне тĕплĕн пытарма хапсăннăн систермесĕр, ерипен çутă тӳпенелле шăвать.

Хĕвелĕ пур пĕрех хăй çулĕнчен пăрăнмасть, анать, анать... Темшĕн паян вăл чăкăт кăшăлĕ пек пĕчĕккĕ мар, ялкăшса та çуталмасть. Ун çине темĕн чул пăхсан та куçа йăмăхтармасть. Тĕсĕ — пахчари мăкăнь чечекĕ евĕр кĕрен çеç. Мана вăл ытама кĕми пысăк глобус пек туйăнать.

Акă курăнман ырă аласем сарă ывăс кăларса вырттарчĕç. Тек ан, ан лар çакăнта этеме савăнтарса...»,— терĕ-ши. Мĕн ыррине ăнланать. Хĕвел ывăс çине ларчĕ. Умра пăхса ытармалла мар картинă: «Хĕвел ывăс çине ларса канать». Вăхăт кăшт çеç иртрĕ, вăй илчĕ те хĕвел. Вăл паттăррăн малалла шума тытăнчĕ: анать, анать.

Кăвак пĕлĕт катрамĕ хĕвел çывхарасса çеç кĕтнĕ, тейĕн, ăна ваштах хăйĕн хĕвне хупрĕ. Çутçанталăк палармаллах тĕксĕмленчĕ.

— Шел, хĕвел пĕлĕт çине ларчĕ. Ыран çумăр кĕт ĕнтĕ. Экскурсие каяймастпăр,— кулянчĕ Мишша пичче.

— Анваскăр-ха унашкал шухăшлама,— пӳлчĕ Нодари.

Тĕлĕнтермĕш. Шĕл кăварлă хĕвел пĕлĕт шăналăкне виçĕ тĕлтен ирĕлтерсе шăтарнă та каллех пирĕн çине йăл! кулса пăхать. Пĕр харăс виçĕ хĕвел, тейĕн.

— Илтетĕн-и, Кантратти, Хĕвел калаçать! — пĕлтерчĕ мана Нодари.

— Çу-у-у-ук, илтместĕп.

Вăл: «Ан кулянăр, ыран каллех сирĕнпе выляма тухатăп»,— терĕ.

Кунти ачасем хĕвел чĕлхине те ăнланаççĕ-ши вара? Анчах сăмах ваклама никамăн та вăхăт çук, пурте хĕвел мыскарине сăнатпăр.

Кăвак пĕлĕт хĕвеле пытарса хума хал çитерейменĕ. Лешĕ ишсе тухрĕ-тухрех. Ав епле вăл ылтăн пан улми евĕр çакăнса тăрать. «Куртăр-и, эпĕ çĕнтертĕм»,— терĕ

пулас, хăйне пĕтĕм çавракăшпе кăтартса. Вара пат! татăлса ӳкрĕ шыва. Путмарĕ. Вăл ерипен, киленсе кĕрет кĕмĕл тинĕсе. Çурри курăнми пулчĕ. Вара йăлтах пытанчĕ. Эпĕ ăнлантăм: ав мĕншĕн ирхине тинĕс шывĕ ăшă иккен, тин сунă сĕтех, лĕп кăна.

— Уяр çанталăк пулать ыран,— терĕ Нодари, учĕнăй пекех.

**ТУ ТĂРРИНЧИ КӲЛĔ**

Мишша пичче ирех пырса тăратрĕ.

— Ту тăрринчи кӳлле курма пыратна? — тет.

— Ан йĕкĕлте-ха, ту тăрринче мĕн кӳлли пултăр? Унта ăмăрт кайăк ларать-тăр.

— Нихăçан та, ним те ĕненмест çак сирĕн Кантратти,— питлеме тытăнчĕ мана Нодари.— Тĕнчипе паллă «Рица» кӳлли вăл. Ăна курман çын, çын та мар.

Ним каласа тӳрре тухайман енне шăла çыртрăм вара.

Уçă автобус çине лартăмăр. Шел, Нодари пирĕнпе пымасть. Амăшĕ ăна пахчари виноград сапакисене çыхма хушнă.

Тапрантăмăр. Тытăнчĕ шофĕрĕ машинине хăвалама! Çилпе ăмăртать. Енчен енне вăш-ш! сулăна-сулăна илетпĕр. Çулĕ кунта, тур çырлак, акăш-макăш кукăрмакăр. Унччен те пулмарĕ кĕтĕмĕр-кайрăмăр сăртсем хушшине. Çӳлелле пăхма хăрушă, халь-халь пуç тăрне ишĕлсе анассăн туйăнаççĕ. Пырсан-пырсан тоннель ăшне чăматпăр.

Тавралăх кунта çав тери тĕлĕнмелле. Йĕри-тавра шĕвĕр тăрăллă тусем. Хăшĕсем çав тери çӳллĕ, пĕлĕте перĕнеççĕ. Шурă калпаклисем те пур.

— Тинĕспе «Рица» кӳлли хушшинче ултă çĕре яхăн тĕрлĕ йывăç-курăк ӳсет,— ăнлантарать Мишша пиччесен санаторинчи культурник.— Тинĕспе кӳлĕ хушши — хĕрĕх километр ытларах çеç.

Малалла ыткăнать пирĕн автобус. Ак тамаша, ту

хысакӗнче хамӑр тӑван — юман! Кунта та мӗн тери вӑл мӑнаҫлӑн кашласа ларать. «Тайма пуҫӑм!» — саламлатӑп ӑна.

Пирӗн автобус сӑрт аякӗпе хывнӑ асфальтланӑ шоссе ҫулӗпе шав ҫӳлелле хӑпарать.

— Халӗ эпир чи ҫӳллӗ сӑрт тӑрринче. «Чебоксарский карниз» теҫҫӗ кӑна,— пӗлтерет культурник.

Мишша пичче ун ҫине иккӗленсе пӑхса илчӗ.

— Мӗнле апла? — тет вӑл.— Ара ку ман тӑван республикӑн тӗп хули ячӗ.

Анчах та лешӗ ним те калама пӗлмерӗ. Шел. Тен, кунта Шупашкар чӑвашӗ ҫак хаяр сӑрта парӑнтарнӑ? Тен... Эпӗ шухӑша путатӑп. Килтен инҫетре ҫӳренӗ чух хамӑра ҫывӑх тӑракан япалана аса илтерекеннине тӗл пулсан паха-ҫке.

Сасартӑк кӑшкӑрашнине илтрӗм: «Ҫитрӗмӗр!», «Ҫитрӗмӗр!» Тӑна ҫухатнӑн ним те ӑнланмастӑп. Чӑлт-чалт пӑхкаларӑм. Курах кайрӑм — кӳлӗ! Шухӑш вӗҫтерсе пынипе хам ӑҫтине те маннӑ. Чӑнахах та мӗн! Кӳлли — сӑрт тӑрринче. Пӗртен пӗр кӳлӗ юхса ҫухаласран хӑранӑн, йӗри-тавра речӗпех салтаксем пек, тусем каҫӑрӑлса тӑраҫҫӗ.

— Ку кӳлӗ, атьсемӗр,— тет культурник,— тинӗсрен тӑхӑр ҫӗр аллӑ метр ҫӳллӗшӗнче выртать.

Кунта, «Рица» кӳлӗ хӗрринче, пӗр вырӑнта тӑраймӑн. Тӗрткелешеҫҫӗ. Халӑх ярмӑрккӑри пек хӗвӗшет. Пурте кӳлӗ курма килнӗ. Лавккасем те тем чухлех. Ҫыран хӗрринче — пысӑк ҫурт. Ресторан вӑл. Гостиницӑ та унтах, тархасшӑн, пурӑн хӑналанса.

Курса ҫӳретпӗр. Шӑрӑх. Нодарие ӗнер хӗвел тӗрӗсех каларӗ-мӗн. Ҫумӑр ҫӑвасси асра та ҫук. Пӗлӗт татӑкӗсем шуҫкаласа ҫӳреҫҫӗ, анчах хӗвел вӗсене, хӑй патне ҫывхарсанах, ирӗлтерсе сапаласа ярать. Пӑчӑ пулин те, кикам та шыва кӗрекен ҫук. Кӳлӗ шывӗ сивӗ-мӗн.

— Пӑрахутпа ярӑнма каятпӑр, пирӗннисем, пуҫтарӑнӑр! — пӗлтерчӗҫ.

Ҫăпăр-ҫапăр кĕрсе те ларчĕҫ ҫыннисем. Пăрахучĕ илемлĕ, тăпăл-тăпăлскер. Иш-иш, пысăк кимĕ, леш вĕҫне ҫитиччен. Эпир — чăвашран килнĕ хăнасем. Пирĕн йăлтах курас килет ҫутă тĕнчен тĕлĕнтермĕшне.

## КАУ-КАУ АЧИСЕМПЕ

Мишша пичче хыпарларĕ пире:

— Пуҫтарăнăр. Сухумине упăтесен питомникне экскурсие каятпăр.

— Мĕн-мĕн? Питомник? — тĕлĕнтĕм эпĕ.— Пирĕн те шкул пахчинче питомник пур. Анчах та унта ачасем йывăҫ ӳстереҫҫĕ.

— Кунта учĕнăйсем упăте ӳстереҫҫĕ,— хушса хучĕ Нодари ҫавăнтах.

— Учĕнăйсен урăх ĕҫ ҫук пулĕ ĕнтĕ упăте ӳстернисĕр пуҫне,— кулса ятăм.

— Ҫаллех ĕненмест,— тарăхрĕ Нодари.— Ӳстереҫҫĕ. Питех пĕлессӳ килсен, калам. Тухтăрсем опыт тăваҫҫĕ вĕсемпе.

Ӳсрĕм, ҫак ҫула ҫитрĕм, анчах чĕрĕ упăтесен ушкăнне курма тĕл килменччĕ-ха.

— Халĕ курăн акă. Сухуминче вĕсем субтропикă пахчинче пурăнаҫҫĕ. Упăтесем ăшша юратаҫҫĕ. Кунта вара Африкăри пекех. Сухумире ҫулталăкĕпех ҫулла. Юр ҫумасть, хĕл лармасть, кăра ҫилсем вĕрмеҫҫĕ.

Акă эпир пăрахут ҫинче. Пирĕнпе пĕрле экскурсие Нодари те пырать. Ҫавăнпах пулас, мана ҫав тери хавас.

Пирĕн пăрахут хумсем ҫийĕн ишет. Ҫаснă-лартнă чуччу ярăннă пекех туятăп хама.

— Ҫу мĕн,— тет Нодари, ман ҫине пăхса,— лере, тинĕс варринче ишсен, пуҫу ҫаврăнма тытăнать.

Сухуми хули тинĕс хĕрринчех-мĕн. Ун хыҫĕнче те сăрт-ту.

Пăрахутран ансан тӳрех упăтесен питомникне ҫул тытрăмăр.

Упăтесем пурăнакан пахчана ҫӳллĕ хӳме тытнă. Ой!

Мĕн чухлĕ упăте! Шел, вăрахчен сăнаса тăма тивмерĕ, пире чĕнсе илчĕç. Хапхаран кĕтĕмĕр. Умра — упăтесен урамĕ. Анчах та пўртсем вырăнне пралук карса тунă читлĕхсем. Упăтесене хупнă унта, путех, çынсене кăтартма.

Пĕр читлĕх умĕнче çынсем кĕпĕрленсе тăраççĕ, хăйсем тем пит ахăлтатсах кулаççĕ.

— Каллех Пединапа Хачина камитленеççĕ ĕнтĕ,— тет Нодари.— Пĕркун та вĕсем çынсене култарса пĕтерчĕç.

— Қамсем вара вĕсем?

— Қау-кау ачисем. Чи малтан унта кайăпăр. Вĕсене курассишĕнех килтĕм паян.

Алăран çавтăнса чупрăмăр. Нодари çынсене тĕрткелешсех малалла шăвать. Эпĕ те юлмастăп. Читлĕх умнех пырса тăрăнтăмăр.

— Ой, ой, мĕн хăтланать Педина! — кăшкăрса ячĕ Нодари.— Ташлать! Қам шлепке тăхăнтартнă ăна? Хачина, аллуна лайăхрах, вăйлăрах çуп! Қау-кау, эсĕ мĕн ўрĕк-сўрĕк? Ачусем савăнаççĕ.

Сăмах кам çинчен пынине эпĕ тин ăнлантăм, читлĕхри упăтĕсем пирки-иç.

Шлепке тăхăннă пĕчĕк упăте хуçкаланать кăна. Артист. Акă ăçта цирк. Тепри, йĕкреш хăраххи пулас, тунката çине ларнă та ура тапса алă çупать.

Тахăшĕ апельсин ывăтса пачĕ. Артисчĕ ваштах ярса тытрĕ. Вăл шлепкине хывса тăванĕн пуçĕ çине пуссах лартрĕ. Чеескер. Хăй пĕр кĕтесе вырнаçрĕ. Васкасах шуратать апельсинне. Сĕткенне ĕмет. Тепри йынăшма тытăнчĕ. Йĕрет ĕнтĕ вăл. Амăшĕ пурне те сăнать. Ывăлĕ çапла хăтланни килĕшмерĕ ăна. Пĕччен апельсин çиекеннине юнать.

— Педина! Мĕнле намăс мар сана çапла ĕмĕтсĕрленме! — ятлать Нодари,— пар Хачина йăмăкна!

Илтмест. Амăшĕ юнанине курмăш пулать. «Мана ташланăшăн панă, хамах çиетĕп...» — тет пулас. Амăшĕ

тӳсеймерӗ, чупса пычӗ те ҫупса ячӗ Пединӑна. Лешӗ апельсинне ҫӑварне хыпрӗ те кашта тӑрӑх тӑрмакласа ҫӳлелле хӑпарса кайрӗ. Тыт ӑна. Мӗн тӑвӑн ӗнтӗ итлеменскерне. Ваттин ирӗксӗрех кӳреннӗ Хачинана йӑпатмалла. Шлепкине хывса ывӑтрӗ. Чуп тӑвать. Арки ҫине лартса ҫурӑмӗ тӑрӑх ҫӑмне уҫкаласа пыйтине шырать. Артисчӗ ҫӳлтен пат! печӗ апельсин татӑкӗпе, хӑй кулать. Хачина кутӑнлашса тӑмарӗ, апельсин татӑкне тупса ҫиме тытӑнчӗ.

Педина ҫӳлте пӗр кашта ҫинчен теприн ҫине сиккелерӗ. Пӗччен кичем. Анчӗ. Амӑшӗ амӑшех ҫав. Ашкӑнаҫҫӗ пулин те, ачисене часах каҫарать. Иккӗшне те аркӑ ҫине пуҫтарса ытамларӗ.

Кӗтмен ҫӗртен йӑлт-ялт ҫиҫӗм ҫиҫрӗ. Кӗр-р кӗрлерӗ аслати. Қау-кау йӗкрешсене хӑй ҫумне хытӑ пӑчӑртарӗ. Лешсем инкек-синкеке чухлаҫҫӗ-и? Тӗпӗр-тӗпӗр йывӑҫ вулли тӑрӑх тӑрмакласа улӑхса кайрӗҫ ҫӳлелле. Ашкӑнаҫҫӗ. Пӗр-пӗрне хӳринчен туртаҫҫӗ, ҫыртаҫҫӗ. Выляма ӑста мурсем. Ҫапла хӑтланни амӑшне тарӑхтарать. Вӑл та ачисем хыҫҫӑн йывӑн вулли тӑрӑх хӑпарать. Пединана тытса анать те вырӑна лартать. Унтан хӗрӗ патне. Ана тытса аннӑ ҫӗре лешӗ тӑрса тарать. Чистиех хӑшкӑлчӗ Қау-кау. Татах ҫиҫӗм ҫиҫет, татах кӗрлет аслати. Сехри хӑпнӑ упӑте ним тума пӗлмест, ӑшталанать. Ачисене хӑтарасшӑн. Хурлӑх тӳсмен ҫамрӑксем ӑнланмаҫҫӗ ҫакна, вӗсене выляса пултӑр.

Ҫумӑр сасартӑк витререн тӑкнӑн ҫума пуҫларӗ. Эпир хӳтлӗхе кайса тӑтӑмӑр. Нумайччен кӗтрӗмӗр, анчах уяртасси асра та ҫук. Упӑтесене курса ҫӳресси тарам, терӗҫ. Ирӗксӗрех каялла тавӑрӑнма ҫула тухрӑмӑр.

### ЮМАХ ТӖНЧИНЧЕ

Кунӗ паян кӑшт сулхӑн. Хӗвеле пӗлӗт кӑтрамӗсем хупӑрланӑ.

Эпир Адлерти кантӑк стеналлӑ аэровокзалта. Самолӗт кӗтетпӗр. Мишша пиччен ӗнер путевки вӗҫленнӗ.

Çирĕм тăвată кун иртрĕ сисĕнмесĕрех. Халĕ ĕнтĕ киле. Нодари те кунта. Пире ăсатма килнĕ вăл. Ĕмĕр манмалла мар пĕр-пĕрне, тесе сăмах татрăмăр унпа. Çыру çырса тăма килĕшрĕмĕр.

Аэродрома тухакан алăка уçрĕç. Халăх унталла хĕвĕнчĕ. Эпир те ура çине тăтăмăр.

— Тетте чулсем чикнĕ хутаçа манман-и эсĕ? — ыйтать Нодари.

Пĕлсе тăратăп пулин те, кутамкка кĕтессине хыпашласа пăхатăп, чул çаврашкисем алла лекеççĕ.

— Кунтах.

Юлашки хут пĕр-пĕрин куçĕнчен пăхса илсе алă паратпăр. Нодари юлать, эпир аэродрома тухатпăр. Япаласене илсе юлчĕç, вĕсене пирĕнсĕрех самолёт çине тиеççĕ-мĕн.

Пирĕн умра тăвată моторлă пысăк кайăк — «ИЛ-18».

— Ай-ай, хăватлă самолётпа вĕçетпĕр,— тет пĕри.

Пусма илсе пырса лартрĕç. Лётчиксем килчĕç. Пурте йĕркеллĕн хăпараççĕ. Çыннисем сахал мар, ăçта вырнаçĕç? Кĕтĕмĕр. И-и-и! мĕнле аслă кунта. Виçĕ пӳлĕм! Эпир вăтаçĕртине лекрĕмĕр. Ман вырăн шăпах чӳрече умĕнче. Савăнсах кайрăм. Чӳречи кăшăл евĕр çап-çаврака. Пăхатăп кантăкран, аэровокзалта Нодари тăнине куратăп.

Унччен те пулмарĕ, радиопа пире асăрхаттарма тытăнчĕç: пурин те пиçиххипе çыхăнса лармалла. Кино курнă чухнехи майлах. Умра та, хыçра та çемçе пукансем çине çынсем вырнаçнă. Ансăр экран çутăлчĕ. Унта та çав асăрхаттарнă сăмахсемех. Хушаççĕ пулсан итлемелле. Эпĕ те пукан çумне çирĕплетнĕ пиçиххипе пилĕкрен йăлмакларăм. Халĕ ĕнтĕ ӳкес тесен те ӳкеймĕн.

Кунта ĕçлекен хĕрсем — стюардесăсем канфет сĕнсе çӳреççĕ.

Самолёт тапранчĕ. Вĕçетпĕр. Урра! Халиччен самолёт çине ларса курманскер, хĕпĕртенипе ниçта кайса

кĕме пĕлместĕп. Мана темле çӳллĕ тăвайккинчен çунашкапа яр-р! ярăнса аннăн туйăнчĕ. Кăшт кăмăла лĕклентерет. Ку нимех те мар, тӳсме пулать. Кантăкран пăхатăп. Тусем хыçа юлаççĕ. Пирĕн айра кăн-кăвак çи виттипе пĕркеннĕ Хура тинĕс.

Эпĕ пăхса пыракан кантăк умĕнчех — ярт тăсăлнă самолёт çуначĕ. Пропеллерсем çаврăннине те куратăп. Ытла тĕлĕнмелле, шурă пĕлĕт кăтрамĕсем пырса перĕнеççĕ те явăнса, пĕрчĕкленсе иртсе юлаççĕ.

— Пиçиххине салтăр. Утса çӳреме те юрать! — пĕлтерчĕç радиопа.

Утса çӳреме? Чĕрем кăрт-кăрт кăртлатса илчĕ. Чăнахах-ши? Çăт-çат вĕçертсе ятăм пиçиххи йăллине. Тухрăм пукан хушшинчен. Эппин эпĕ калĕ сывлăшра ура ярса пусрăм.

Кинотеатр залĕнчи пекех кунта. Стенасем çумĕпе пукансен речĕ, варринче — кавир сарнă çул. Утатăп. Вĕçни ним те паллă мар. Каялла та, малалла та кайса килтĕм. Лётчиксем патнех çитесшĕнччĕ, анчах именни касать. Çынсем хаçат-журнал, кĕнеке вулаççĕ.

Курса çӳрекеленĕ хыççăн каллех хам вырăна таврăнтăм. Пăхатăп кантăкран. Ой! Пирĕн самолёт пачах урăх, юмах тĕнчине çитнĕ. Ытармалла мар тĕнче! Сенкер, сенкер тӳпере хĕвел ялкăшать. Пирĕн айра — шурă пĕлĕт. Сăнаса пынăçемĕн вĕсем мана пĕлĕт мар, пĕтĕм тĕнчипех пăр кăтрамĕсем куçнă пек туйăнаççĕ. Унччен те пулмасть юр капанĕсем ӳсе-ӳсе лараççĕ, сывăхрах чаплă кермен курăнса каять. Мĕн кăна пулса илĕртмеççĕ-ши шурă мамăк пĕлĕтсем?

— Эпир халĕ çичĕ пин метр çӳллĕшĕнче вĕçетпĕр,— пĕлтерет радиопа сасă.

— Ай-ай, çичĕ километр çӳлте! — тет Мишша пичче.

Тĕлĕкре мар-ши? Тутана вирлĕ çыртрăм. Ыратать. Апла пулсан, чăнахах та вĕçетпĕр ĕнтĕ. Ăçта-ши пирĕн тус-çĕрĕмĕр? Чĕвен тăрса аялалла пăхатăп. Шап-шур пĕлĕт карса илнĕ. Акă пĕлĕт çурăкĕ. Пăхрăм, ав — çĕр!

Симĕсси — вăрман, сарри — тыр-пул уйĕ, ĕнтĕ, тавçăратăп.

Каллех çĕр питне шурă катан пир хуплать, каллех уçăлать. Куратăп: те ял, те хула. Çурчĕсем шăрпăк коробки евĕр — пĕчĕккĕ.

— Юлташсем, апата хатĕрленĕр! — хыпарларĕ радист.

Ку самолёт çинче ларакансем халиччен те вĕçсе курнах пулĕ çав. Пукансен хыçĕнчи хутаçран тимĕр листи туртса кăларчĕç. Урлă хурса çирĕплетрĕç, сĕтел пулса та тăчĕ. Вара апат лартса пачĕç. Тутлă пулчĕ апачĕ.

Чашăк-тирĕксене пухса кайсан çурăмпа пукан хыçне тайăнтăм. Мĕншĕн тайăнтăм-ши? Ыт ахальтен мĕншĕн куçа хупрăм-ши?.. Куçа уçнă чух çынсем ĕнтĕ самолётран тухаççĕ. Улталарĕ мана ыйхă. Мĕн чухлĕ курмасăр юлтăм. Ахаль каламан çав ваттисем: çывракана пай çук.

**ТИНĔС ПĔРЧИ**

Киле эпĕ кутамкка йăтса пĕчченех таврăнтăм. Кутамккара ман хаклă япала — вак чулсем.

Мишша пичче Мускавран тӳрех Находкăна вĕçрĕ. Иван мучи ман çинчен куç илмест, ывăлне курнăнах пăхать.

— Иван мучи, вĕрентетĕн-и кантăк хашакĕ тума? — терĕм пĕррехинче кĕтӳ кĕртсе киле таврăннă чух.

— Ма кирлĕ вăл сана? — ыйтать ватă çын.

Шухăшăма каласа патăм.

— Ырă ĕç,— мухтарĕ вăл.

Эрне иртсен тăвата кĕтеслĕ кĕленче савăт хатĕр те пулчĕ. Ун тĕпне кантăр вăрри çăвĕпе сĕрсе çутатнă чулсене майлаштарса хутăм. Шурă чулсемпе эрешленĕ пилĕк кĕтеслĕ çăлтăр Иван мучие те килĕшрĕ.

Савăта шыв ярсан, чулсем чăннипех чĕрĕлчĕç.

— Чăн-чăн чечек! — тĕлĕнет старик.

— Тинĕс чечекĕ,— тетĕп.— Шел, Нодари курмасть. Қаярахпа пĕтĕмпех ҫырса пĕлтерĕп-ха ăна.

— Қайса парнеле моряка,— тет Иван мучи.— Чыс ту, хисепле. Вăл ăна тивĕҫлĕ.

Сентябрĕн пĕрремĕшĕнче, ир-ирех, хăватлă Хура тинĕсĕн пĕрчи палăк умĕнче хĕвелпе йăлтăртатма тытăнчĕ.



# ВУН ТӐВАТТӐ ТУЛТАРАС УМӖН

## ПИРӖН ТАНТӐШ САХАЛ

Микки ларнӑ автобус тапранса кайрӗ. Эпӗ кӑшкӑрса юлтӑм:

— Телейлӗ ҫул пултӑр!

Аллӑмпа суллатӑп. Чӗрем тухса ӳкесле талтлатать.



Ним тума аптранă енне пĕр вырăнтах тринк! тринк! сиккелесе илтĕм.

— Мĕн пулчĕ сана? — тĕлĕннĕн ыйтать Эва.

— Вĕçес килет, вĕçес! Ăнланмастăн-и эсĕ пирĕн тус ăçта кайнине?

— Ас ту, эсĕ çеç ăслă ĕнтĕ! Тупăннă! — мăрт турĕ те Эва, ман çумран пăрăнса чупрĕ хăй тĕллĕн.

— Чупах, чупах.

Çакăн пек чаплă, ĕмĕр асра юлмалли кун мĕнле тăртлатас килет?

Ăçта кайрĕ-ха пирĕн юлташ Микки? Комсомолăн районти комитетне. Мĕнле ĕçпе? Комсомол билечĕ илме. А-ăт.

Автобус часах курăнми пулчĕ. Вара эпĕ ниçта чарăнса тăмасăр вĕçтертĕм тӳрех Миккисен килне. Савăнăçлăн пырса кĕтĕм. Ашшĕ — Кузьма Афанасьевич полковник, ир-ирех пулин те, ĕçе тытăннă, сĕтел хушшинче çырса ларать.

Вăл кĕнеке çырать. Унăн пĕр кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Вăрçăра паттăрла çапăçнă çынсем çинчен çырать.

— Ну, мĕнле ĕçсем, Авель? — ыйтрĕ вăл.

— Асатрăмăр. Эва та пынă.

— Урăх ачасем çукчĕ-и?

Кам пултăр ĕнтĕ. Ялта пирĕн тантăш сахаллине лайăх пĕлет-çке.

— Вăрçă вăхăтĕнче çуралнăскерсем эсир. Çавăнпа сирĕн йыш сахал,— хушса хучĕ хăех.

Тĕрĕс. Эвăпа иксĕмĕрĕн çуралнă çул — пин те тăхăр çĕр хĕрĕх тăваттăмĕш. Микки вара эпирччен шăп пĕр çул пурăннă çутă тĕнчере.

**МИККИ БИОГРАФИЙĔ**

Этажеркă çинчен Кузьма Афанасьевич çырнă кĕнекене илтĕм. Анчах вулаймастăп. Ман шухăш юлташран хăпмасть.

Микки, Микки, мӗнле телейлӗ ача! Телейлӗ кӑна мар, пултаруллӑ вӑл. Ачасен кӑмӑлне хӑпартма, вӗсене ӗҫре ертсе пыма пӗлет. Ку чӑнах та тӗрӗс. Эпӗ — Миккин юлташӗ — Авель — ҫакӑн ҫинчен ӗнентерсех калатӑп. Кӑҫал хӗлле тӗлӗнмелле ӗҫ пуҫарса ячӗ вӑл. Эпӗ пулсан, ун пекки ҫинчен ӗмӗрне те аса илес ҫук.

— Эпир — пионерсем. Пирӗн яланах халӑх ырлӑхӗшӗн тӑрӑшмалла,— терӗ Микки пӗррехинче сборта, ачасем умне тухса.

— Тархасшӑн,— тавӑратпӑр ӑна.— Қам хирӗҫлет. Еҫ кӑна паччӑр.

— Апла пулсан, кӗҫӗр, урамра ҫын ҫӳреме пӑрахсан, пӗр вӑрттӑн ӗҫ тӑвӑпӑр.

— Мӗнле вӑрттӑн ӗҫ?

Темӗн чул ыйтсан та Микки шарламарӗ. Мӗн пур сӑмахӗ те ҫак ҫеҫ пулчӗ:

— Патне ҫитсен хӑвӑрах курӑр. Малтанах калатӑп,— питӗ пархатарлӑ ӗҫ. Ял-йыш тав туса ҫитерейме.

Ял-йыш... Тӗлӗнмелле. Мӗнле вӑрттӑн ӗҫ пулма пултарать? Ял-йыш тав тӑвать пулсан, мӗншӗн вӑрттӑн ӗҫ вӑл? Пирӗн шухӑш-кӑмӑлсене ку пӑчӑртасах лартрӗ. Ҫакнашкал илӗртмӗш япаларан камӑн пӑрӑнса юлас килтӗр.

Қалаҫса татӑлтӑмӑр: кашни килтех хӑй ҫути сӳнсен (ку ӗнтӗ ҫынсем пурте ҫывӑрма выртнине пӗлтерет), пирӗн шкул умне пухӑнмалла. Хамӑрпа тимӗр кӗреҫе е лум, е шӑпӑр илмелле. Ҫывӑрса юласран пилӗк ҫынран штаб уйӑртӑмӑр (мӗншӗн тесен пирӗн отрядри пионерсем пилӗк урамра пурӑнаҫҫӗ). Штаб начальникӗ — Микки. Ял лӑпланнине штабӑн сӑнамалла. Ачисене мӗнле систермелле? Штаб членӗсем шӑкӑртма илсе урам тӑрӑх шӑкӑртаттарса тухаҫҫӗ.

Эпӗ ӑна-кӑна кӗтмерӗм. Асатте ҫывӑрма выртсанах килтен ерипен тухса шӑвӑнтӑм. Манашкаллисем татах тупӑннӑ иккен. Шкул умӗнче — ҫур отряд. Чӳречерен йӑлтӑртатса курӑнакан ҫутӑсем сӳнсе те ҫитеймерӗҫ,

ачасем пухăнма та ёлкĕрчĕç. Никамăн та урам тăрăх шăкăртмапа çӳреме тивмерĕ.

Кĕтнĕ вăхăт çитрĕ. Эпир строя тăтăмăр. Кашнин аллинчех мĕнле те пулин ĕç хатĕрĕ. Колоннă тапранса кайрĕ. Ăна малта Микки ертсе пырать. Утатпăр, хамăр ăçта каяссине пĕлместпĕр. Çырма хĕрринелле пыратпăр. Умра—тарăн вара анса каякан пусма. Çырма тĕпĕнче хĕлле те, çулла та типме пĕлмен вăйлă çăл куçĕ палкаса выртать. Пĕтĕм ял-йыш шыв ăсма çакăнта çӳрет. Пĕртен пĕр çăл вăл пирĕн. Юрать-ха кăçал колхоз çынсене тарăн вара шыв патне анса хăпарма пусма туса пачĕ. Самаях çăмăлланчĕ.

Хайхи пусма патне çитсен Микки колоннăна чарчĕ.

— Ачасем, эпĕ сире çак картлашкасене тасатма илсе килтĕм. Куратăр-и, мĕнле тумхахланса кайнă? Хирĕçместĕр пулсан, ĕçе кӳлĕнĕр,— терĕ.

Тупата, маттур мар-и-ха ĕнтĕ Микки?! Эпĕ хам çак пусма тăрăх аннă чух миçе хут чикеленсе ӳкмен-ши? Витри унталла, кĕвенти кунталла сирпĕнет. Картлашки пăрлăран ӳкетĕн. Ун çине юр çăвать, витререн шыв чӳхенсе тăкăнать... Пусмана килсе тасатма ку таранччен никам та ăс çитереймен. Пирĕн юлташ Микки вара ăс çитернĕ.

Йышпа ĕç кал-кал каять. Эпир туххăмрах тасатса антăмăр. Ачасем тăвайман ĕç мар вĕт. Кашни пионера виçшер картлашка çеç тиврĕ.

Киле эпир пурте çĕкленнĕ кăмăлпа салантăмăр. Паха ĕç тунă хыççăн ыйхи те питĕ тутлă-мĕн. Ирхине анне калаçнине илтсе вăрантăм.

— ...Сăвап пултăрах вăл çынна. Çăл патне анмалли картлашкана тап-таса шăлса тасатнă.

Çакăн хыççăн пирĕн отряд утмăл картлашкаллă пусмана шефа илчĕ те ăна кун сиктерсе тасатса тăма тытăнчĕ.

Аслă çын мар-и ĕнтĕ пирĕн юлташ Микки?

Сборта автобиографине каласа пама тăрсан темшĕн пӳлĕнчĕ.

Вӑл хӑй ҫинчен хӑй те пӗлмест пулӗ. Кузьма Афанасьевич яла ачапа таврӑнсан пирӗн аннене Микки пирки ҫапла каласа панӑ: «Эпӗ ӑна вӑрҫӑ хыҫҫӑн ҫул ҫинче тупрӑм. Ашшӗ-амӑшӗсӗр тӑрса юлнӑ ача мӗн чухлӗ пулнӑ. Пирӗн ҫар чаҫӗ ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн хамӑр Тӑван ҫӗршыва таврӑнатчӗ. Машин чӳречи витӗр пӑхрӑм та, темлерен-ҫке, курах кайрӑм: ҫул хӗррипе ҫара уранлӑ хыткан ача тӑлпӑнса чупать. Хӑй вӗҫӗмсӗр тем кӑшкӑрать. Сӑмаххи илтӗнмест. Ун ҫумӗпе танксем кӗрлесе иртеҫҫӗ...»

Кузьма Афанасьевич вара машинне чарнӑ та адъютантне хайхи ача патне янӑ.

— Мӗскӗн, ашшӗне шырать,— пӗлтернӗ ачапа калаҫса килнӗ адъютант.

— Илсе кил ӑна ман пата,— хушнӑ полковник. Хӑй машинӑран тухнӑ та ачана хирӗҫ, ытамлас пек хулӗсене сарса, утнӑ: «Ывӑлӑм!— тенӗ вӑл.— Тинех тупӑнтӑн!» Лешӗ, ашшӗне шыраканскер, пӗтӗм чунтан ӗненнӗ. Ҫинҫе сассипе савӑнӑҫлӑн кӑшкӑрса, Кузьма Афанасьевич ытамне кӗрсе ӳкнӗ. Ӑна мӑйран ҫатӑрласа ярса илнӗ. «Атте!»— тенӗ вӑл ҫепӗҫ чӗлхипе. Ҫавӑнтанпа Микки — Кузьма Афанасьевич ачи. Мӗнле илемлӗ вӑл! Кӗрнеклӗ. Кам ӑна хыткан ача пулнӑ тейӗ.

Микки, хӗрелсе кайнӑскер, хӑйӗн автобиографине калама тытӑнчӗ:

— Эпир аттепе пурӑнатпӑр. Кӗтерук аппа пур тата. Яла эпир виҫӗм ҫул килнӗ.

Вӑл куна эпӗ нихӑҫан та манас ҫук. Вӗсене разъезда эпир Эвӑпа кайса илтӗмӗр. Ҫав кун пирӗн виҫҫӗмӗрӗн (эпӗ, Микки тата Эва) хушӑра ӗмӗр арканми туслӑх пуҫланчӗ. Тата аслӑ юлташ тупӑнчӗ. Вӑл ӗнтӗ — Кузьма Афанасьевич.

Ас тӑватӑп-ха, ӗмӗр тӑршшӗпе пӗччен пурӑнакан Кӗтерук кинемей ячӗпе сасартӑк ҫыру килчӗ. Пирӗн яла хыпар ҫитсен, ӑна ниепле те пӗр ҫӑвара хупса хӑвараймӑн. Усалли ут утланса ҫӳрет, теҫҫӗ ӗнтӗ ваттисем. Ырри те ҫаплах, килтен киле вӗҫсе кӑна ҫӳрет. Кӗтерук

кинемей çыравепе те çаплах пулчĕ. Илтсен пурте каçăхсах кайрĕç. Тĕлĕнтермĕш. Çĕнçырмари аппăшĕн тăлăх ўснĕ ывăлĕнчен. Вăл вăрçăччнех çарта пуранна. Пограничник. Вăрçă вăхăтĕнче полковнике çитнĕ. Фронтра аманнă. Кăкрине пульăсем шăтарнă. Госпитальсенче нумай выртнă. Çыруне таçтан аякран çырать. Вăл Кĕтерук аппăшĕнчен пурăнмаллипех йышăнма ыйтать. Пĕччен мар, усрав ывăлĕпе килет. «Хăйĕн çемйи çук-ши вара?» тĕпчет тепри. Пулнă. Арăмĕпе хĕрачине вăрçă тухнă кун чикĕ хĕрринче фашистсем пĕтернĕ.

Çак хыпара халăх хушшине сарма ыра çил ачисем хăйсем тăрăшрĕç темелле. Пуçланчĕ вара ватă кинемейĕн алăкĕ уçăлса хупăнма. Çула май текелесе, пĕри те тепри кĕрсе тухать. Хĕрарăмсем чăннипех хыпăнса ўкрĕç. Вĕсен пурин те тенĕ пекех мăшăрĕсем фронтран киле таврăнайман. Қалаçаççĕ те кашниех пуçне усса шухăша каять. Пĕр-пĕр лăпкă кун çапла упăшки киле таврăнассине пĕлтерсе хут ямĕ-ши?

— Мĕн ятлă вăл?— ыйтать пĕри.

— Куçук, теттĕмĕр. Ашшĕ Ахванис ятлăччĕ,— пĕлтерет Кĕтерук кинемей.

Полковник яла пурăнмаллипех куçса килме шутланăшăн савăнчĕç. Ара, ялта ватăсем, хĕрарăмсем çеç темелле, вăй питти арçынсем çукпа пĕрех. Фермă выльăхĕсене хĕрарăм пăхать, уй-хире хĕрарăм сухалать. Килекен çынна, аманнипе сывлăхсăрскере, колхоз ĕçне тухассах кĕтмеççĕ, хальхи вăхăтра ăс парса тăракан çын пулни те теме тăрать, теççĕ хĕрарăмсем. Пире те, ачасене, яла полковник килни çав тери интереслĕ.

— Анне, Куçук мĕншĕн килет? Ялта полковник мĕн тăвать? — ыйтать Эва амăшĕнчен.

— Саншăн вăл, хĕрĕм, Куçук мар, Кузьма Афанасьевич,— вĕрентет амăшĕ хĕрачине.— Вăл ахаль çын мар, полковник, тăнлă-пуçлă этем. Аманнă çыннăн юсанмалла. Ав сывлăшĕ мĕнле уçă пирĕн.

Кĕтерук кинемей мана, урампа иртсе пыраканскерне, кантăкран шаккаса кĕртсен çапла каларĕ:

— Авель, çыру çырма пулăшмăн-ши мана?— терĕ вăл.

Полковник патне çыру çырасси питĕ йывăр-çке. Пĕччен пултарайрас çук. Йăнăш мĕн çырсан намăса ăçта хурас? Хамăрпа пĕр класра вĕренекен Эвăна кайса чĕнтĕм. Вăл, тирпейлĕскер, хитре çырма пĕлет. Кĕтерук кинемей каласа тăчĕ, Эва çырса пычĕ. Кузьма Афанасьевича ывăлĕпех килме хушрĕ. Çыруне почтальона хамăрах кайса патăмăр.

Вăхăт самаях иртнĕччĕ çакăн хыççăн. Кĕтерук кинемей пирĕн пата пынă чухне эпир аннепе кĕлет пӳлмисене тасататтăмăр.

— Телеграммă илтĕм. Килеççĕ!— терĕ кинемей савăнăçлă сасăпа.— Лавпа сана ярасшăн эпĕ, Авель. Лашапа çӳренине куркаланă-ха сана.

Анне куçĕнчен пăхатăп. Вăл мĕн калĕ?

— Каять, каять. Ара, каймасăр, текех пĕчĕккĕ мар вĕт, вунна çитнĕ,— тет анне.

Лашапа çӳрес тесен, чăнах, ним кирлĕ мар, çав тери юрататăп.

Улăха лаша тытма кайнă чух Эвăна та систертĕм.

— Эпĕ те санпа пĕрле пыратăп!— пат татса каларĕ вăл.

Кайрăмăр.

Чугун çул хĕрне çитсен лашана йывăç çумне кăкартăмăр. Нумай кĕтме тивмерĕ, часах поезд çитрĕ. Нихăш вакунран та çынсем тухни курăнмарĕ. Пĕчĕк разъездăн пурнăçĕ çавă ĕнтĕ. Пирĕн çынсем анма ĕлкĕреймерĕç пулĕ-ха. Кĕтĕпĕр. Анчах, мĕн амакĕ, поезд тапранчĕ вĕт. Килмерĕç-ши е ас тумасăр иртсе кайрĕç-ши? Тăрса юлтăмăр кайăк чĕпписем пек çăвар карса.

Унччен те пулмарĕ, Эва кăшкăрса ячĕ:

— Ав вĕсем!

Эпĕ чунтанах куçпа ача çĕкленĕ арçына шыратăп.

Пăхрăм та Эва кăтартнă еннелле, курах кайрăм: чугун çул леш енче иккĕн тăра параççĕ. Пĕри çар тумĕпе, вăрăм, хытканскер. Унпа юнашарри — пирĕн тантăш ача. Хăйсен умĕнче — чăматансем.

— Эсир-и Кузьма Афанасьевич?!— кăшкăрчĕ аяккранах Эва. Чупса çитрĕмĕр.

— Салам, салам, тăвансем!— пулчĕ çар çыннин сăмахĕ. Пире вăл иксĕмĕре те пĕр харăс ытамласа илчĕ. Савăнăçлăн кулать, хăйĕн нумайччен курман ачисене тĕл пулчĕ тейĕн.

— Паллашăр, ман ывăл — Дмитрий, эсир ăна Микки тесе чĕнĕр. Эпĕ ăна çапла чĕнетĕп,— хушса хучĕ Кузьма Афанасьевич. Алă тытнă май пирĕн те хамăр ятсене калама тиврĕ. Унтан пурте чăматансем çĕклесе лав патнелле утрăмăр. Чăматан мана çав тери йывăр пек туйăнать. Аран-аран мекеçленсе пыратăп. Полковникпе ачи асăрхаманçи пулаççĕ. Тĕрĕс. «Эй, эсĕ вăйсăр-çке» тесен кама килĕшет? Ăслă çынсем яланах çапла вĕсем. Тупата, кăмăла кайрĕç. Микки те вăтанакан ача мар. Çул тăршшĕпех пирĕнпе калаçрĕ. Ашшĕнчен тĕлĕнтĕм. Полковник командăсем çеç парать пулĕ тесе, вăл пур, шӳтлĕ сăмахсем каласа култарать.

Кĕтеркук инке хăнасене ырă кăмăлпа кĕтсе илчĕ. Çăмарта ăшаларĕ. Лешсем хутпа чĕркенĕ канфет кăларса хучĕç. Сĕтел хушшине пире те лартрĕç. Анчах çăвара кашăк илсе пыма та ĕлкĕрейменччĕ, пӳрте ялти ватă çынсем кăштăрт та кăштăрт пыра-пыра кĕчĕç. Полковникĕн апат çиесси пулмарĕ, калаçу пуçланчĕ те татăлма пĕлмерĕ.

Ял-йыш Кузьма Афанасьевичпа ывăлне тăвансене йышăннă пек йышăнчĕ.

Çапла пирĕн тус Миккин автобиографийĕ.

**РЕКОМЕНДАЦИ**

Микки хăйĕн автобиографине каласа пĕтерсен, сборта ун çинчен сӳтсе яврăмăр. Тивĕççĕр, тесе никам та кала-

кан пулмарĕ. Пур те ырăпа туха-туха каласрĕç. Маттур, ĕçе юратакан, лайăх вĕренекен ача. Пĕр Эва çеç Миккин çитменлĕхне кăтартса памə хăйрĕ.

— Микки чăнах та ĕçе юрататъ. Ачасене ĕçе кӳлентерме те пĕлет. Отличнă вĕренес,— тет Эва.— Ку—унăн лайăх енĕ. Анчах та унăн çитменлĕхсем те пур. Комсомола кĕрекен пионерăн хăй çеç отличнă вĕренни сахал. Унпа партă урлă ларакан Çемук начартарах вĕренет. Ма пулăшмалла мар?

Кам, кам, анчах Эва çапла вирлĕн каласса кĕтмен. Пĕтĕм ĕçе пăсса хума пултарать. Капла комсомола илмĕç тата. Хăйсем ялан пĕрле çӳреççĕ. Çывăх тусcем. Микки хăйне килте мĕн чухлĕ ĕç тума пулăшать. Мĕншĕн çакăн çинчен каламасть вăл?

Пĕррехинче, ас тăватăп-ха, амăшĕ чирлесен (Эвăн ашшĕ çук, вăл фронтра вилнĕ), Микки Эвăпа çуна туртса вăрмана вутта кайрĕ. Колхоз лашисем ерçместчĕç ун чух. Эль шывĕ урлă каçсан, Тĕмпек тăвайккине хăпарма пайтах тапаçланмалла. Тиенĕ йывăр çунашкана туртса улăхма ун чухне хам та хирĕç тухрăм. Киле çитсен вăш-вашах Микки пăрахса тухса каймарĕ. Пуртă илчĕ те çăтăр çаппа ваклама тытăнчĕ.

— Çитĕ сана кун чухлĕ пулăшнипе,— чарасшăн пулчĕ ăна Эва. Лешĕ шӳтлерĕ кăна:

— Хĕрачасем йывăр ĕç тусан ванаççĕ, вĕсем çепĕç чечексем...

Çакăн пек ырă çынна Эва сборта хур кăтартма тăчĕ. Сăмахне питĕ вăйлă пĕтерчĕ:

— Комсомолецăн кристал пек тап-таса пулмалла, ун çумĕнче ним çитменлĕх те ан курăнтăр.

Микки çав тери кӳренет пулĕ тесеттĕмĕр. Çук, критикăна йышăнчĕ. «Тĕрĕс калать. Çитменлĕхсене пĕтерме сăмах паратăп», тет.

Сасăланă чух хирĕç пĕри те алă çĕклемерĕ. Миккие комсомола кĕме пионер дружини пĕр шухăшлăн пулса рекомендаци пачĕ.

Алăка шаккарĕç.

— Кĕрĕр, кĕрĕр,— тет Кузьма Афанасьевич.

Эпĕ хам шухăшран уйăрлтăм.

Эва иккен. Полковник çырма пăрахсах сĕтел хушшинчен тухрĕ.

А-а, Эва,— текелет,— ирт-ирт!

Эва килсен ăна хăналама Кузьма Афанасьевич яланах канфет тупать. Халĕ те яланхиллех илмĕш пулать. Кайран илет.

— Мĕн туса ларан, атя хăвăртрах,— тет Эва, мана аякран карт! чышса.

Эпир урама тухрăмăр.

— Иртерех мар-и? Кăнтăрла та çитмен. Çав териех хăвăрт параççĕ тетĕн-и билет?— тетĕп, хĕвеле пăхса.

Эпир Миккине хирĕç тухса илме каятпăр. Мĕнле-ха унсăрăн? Çын районтан комсомол билечĕпе таврăнать-çке.

Эвăпа килĕшетĕп, кая юличчен маларах çитни аванрах пулĕ.

Эпир ĕнтĕ шоссе çинче. Кĕпер çине утса кĕтĕмĕр те карлăк çумне тайăнтăмăр. Чĕнместпĕр. Çырмара, кĕпер айĕнче, явăнса, кăпăкланса, шарлатса çурхи шыв юхать. Шырлан хĕрринчи ватă йăмрасем папка кăларма ĕлкĕреймен, çара туратсем хушшинче çавăрнă йăвисенче кураксем краклатаççĕ. Тӳперен хĕвел хĕртсе пăхать, путех тарăн варсенче выртакан юр куписене ирĕлтерсе пĕтересшĕн-тĕр. Хĕвел ăшшине туйса улăхра симĕс курăк сăмсаланни курăнать.

Тăрсан-тăрсан автобусĕ çитсе чарăнчĕ. Алăкĕ уçăлнăуçăлман Микки сиксе тухрĕ, çил пек пирĕн пата ыткăнчĕ. Çитрĕ те пире лăскама, ыталама пуçларĕ. Хăй хаваслă, кăшкăрашать, кулать. Сарă кăтра çӳç пайăркисем хăйĕн карттус айĕн çамки çине  ункăн-ункăн тухса выртнă. Унăн хумханса тарланă хыççăн е вĕтĕ-вĕтĕ çăвакан çумăра лексен çӳçĕ çапла илемлĕн кăтраланать. Çу-ук,

эпĕ ăна кунашкал савăнăçлине нихçан та курман. Эпир тўсейместпĕр, ыйтатпăр.

— Қала часрах, пачĕç-и?

— Илтĕн-и?

— Пачĕç!— илтетпĕр пĕр хушă тĕркĕшсе айкашнă хыççăн.

— Қăтартсам хăвăртрах?

— Қăлар часрах!

Микки тăпах чарăнчĕ. Вăл мана çак хушăра темле татах ўснĕн, çан-çурăмĕ сарăлнăн туйăнчĕ.

Тинех шалти пиншак кĕсйинчен сăмса тутрипе чĕркенĕ япала туртса кăларчĕ. Тем ванас пек, питĕ асăрханса сăмса тутри кĕтесĕсене пўрне вĕçĕпе тыта-тыта сирчĕ. Қуратпăр. Унăн ывăç тупанĕнче, шурă сăмса тутри çинче, тĕттĕм хĕрлĕ питлĕ пĕчĕк кĕнеке! Хуплашки çинче — Ленин силуэчĕ.

— Билет! Қомсомол билечĕ!— терĕ вăл çав тери чĕререн тухакан ăшă сасăпа.

Миккине эпĕ çав тери ăмсантăм. Унăн пĕчĕк кĕнеки мана чунтан илĕртет. Сисетĕп, ĕмĕрти тĕллевсем патне илсе пыраканĕ шăпах çав ĕнтĕ. Тус пĕрре пăхсах пире ăнланчĕ пулас.

— Ытлашши ан кулянăр. Вун тăвата тултарсан, эсир те акă, комсомола кĕрĕр, сире те çакăн пек хаклă билет парĕç,— тет.

— Қилес çул тин,— хурланса калать Эва.

Менелник кунĕ ман хамăн та инçе-ха, çулла тин. Çапах та ăшăмра савăнăç хĕлхемĕ йăлт-йăлт сиксе илет.

Халĕ пирĕн çав тери Миккин билетне алра тытса курас килет. Чăваш тытса, хыпашласа пăхмасăр ĕненмест, лăпланмасть, теççĕ те, тĕрĕсех пулĕ çав. Çу-у-ук, Микки пире яхăнне те ямасть. «Юрамасть», тет вăл. Хайхискер мăнаçлăн хуплашкине уçрĕ. Шалта Миккин хушаматне çырнă. Мĕн тери вăл телейлĕ. Вăл — комсомолец! Пирĕн шкулти чи пирвайхи комсомолец! Микки билетне мĕнле кăларчĕ çавнашкалах тирпейлĕн чĕркесе, чĕре тĕлĕнчи

шалти кěсйине чикрě. Тинех килелле утма тытăнтăмăр. Пыратпăр-пыратпăр та тăпах чарăнса тăратпăр. Виççěмěр те пăшăрханатпăр. Ах, çухалман-ши? Комсомолец чи хаклă, чи паха япалине — билетне тěрěслет. Йăпăр-япăрах чěре тěлěнчи шалти кěсйине чиксе ярать, унтан йăл кулать. Харăсах ăнланатпăр, билет кěсъерех.

— Комсомол билетне куçа сыхланă пек упрамалла,— тет Микки.

## МИККИ ЕМĚЧĚ

Çуркуннехи каникул часах иртрě. Эпир каллех шкула пухăнтăмăр. Вěренў çулě пуçламăшěнче кăна пирěн клас ачисем пурте хěрлě галстук çыхса çўретчěç. Халě вара Миккин хěрлě галстук выранне кăкри çинче «ВЛКСМ» тесе çырнă пилěк саспаллилле значок çăлтăр евěр йăлкăшать. Эпир, пионерсем, вырăн тупаймастпăр. Микки ăçталла, эпир те ун хыççăн кěшěлтететпěр. Значокě çине куç илмесěр пăхатпăр. Ăнланатăп, пурте ăмсанаççě. Ара, камăн чăн-чăн комсомолец пулас килмě. Фронтра мěнле паттăрла çапăçман-ши вěсем! Кузьма Афанасьевич нумай каласа панă пире комсомолецсен хастарлăхě çинчен. Эпир ăна майăн тăххăрмěшěнче Çěнтерў кунě ячěпе ирттернě сбора та чěннě. Шиксěр Васьăна хам куçпа курнăнах туйăнать. Лутрарах хăйпашка ачаччě кăна тет, хăй. Анчах вăл чăн-чăн комсомолец пулнă. Ăна комсомола фронта тухса каяс умěн илнě. Хăйěн çивěчлěхěпе, чеелěхěпе тěлěнтернě. Йăрăскер вăл, самант тăшман вăрттăнлăхěсене пěлсе килнě, хăш чух «чěлхе» те тытса таврăннă. Ытлашши лара-тăра пěлмен пирки, Кузьма Афанасьевичăн унăн йěвенне алра тытма тивнě. Вилессе те вăл паттăрла вилнě. Вěсене çырма хěрринчи яла тăшманран тасатма приказ панă. Кисретнě те вара пирěннисем фашистсене. Анчах та тăшманăн пěр танкě, урнăскер, совет салтакěсем çинелле тапăннă. «Тěп тумалла!» — шутланă ěнтě Вася. Гранатă илнě те

танка хирӗҫ чупса пырса ун айне выртнӑ. Сирпӗннӗ! Часах танкне вут хыпса илнӗ. Хӗрхенмен Вася хӑйне.

— Ҫавӑнпа та комсомола Тӑван ҫӗршыв хисеплет,— тет Эва, ман шухӑша ҫирӗплетсе.— Миҫе орден унӑн, ас тӑватӑн-и, Авель?

Ас тумасӑр. Микки билетне куртӑмӑр-ҫке: Ленин орденӗ кӑна миҫеччӗ!

Комсомол—партин шанчӑклӑ шӑллӗ. Мӗнешкел чаплӑ.

— Апла пулсан пирӗн Микки те партин шӑллӗ-и?— ыйтатӑп эпӗ Эвӑран.

— Шӑллӗ,— тет вӑл ӗнентерӳллӗ ҫирӗп сасӑпа. Мӗн тери пысӑк ҫын пирӗн юлташ Микки! Пӗр шухӑшласан, ун патне ҫывхарма именмелле пек. Анчах та темшӗн эпир Эвӑпа иксӗмӗр халиччен хинчен те ҫывӑхрах туятпӑр ӑна, унтан хӑпма пӗлместпӗр. Микки ҫумӗнче пире темле шанчӑклӑ, ӑшӑ.

— Илесчӗ темиҫе ачана комсомола, вара шкулта хамӑрӑн комсомол организацийӗ пулӗччӗ,— ӗмӗтленет Микки.

Ун ӗмӗтне пирӗн питӗ пурнӑҫлас килет. Анчах мӗнле? Пире ҫамрӑк теҫҫӗ. Ултӑмӗш класра ҫеҫ вӗренетпӗр-ха. Часрах хуть аслӑрах класа куҫасчӗ, вара ӗҫ кайӗччӗ. Шкулта пирӗн клас чи асли, ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул тин ҫеҫ уҫнӑ. Ку ним те мар-ха, комсомола кӗме ҫул ҫитменни пӗтерет. Пур пирӗн Ҫемук. Вӑл вун тӑваттӑ тултарнӑ. Комсомола илмеҫҫӗ ӑна. Шел, пӗр тикӗс лайӑх вӗренмест. Темшӗн пӗрре чиперех урок каласа парать, «тӑваттӑ»! илет. Тепӗр чухне тем пулать, хап! «иккӗ».

— Класра комсомол организаци тӑвасчех,— лӑплаймасть Микки.— Организаци пулсан, пирӗн пурнӑҫ питӗ селӗм пулӗччӗ. Ун чухне эпир пысӑк ӗҫсем ҫавӑрттарӑттӑмӑр.

Мӗнле пысӑк ӗҫсем ҫавӑрттарассине тӗпӗпех ӑнлансах ҫитейместӗп, тӗтреллӗн ҫеҫ, аякран ҫеҫ чухлатӑп. Темле пысӑк стройкӑ пирки пулӗ. Кузьма Афанасьевич пире час-часах ҫӗршывра комсомолла стройкӑсем пуҫланни

çинчен каласа парать. Шăкăрт! çамрăк ĕçлет, пурте комсомол путевкипе пынă. Миккине манăн организаци тума питĕ пулăшас килет. Ăна комсомолецсем кирлĕ.

— Эва,— тетĕп,— санпа иксĕмĕр эпир аван вĕренетпĕр. Çапла-и?

— Вара мĕн?

— Мĕнле мĕн? Пире комсомола илме пултараççĕ.

— Эх, айван та иккен эсĕ, Авель,—тет Эва, ман çине пăхса.— Комсомол уставне пачах та пĕлместĕн иккен.

— Пĕлетĕп те-ха, райкомола каяс. Ӳкĕтлес. Шкулта комсомол организаци кирлĕ тес, пирĕн пысăк ĕçсене çавăрттармалла тес. Ирĕк парĕç.

Эва тавлашкаласа илнĕ хыççăн килĕшрĕ. Вара уроксем хыççăн Эвăпа район центрне тухса шурăмăр. Комсомола кĕме ирĕк илсе килсе, савăнтарма шутлатпăр ăна.

«Вун тăватă çула çитни çеç те сахал. Комсомола кĕме тивĕçлĕ пулас тесе, лайăх вĕреннисĕр пуçне общественна усăллă ĕçре хăвăрăн пултарулăха кăтартмалла, туссем»,— терĕç пире районти комсомол комитетĕнче.

Киле хурланса таврăнтăмăр. Эва та, эпĕ те шарламастпăр. Шухăша путнă. Хамăр пултарулăха мĕнле кăтартмалла-ши?

Анăçсăр çул çӳрев пирки Миккине систермерĕмĕр.

### ÇЕМУК КОМСОМОЛЕЦ ПУЛМАЛЛАХ

— Эсир мана организаци тума пулăшма пултаратăр,— тет пире Микки. Хĕпĕртесе ӳкрĕмĕр. Хуштăр çеç, пысăк сăрта ӳпне-питне йăвантарса ярăпăр.

— Эпир хатĕр,— пĕлтеретпĕр Эвăпа иккĕн хамăр шухăшсене.

— Çемук комсомолец пулмаллах. Пирĕн ăна пулăшмалла,— пат татса хучĕ Микки.

Каларĕ те. Ара, эпир ăна пулăшман мар-çке.

— Çапах та эпир унăн тарçисем мар, пĕрмаях пулăшма... Юлхав вăл,— терĕм, алла сулса.

— Эх, пĕр-пĕрне мĕнле сахал пĕлетпĕр эпир, Авель,— тет Микки.— Май пулсан начар вĕренмĕччĕ вăл.

Эпир виççĕмĕр те, тăкăрлăкра пыраканскерсем, пахча карти çумĕнче выртакан пĕрене купи çине кайса лартăмăр.

Микки Çемук мĕншĕн начар вĕреннин сăлтавне пĕтĕмпех тĕпчесе пĕлнĕ.

Çемук урăх ялта пурăнать. Уроксем хыççăн килне çӳрет. Кунне каллĕ-маллĕ хутласа сахалтан та вунă çухрăм утать. Апла пулсан вăл ĕшенет, çын машинă марçке. Çавăн чухлĕ утма вăхăт мĕн чухлĕ кирлĕ тата? Урока хăçан хатĕрленмелле?

— Акă ăçта сăлтав,— ăнлантарать Микки.

— Кам айăплă Çемук хăйсен ялне çӳренĕшĕн, хваттĕр илтĕр те пурăнтăр.

— Эх, Эва, калама çăмăл,— пӳлчĕ ăна Микки.— Хваттершĕн укçа тӳлемелле-и? Тӳлемелле. Питех пĕлессӳ килсен калам: унăн та санăнни пекех ашшĕ çук, пирĕн телейшĕн фронтра пуç хунă.

Эва хĕрелсе кайрĕ. Хама та ырă мар пек туйрăм, çĕрелле пăхрăм. Çапах та ыйтрăм:

— Мĕн тумалла-ха эппин?— сасă хамăн шăппăн та чĕтренерех тухрĕ.

— Çемука пирĕн хваттер тӳлеме укçа тупса памалла.

Ах, хăямат сынни, каларĕ-тĕк каларĕ. Ара, ăçтан тупмалла ăна? Мана килтисем ĕмĕрне те пĕр пус ытлашши укçа парса курман.

— Кам сана килтисенчен илме хушать,— сиввĕнрех каларĕ Микки.— Ĕçлесе тупмалла.

Тӳрех калатăп. Ку тарана çитсе те аллăмра хам ĕçлесе тупнă укçа çур пус та пулман-ха манăн. Ухута пысăк, ĕçлĕттĕм, анчах, пĕчĕк тесе, шалуллă ĕç патне ямаççĕ. Шутласан чистиех тарăхмалла. Тата иккĕленетĕп, ĕçлесе тупнă укçана çынна парас килĕ-ши? Кино курма ытларах каяссăн, кĕнеке илессĕн туйăнать. «Вăл укçа организаци тума питĕ кирлĕ пулсан?» тепĕр тĕрлĕ

шухăш пырса кĕчĕ пуçа. «Çу-ук, унашкал хĕрхенме юрамасть укçана». Çапла пуçăмра шухăшсем тавлашкаласа илчĕç. Виçе-виçе пăхрăм та килĕшрĕм.

— Ĕçĕ пур-и вара?

— Ĕçĕ пур, ан ÿркенĕр кăна. Атьăр!— кăчăк туртса аллине сулчĕ Микки.

**ЮЛТАШШĂН**

Эпир Микки ытлашши калаçманнине хăнăхнă ĕнтĕ. Çавăнпа та вăл тепĕр хут чĕнессе кĕтмесĕр, ун хыççăн утрăмăр. Хайхискер пире Элехван пичче патне илсе кĕчĕ. Ку пире тарăхтармаллипех тарăхтарса ячĕ. Элехван пичче колхозра ĕçлеме ÿркенекен наян тата чăркăш çын иккенне ялта такам та пĕлет. Ялан вăл пасарта тĕркĕшсе тăрать, кунĕн-çĕрĕн хĕрĕнкĕ çÿрет, кÿршĕсемпе килĕштерсе пурăнмасть: е пĕринпе, е тепринпе ятлаçать. Пурин кăмăлне те хуçма ĕлкĕрет. Уйрăмах, ÿсĕрĕлсен, ашшĕсĕр ачасем çумне çулăхать. Хÿтĕсĕр-çке вĕсем. Хĕрарăмсем ятланине хăлхана та чикмест. Виçĕм кун кăна Эвăна кÿрентернĕ. «Манăн хĕрача Таня чирлĕ выртать, эсир урамра выляса çÿретĕр...» тесе пĕррех кăшкăрнă. Таня — Элехван пиччен пирĕнпе пĕр класра вĕренекен хĕрĕ.

— Микки, мĕншĕн илсе килтĕн эсĕ çак усал çын патне? — ыйтрĕ тарăхса Эва.

— Ан тулаш-ха, пачах ун патне мар.

Çапла калама çеç ĕлкĕрчĕ вăл, пире грузовик çумĕнче тăракан палламан çын сăмах хушрĕ те:

— Э-э-э, ачасем! Иртĕр, иртĕр. Хăюллăрах пулăр. Вăй питти икĕ улăп, тирпейлĕ хĕрача алли пур пулсан, шансах тăр, ĕç малалла каять пирĕн.

Вăл пире икĕ витре, вĕрен татăкĕсем пачĕ. Машинă çумне пусма лартрĕ.

— Нÿхрепрен кăларнă çĕр улмине машинă çине тултаратăр. Васкарах ĕçлĕр. Манăн татах çĕр улми тупмалла.

Çапла каларĕ те çын карташĕнчен тухса кайрĕ. Эпĕ ним те ăнланмастăп. Эва та çавах ĕнтĕ.

— Комсомолец те вара сана. Путсĕр çынна пулăшма илсе килетĕн,— терĕ çиллессĕн. Унтан палт! çавăрăнчĕ те хапха патнелле утма тытăнчĕ.

Микки Эва аллинчен ярса тытрĕ те каларĕ:

— Пĕлетĕп санăн чĕлхӳ вичкĕннине. Итле. Эпир Элехван пиччешĕн ĕçлеместпĕр. Вăл хăйĕн çĕр улмине пысăк хуларан килнĕ уполномоченнăя сутнă. Лешĕ рабочисен столовăйĕ валли илсе каять. Тиенĕшĕн укçа параççĕ пире.

Лăштах пултăмăр.

— Хулари рабочисемшĕн пулсан ĕçлетĕп,— терĕ те Эва, пуш витрине илсе нӳхреп еннелле чупрĕ. Тепĕр витрине çĕклерĕм те Эвăран иртсе кайрăм, вăрт-варт нӳхрепе антăм. Çӳле Эвăпа Микки тăрса юлчĕç. Шăкăршакăр — пĕр витре хатĕр. Хăлăпĕнчен вĕрен çыхсан:

— Туртăр!— кăшкăртăм юлташсене. Лешсем витрене пехлетсе хăпартаççĕ. Хам стена çумне пурăпа пĕр патак çыртăм. Ку ĕнтĕ пĕр витре кăларнине пĕлтерет. Тепĕр витрине те хăпăл-хапăлах тултартăм. Ĕç кал-кал пырать пек. Илтетĕп, çӳлте Эва пĕчченех мекеçленет. Микки çĕр улмине машинă çине çĕклет пулас. Шел пулчĕ Эвăна, хĕрхентĕм. Хĕрачана тулли витре туртса кăларма йывăр.

— Эва, ан нӳхрепе, сана кунта çăмăлтарах пулĕ,— чĕнтĕм.

Тавлашма юратать, айванскер. Юлашкинчен пур пĕрех çырлахать. Халĕ ĕнтĕ эпĕ вĕçĕмсĕр тулли витрене вĕренпе нӳхрепрен кăларатăп. Сисмерĕм те, манăн алă тупанĕ пулă хăмпи пек хăпаланса тухрĕ. Кун çинчен никама та шарламастăп.

— Çур машинă тултартăмăр,— пĕлтерет Микки.

Темшĕн-çке алă тупанĕ каса-каса каять. Пăхатăп — хăмпăсем шăтнă иккен, юн юхать. Ы-ых, ыратать. Тепле пулсан та тӳсесчех, тытăннă ĕçе туса пĕтересчех, мĕншĕн тесен пирĕн юлташа — Çемука пулăшмалла. Вăл вара

хваттер илĕччĕ, пĕр тикĕс лайăх вĕренсе пырĕччĕ, унтан комсомол ретне тăрĕччĕ, Микки çав тери ăмсанакан комсомол организаци йĕркеленĕччĕ. Шухăшпа çĕкленсе хĕрсе каятпăр, пуç çĕклемесĕр ĕçлетпĕр.

Хушăран эпĕ çапах та Элехван пичче крыльци çине пăха-пăха илетĕп. Алкум вĕçне унăн пирĕнпе вĕренекен хĕрĕ — Таня тухасса кĕтетĕп, пире пулăшĕ тетĕп. Пўрт алăкĕ уçăлса хупăнмарĕ. Таня тухмарĕ, кĕтни харам пулчĕ.

Тўпе ерипенех хăйĕн шупкине çухатрĕ. Çĕр питне тĕттĕм хупăрланă тĕле пирĕн машинă тулчĕ, тек унта пĕр витре çĕр улми те кĕрес çук. Пĕлнĕ пекех уполномоченнăй пичче те килсе çитрĕ. Кунтан эпир тўрех Миккисем патне кайрăмăр. Кузьма Афанасьевич эпир ăçта ĕçленине мĕнле пĕлнĕ пулĕ? Пирĕн çине пăхса йăл-йăл кулкалать. Эва валли каллех канфет тупăнчĕ. Ун хўттипе пире те лекрĕ.

— Маттур! — ырлать пире полковник.

### ВĔСЕМ ĔНТĔ ИККĔН

Хваттер шыраса тупсан, укçине малтанах тўлесе хутăмăр. Халĕ Çемука пĕлтересси çеç юлчĕ. Савăнать-тĕр.

— Темĕн-ха, — тет Микки иккĕленсе.

Шкула иртерех кайрăмăр. Çемук çук.

— Атьăр, Çемука хирĕç тухса илер, — сĕнчĕ Эва.

Çулпа ытлашши инçех те каймарăмăр, Çемука хирĕç те пултăмăр. Сывлăх сунсан-тусан, хамăрăн ăшра çулăмланса тăракан сăмаха хускатрăмăр. Çапла та капла тетпĕр, ырантан пуçласа хваттерте пурăнма тытăнан, тетпĕр. Ырă хыпар пĕлтернĕшĕн Çемук пире халь-халь ыталаса илессе кĕтетĕп. Çу-ук, ун вырăнне тарăхнă сасăпа кăшкăрса ячĕ:

— Эсир манран мăшкăллатăр, — тет, хăй чутах пире çупса ямасть. — Тўлевсĕр хваттерте пурăнма эпĕ улпут ывăлĕ мар-ха.

Айванскер, кам ăна улпут ывăлĕ тет. Улпут ывăлĕ пулсан хваттер мар, ĕнсе чикки памалла. Пирĕн вăхăтра тата мĕн улпут ывăлĕ пултăр? Пуян таврашне пирĕн асаттесем тахçанах тĕп тунă.

Шкула çитсе урока лартăмăр. Переменăна тухсанах — Çемук патне. Ун пек те, кун пек те йăпататпăр, яхăнне те ямасть. Хваттере пыма сăмах памасть те памасть. Вара Микки тӳррĕн калаçма тытăнчĕ:

— Шкулти пулас комсомол организацишĕн, урăх нимшĕн те мар. Комсомол ячĕпе сана хваттере куçма ыйтатпăр,— терĕ.

Çак калаçăва илтсен, Çемук кăмăлĕ çемçелчĕ, турткалашса тăма пăрахрĕ. Пĕлетпĕр, ара Çемукăн çав тери комсомолец пулас килет. Паян тесен паян комсомола кĕрĕччĕ.

Хваттере вырнаçсан, нумай та вăхăт иртмерĕ, никам пулăшмасăрах, Çемук йĕркеллĕ вĕренме тытăнчĕ.

— Малтанах çакнашкал вĕренмеллеччĕ санăн, отличник пулăттăн,— ырлать ăна клас руководителĕ.

Тăрăшни сая каймарĕ, шанни, кĕтни ума çитрĕ. Çемука комсомола илчĕç. Микки савăнать. Халĕ вĕсем ĕнтĕ иккĕн! Пирĕн шкулта икĕ комсомолец!

— Йыша тепĕр комсомолец хушăнсан, шкулта комсомолăн пуçламăш организацийĕ пулать!— тет Микки, хăлаçланса.

## ЕЛИÇ ХЫÇÇĂН ÇУРЕТĔП

Эвăпа иксĕмĕр хамăр класри кашни ачан çуралнă кун хăçан çитессе пĕлтĕмĕр. Эва список та турĕ. Шел, паян-ыран никам та вун тăваттă тултармасть. Часах тата çуллахи каникул пуçланмалла. Чăнах та, каникулăн малтанхи кунĕсенчех Елиç вун тăваттă тултарать. Ман шутпа вăл комсомол ятне илме тивĕç те мар, пионер ятне янă. Ас тăватăп, пĕлтĕр ăна отряд советне чĕнсе хытă

ятланăччĕ. Урамра выляса çӳрекен ачана кӳрентернĕ. Елиç пĕчĕк ачан тетте урапи çине хăпарса ларнă та çĕмĕрсе пăрахнă. Юсаса парас вырăнне пăрахса кайнă, çийĕнчен макраканскерне питне-куçне чалăштарса витленĕ, ăна пуçĕнчен чĕрнепе шак! шаккаса хăварнă.

Елиçе комсомола илме каникул вăхăтĕнче шкулта никам та пулмасть. Кам ăна рекомендаци парĕ? Дружинă совечĕн членĕсем те саланаççĕ.

Каникул çитни мана хумхантармаллипех хумхантарать. Пуçланнă çав тери пысăк ĕç татăлса каяссăн туйăнать. Микки комсомол организаци тăвасшăн çунать. Шеллетĕп ăна. Вăл пур, хаваслă. Путех ăна ĕмĕчĕ хĕвелле çутатса илĕртет пулас.

— Вăл пĕчĕккисене кӳрентернине манни вара эсĕ?— аса илтертĕм Миккине.

— Икĕ çул каялла пулса иртнĕ ĕç. Тепĕр тесен, кам йăнăшмасть? Пĕрреччен улшу пусса илнине ĕмĕр асра тытмаççĕ. Елиçе комсомола илме хатĕрлемеллех. Çаплах. Ăна ытларах ĕç хушмалла. Вăл тӳрĕ кăмăллă, ĕçлеме пултаракан пионер иккенне пурте пĕлчĕр.

— Ĕçлеме пĕлмесен е вăй çитереймесен вара Елиçе комсомола илмеççĕ-и?

— Кăмăл пулсан кашни çынах ĕçлет, вăй çитереймен ĕç ăна хушмаççĕ. Пирĕн тата тăрăшакан çынна вĕрентеççĕ, пулăшаççĕ.

Сисс е те юлмарăм, Микки мана яп! ярса тытрĕ те, эпир кĕрешме тытăнтăмăр. Хăй çаплах: «Эпир санпа пур пĕр комсомол организаци тăватпăрах»,—тет.

Çак кунран эпĕ яланах Елиç хыççăн çӳретĕп. Сасартăк ĕç парĕç те, вăл пĕлмĕ, пулăшу кирлĕ пулĕ. Эпĕ хатĕр тăратăп. Ĕçленине кăтартмалла-çке. Унсăрăн тем пулас, тем килес.

Сăнатăп-сăнатăп, çынна нимле ĕç те памаççĕ. Физикă учителĕ ватерпас юсама хушрĕ. Ку ĕç комсомол енĕпе мар. Пĕлетĕп, ăсталама юратнăран кăна хушрĕ ăна учитель.

Елиҫ хӑй ӑна-кӑна сисмест. Тупнӑ вӑл пӗр кӑвак хупӑллӑ кӗнеке, аларан пӑрахмасть, пӗрехмай вулать. Ҫуҫ хӗрипе пӑхса илтӗм те кӗнеке ятне куртӑм: «Амӑртусем ирттермелли вӑйӑсем».

Миҫки манса кайман-ши Елиҫе ӗҫ памалли ҫинчен? Аса илтертӗм.

— Елиҫ пионерсен инструкторӗ пулать. Сире вӑйӑ выляма вӗрентӗ,— тет.

— Выляма? Мӗн эсӗ пире пӗчӗк ача вырӑнне хуратӑн-и?— тетӗп тарӑхса.

— Ҫаҫар, эсӗ сухална хыртарнине пӗлмен те эпӗ.

— Пӑх эсӗ ӑна, тӑрӑхлать. Эпӗ пур, пулӑшасшӑн ҫунатӑп.

— Тӗрӗс. Вӑйӑсем йӗркелеме пулӑш эсӗ ӑна, питӗ ӑслӑ пулатӑн.

Эпӗ ӑна комсомол хушнӑ ӗҫ вырӑнне хурса йышӑнтӑм. Анчах пурнӑҫлама май килмерӗ.

## АСЛӐ ПИЧЧЕСЕМ ЧӖНЕҪҪЕ

Сарӑм вӗҫне тухрӑмӑр, вӗренӳ ҫулӗ вӗҫленчӗ. Ыран шкула килмелле мар. Урайне тӑкӑннӑ пӑрҫа евӗр сапаланатпӑр. Ҫам ӑҫта... Пӗрисем канма пионер лагерьне, теприсем хӑнана аякри, хулари тӑванӗсем патне кайӗҫ. Манашкал килте пурӑнакансем те пайтах. Темшӗн чун хурланса килчӗ. Пӑхатӑп та, Эва та тутине чӑп тытнӑ, халичченхи пек хавас ҫук ун. Елиҫ те ӳрӗк-сӳрӗк. Вӑл ачасене вӑййа хутшӑнтарайманшӑн кулянать пулӗ. Тепӗр класа куҫнӑ хыпар та ҫӗклентермест пире. Ара пурте ҫиччӗмӗш класа куҫасси паллӑччӗ. Юлашки вӑхӑтра япӑх вӗренекенсем пулман. Пуҫне уснӑ ачасем. Мӗншӗнши? Шухӑшлатӑп та тавҫӑрса илетӗп: пӗччен тӑрса юласси пӑшӑрхантарать вӗсене. Пӗрле мӗнешкел ырӑ, хаваслӑ. Хӑраххӑн мӗн тума пӗлес? Саланатпӑр. Алӑкран тухас умӗн курах кайрӑм: стена ҫумӗнче илемлетсе ҫырнӑ пӗлтерӳ!

Çак сăмаха вуларăм та хама хам чартăм. Тăхта ара, мана чĕнеççĕ-çке! Кам, ăçта? Е асăрхаттараççĕ? Сывламасăр тенĕ пек малалла вуласа кайрăм.

Сана, хаклă пионер, хĕвеллĕ çу кунĕсем çитнĕ ятпа саламлатпăр! Савăнăçлă каникул килсе çитрĕ. Текех ĕнтĕ эсĕ кĕркуннеччен шкула килместĕн. Ыран эсĕ—килте. Мĕнле ирттеретĕн-ши каникулăн малтанхи кунне? Тен, сасартăк кичем пусать? Ун пек чух канлĕ пурнăçа ан та кĕт. Чăнах та, çавнашкал инкек ерчĕ пулсан, пуçна ан ус. Тепĕр кунне, пĕр тăхтаса тăмасăр, тӳрех шкула чупса кил. Сана кунта ырă ĕçсем, хаваслă вăйă-кулăсем кĕтеççĕ.

Сирĕн аслă пиччĕрсем — комсомолецсем».

Аша кайăк чунĕ пырса кĕнĕн, куçа курăнман çунатсем карр сарăлнăн туйăнчĕ. Эпĕ киле савăнăçлăн тухса вĕçтертĕм. Пурах мĕн пирĕншĕн тăрăшакансем. Мĕнлерех иккен комсомолецсем! Кĕçĕн шăллĕн — пионерăн шухăшкăмăлне таçтанах пĕлсе тăраççĕ. Аслă пиччесем чĕнеççĕ, ăçтан вĕсене итлемесĕр тăрăн!

**ТĔЛĔНМЕЛЛЕ ЛАГЕРЬ**

Каникулăн малтанхи кунне эпĕ килтех ирттертĕм. Вăхăт питĕ вăраххăн шăвать, ларас-тăрас килмест. Çапах та кăмăл ырă, тем тума та хатĕр. Чашăк-тирĕк çурăм, алкум урайне шăлтăм. Мăшăр витрене çакса шыв ăсма çырма хĕрне çул тытрăм. Пусма хĕрне çитсен пĕр картлашкаран теприн çине шутла-шутла пусатăп. Курах кайрăм: пусма тăрăх Эва юрă ĕнерешсе хăпарать. Пĕрре пăхсах чухламалла, хăй питĕ савăнăçлă пулас. Аллинче унăн симĕс çулçăллă турат. Эпĕ юриех пуçа усрăм, хурлăхлă курăнасшăн тăрăшатăп.

— Эва,— чĕнетĕп,— сана кичем-и?

— Çук,— тет кулса.— Çав тери савăнăçлă, ха-ха. Каникул вăхăтĕнче кам тунсăхлатăр.

Эпĕ темшĕн пăшăрханса ӳкрĕм. Ун пек пулсан, ыран шкула та пымасть пулĕ.

— Эсĕ ĕнтĕ шкула каймастăн та-и?— ыйтрăм мĕскĕнле.

— Каятăп. Çавăнпа хавас та,— тет каллех кулкаласа.

Чунăм лăштах пулчĕ.

— Ыранччен!— кăшкăрчĕ те, путек-сурăх пек сиккелесе, пусма тăрăх çӳлелле улăхса кайрĕ. Эпĕ хыççăн пăхса тăрса юлтăм. Ыйтса пĕлмеллеччĕ: ăçта кайăпăр-ши ыран?

Аранах кун, çĕр иртрĕ, ир çитрĕ. Манăн асанне ытла мĕштĕрти. Апат лартмасăр кăларса ямасть. Ана пула намăс куртăм. Эпĕ шкула çитнĕ-çитмен ачасем тăрăхлама пăхрĕç:

— Авель çывăрса юлнă!

— Ыйхă чăпти!

Микки вара ăшшăн пăхса илчĕ те:

— Чăн-чăн пионерсем эсир,— терĕ.— Отрядран пĕри те килменни юлмарĕ. Халĕ похода каятпăр. Килĕшетĕр-и?

Ыйтать тата. Унашкал шухăш çук пулсан, кам килтĕр кунта.

Ушкăна Кузьма Афанасьевич çитсе тăчĕ те çапла ыйтрĕ:

— Мана илетĕр-и хăвăрпа, ачасем?

Кам хирĕçлетĕр. Полковник пирĕнпе пырсан мĕн тери интереслĕ! Ачасем кăна лайăх ăнланаççĕ. Савăннипе шавлама тытăнчĕç:

— Илетпĕр!

— Пирĕнпе Кузьма Афанасьевич пырать!

— Урра!

— Эппин, темиçе ача ман пата кайăпăр.

Эпĕ те юлмарăм. Çитрĕмĕр. Полковник пире кĕлете илсе кĕчĕ те кашнинех çурăм хыçне кутамкка çактарчĕ.

Чим-ха, аса илтĕм. Ку япаласене эпир Миккипе ашшĕ панă хутпа разъезда кайсах лавпа тиесе килнĕччĕ.

— Çар чаçĕнчен ярса пачĕç,— ăнлантарнăччĕ вăл ун чух.

Шкул умне каялла таврăннă çĕре ыттисем строя йĕркеленсе тăнă. Эпир те пĕрлешрĕмĕр. Колоннă умĕнче тăракансене ялав тыттарнă. Микки отряд командирĕ.

Тапрантăмăр. Инçех те кайманччĕ, Эва мана аякран кăлт! чышрĕ. Эпĕ шартах сикрĕм. Сăмах калаччен çапла чышса илес йăла пур вара ун.

— Намăс мар-и сире арçын ачасене,— тет.— Пăх-ха çаврăнса хыçалалла. Хисеплеме пĕлместĕр.

Колоннă хыçĕнче шкул технички ача урапи туртса пырать.

— Мĕн тиенĕ ара вăл?— ыйтрăм.

— Пире валли — апат-çимĕç.

Манăн питĕм-куçăм пĕçерсе кайрĕ. Пирĕн калаçăва хутшăнса пĕри çапла каларĕ:

— Вăл хăй айăплă, урапана никама та турттармасть. Эпир ăçта чарăннине çитсе курасшăн.

Ман хыçра ним çĕклемесĕр пыракан икĕ ача, никам хушмасăрах, стройран тухса каялла утрĕç. Техничкăна ӳкĕте кĕртрĕç пулас, ача урапине хăйсем турта пуçларĕç.

Ялтан тухрăмăр. Куç умĕнче — вĕçĕ-хĕррисĕр сарăлса выртакан уй-хир. Эва юрă пуçларĕ. Ытла янăравлă çавăн сасси. Юрра хутшăнмасăр никам та юлмасть.

Вăрман хĕрне пырса çитрĕмĕр.

— Канма ларăр!— кăшкăрчĕ Микки.

Чарăнтăмăр. Кутамккасене хыврăмăр. Микки, Çемук тата Елиç вăрмана кĕрсе çухалчĕç.

Ачасем шавлаççĕ, пĕр-пĕрне эпек туса чупаççĕ, мекĕлчĕк хуçаççĕ. Эва ачасене те, хĕрачасене те вăйă картине тăратать. Сасартăк аса илтĕм. Елиçчĕ кунта. Вăт камăн вăйă йĕркелемеллеччĕ. Эх, çав! Таçта çӳрет. Икшерĕн хире-хирĕç тăрса алсене тытрĕç, пĕри «кĕпер» айĕнчен тухать. Пурте кулаççĕ, савăнаççĕ, шӳтлĕ сăмахсем калаççĕ.

Вылянă чух темшĕн вăхăт иртни те сисĕнмест.

— Палаткăсем карма килĕр-р!— кăшкăрать Микки. Кун чул пуранса та палаткă карса курман. Эпир йатса килнĕ кутамккара шыв яман палаткă пулнă-мĕн. Елиç вĕтеленет кăна. Çĕре тăваткал виçсе илсе кашни кĕтесе шалча, пĕр енне вăрăм патак çапрĕç. Палаткăна кăр-кар карчĕç, ăна кантрасемпе çыхса çирĕплетрĕмĕр. Палаткă пӳрт тăрри евĕр пулчĕ те тăчĕ. Мана темшĕн юмахри пӳртсем шăп çакнашкал курăнса ларассăн туйăнать. Пăхма пысăк та мар, ăшĕнче аслă, пиллĕкĕн ирĕклĕнех кĕрсе ларан. Юнашарах тепĕр палаткă карма тытăнчĕç. Ку хутĕнче кантрисене шалча çумне эпĕ те çыхса çирĕплетрĕм.

— Вĕренĕр, ачасем, палаткă карма,— сĕнет Кузьма Афанасьевич.— Пĕрер акă ăмăрту та туса ирттерĕпĕр, курăпăр, кам чи малтан палаткă карма пултарĕ.

Кăмăлтан тĕрмешеççĕ ачасем. Ӳсеççĕ те ӳсеççĕ пĕчĕк пӳртсем. Çип çапнă пек тӳрĕ йĕрпе сакăр палаткă ларать. Вĕри тивесрен вĕсене патмар юмансем хăйсен тин çеç сарăлма тытăннă çулçăллă тураттисемпе çил вăркăштарса сулхăнлатаççĕ.

Хăш вăхăтра кăвайт чĕртме ĕлкĕрнĕ? Çĕнĕ урам вĕçĕнче, юлашки палаткă умĕнче, икĕ вучах тунă та хуранта лăкăртатса апат пиçет. Эва хыпаланать. Пăтти хуран тĕпне ларасран пăшăрханать, йĕтĕрпе пăтраштарать кăна. Аçтан чухлать пулĕ вир пăтти пĕçерме? Пĕлетĕп: амăшĕ ĕçре чух ăна пайтах апат пĕçерме тивнĕ.

Часах эпир лаштра йывăç айне, сулхăна, карталанса лартăмăр. Йывăç тирĕксем çине апат антарса пачĕç. Çу-ук, кунашкал тутлă апат хам ĕмĕрте те çисе курман.

— Эх! Çу каçипех çакнашкал пурăнасчĕ,—тетĕп эпĕ, вăрман хĕрринче тин çех пуçланнă пурнăçпа киленсе.

— Сана, Авель, лагерь килĕшет эппин?— ыйтать манран полковник.

— Çав тери!

— Палаткă-пӳртсене ытармалла мар,— пĕлтерет Эва та хăй шухăшне.

— Питех килёштеретĕр пулсан мĕнех вара, юлма та пулать.

— Чăнах юрать-и?

Кузьма Афанасьевич шухăшне тĕплĕнех пĕлеймерĕмĕр. Çак вăхăтра пирĕн пата ялти ватă колхозник. Кириле мучи пырса тухрĕ. Хăш енчен килчĕ пулĕ, ăна эпĕ асăрхаймарăм.

— Хастар йыша сывлăх сунатăп, апат тутлă пултăр-р,— терĕ вăл, туйи çине тайăнарах тăрса.

— Салам!

— Тавтапуç!— терĕмĕр харăсах.

— Правленин хисеплĕ членне тайма пуçăм,— сăмах хушрĕ пирĕн аслă юлташ та.— Тархасшăн апата килĕр, чĕнетпĕр.

— Ларас, ларас-с, апатран аслă пулма хушман.

Мучи пирĕнпе юнашар майлашса ларчĕ. Ăна часах тирĕкпе яшка, пăтă антарса пачĕç. Пĕр кашăк тутанса пăхсанах Кириле мучи апата мухтама тытăнчĕ.

— Ай-ай, тутлă пĕçернĕ. Ай, тамаша-а, чутах чĕлхене çăтса ярат-тăм-м...

Эпир савăнатпăр, шавлатпăр, кулатпăр. Кириле мучи çиме чарăнсан куçне чеен вылятса илчĕ, мăйăх икĕ вĕçне те пĕтĕрсе аврĕ. Кашăкне хучĕ те:

— Сире хыпар пĕлтермесĕр апачĕ анмасть,— терĕ.

— Хыпар?

Самантра мучи тавра кĕшĕл пуçтарăнтăмăр.

— Хыпар тесен, хыпарах та мар-тăр-р,— ерипен пуçларĕ сăмахне, тем аса илнĕн.— Колхоз кăçал халиччен ӳстермен кукурузă вăрлăхĕ илсе килчĕ. Выльăх валли сĕткен апат шыратпăр-çке. Сăнаса пăхни тивмест. Акасса акрăмăр-ха. Правлени çапла йышăнчĕ: кукурузă пăхса ӳстерме сире, шкул ачисене, хушас. Пĕлетĕр-çке хăвăрах, колхозра çын сахал, пур çĕре те ала çитмест. Паллах, канешнĕ, вăл тирпейлĕ, тăрăшса тумалли ĕç. Шаливали юрамасть. Шухăшласа пăхăр, каллĕ-маллĕ виçĕр.

Сасартăках эпир ним те калаймарăмăр, пăхатпăр е пăхмастпăр тесе те пĕлтереймерĕмĕр, çăвара шыв сыпнă пек, чĕнместпĕр.

Микки пирĕн çине ăшшăн пăхса йăл кулчĕ. Вăл пăхнине эпĕ çапла ăнлантăм: «Мĕн, эсир хăраса ӳкрĕр-и? Паллах, пăхатпăр». Вара эпĕ кăшкăрса ятăм:

— Пăхатпăр, пăхатпăр!

— Авельпе эпĕ те килĕшетĕп,— терĕ Микки.— Колхоз правлени пире çавăн пек ĕç хушса панине эпĕ чыс вырăнне хуратăп. Эпир комсомолецсемпе пионерсем ĕçрен хăрама тивĕçлĕ мар. Çапла-и?

— Килĕшетпĕр.

— Кукурузăна хамăр пăхатпăр!

— Кузьма Афанасьевич пире кукурузă мĕнле пăхмаллине калĕ.

— Шкулта вĕрентнĕ вĕт!

— Вăл мĕн, урокра çеç, халĕ вара уйра, чăн-чăн кукурузă!

Шăв-шав пуçланса кайрĕ. Кашниех хăй шухăшне калать.

— Ачасем тĕрĕс шухăшлаççĕ,— пĕлтерчĕ полковник.— Килĕшетĕп сирĕнпе. Паçăр кăна кунта юласшăн калаçаттăр. Кăмăла кура — телей. Эпир сирĕнпе ĕç лагерĕ тăвăпăр.

«Пурăнма кăна ирĕк паччăр кунта. Йывăр пулин те, ĕçлетĕп» — шухăшлатăп хам.

— Юрĕ. Правление, канешнĕ, хаваспах, пĕлтеретĕп. Ачасем килĕшрĕç тейĕп,— ура çине тăчĕ Кириле мучи.— Ас тăвăр-р, кураксенчен сыхлăр-р. Курак питĕ юрататъ, тет, ăна. Кукурузă халь-халь шăтса тухмалла.

Кириле мучине питĕ шантарса ăсатса ятăмăр. Каç пуласси инçе-ха. Микки сĕннипе çĕнĕ урам варне вăрăм шалча лартрăмăр. Ун тăрне ачасем чаплăн хĕрлĕ ялав вĕлкĕштерсе хăпартрĕç. Тĕлĕнмелле лагерь уçăлнă ятпа каçченех ывăнма пĕлмесĕр вылярăмăр.

Темшĕн-çке пирĕн кукурузă шăтса тухмасть.

— Кая юларах акнă ăна, ĕлкĕрĕ-ха,— тет Кузьма Афанасьевич.— Эсир выльăр, кулăр.

Хăй, йăпатнă май, пире, Миккипе иксĕмĕре, кукурузă хирне тĕрĕслеме ярать.

Ана тăрăх пыратпăр. Утнăçемĕн çĕрелле шăтарасла пăхатпăр: кукурузă çĕр айĕнчен пуçне кăларман-и?

— Часах хĕрӳ ĕç пуçланать,— калаçать çуммăн утакан Микки.— Пĕлетне, Авель, пионерсем çак ĕçре хăйсен чунне кăтартаççĕ ĕнтĕ.

— Мĕнле майпа?— ăнланаймасăр ыйтатăп.

— Кам комсомола тивĕçли тӳрех паллă пулать. Еçре пурте курăнать, шăллăм.

— Лагерьте пур пĕрех комсомола илместĕр вĕт?

— Илетпĕр, Авель, илетпĕр. Дружинă совечĕ ĕçлет, членĕсем пурте пур. Унта икĕ пионер рекомендаци ыйтса заявлени панă та.

— Камсем?

— Елиçпе Таня.

Юлташ пĕлтернĕ хыпар мана пĕр савăнтарать, пĕр хурлантарать. Пирĕн ĕнтĕ хамăрăн комсомол организаци пулать. Ку вара мана питĕ хĕпĕртеттерет. Хамăн çуралнă кун халех çитменни мана кӳрентерет.

— Тăприне чакаласа пăхас мар-и,— сĕнчĕ Микки, пуçланă калаçăва пачах урăххи çине куçарса.

Микки чĕркуçленчĕ. Эпĕ те унпа юнашар лăпчăнса лартăм. Патак татăкĕ тупрăмăр та тăпрана сиретпĕр. Калча курăнчĕ. Вăл шурă тымар евĕрлех.

— Кукурузă калчи ку!— çухăрсах ятăм эпĕ.—Анчах мĕншĕн асаплă ӳсет-ха вăл? Çĕр питне мар, мачча хăмине пырса тĕреннĕ тейĕн, шăтарса тухаймасăр кукленсе, авкаланса ларнă. Мĕншĕн çапла-ши? Мĕн сăначине Кузьма Афанасьевича каласа парсан, хамăр тавçăрса илейменшĕн кулянтăм. Урокра вĕреннине маннă. Çĕр

пичĕ ывăс пек хытса ларнă, ăна йывăç сӳрепе сӳрелемелле. Эпир çапла турăмăр та. Халĕ ĕнтĕ ĕмĕрне те манас çук. Сӳреленĕ хыççăн тепĕр куннех пирĕн кукурузă шăтса тухрĕ. Эпир ăна кураксенчен хытă сыхлама тытăнтăмăр.

### САВĂНĂÇЛĂ ВĂЙĂ

— Ту-ту-ту! Итлĕр! Пурте пĕр тĕле пухăнăр! — чĕнет пире горн. Палаткăсенчен пĕри те тепри, куянсем пек, йăлт та йăлт сиксе тухатпăр. Самант та иртмерĕ, ачасем штаб умне çитсе те тăчĕç.

— Ăмăрту ирттеретпĕр!— пĕлтерчĕ пире Елиç.

Лагерьте пурăнса Елиçе аслă пичче вырăннех хума тытăнтăмăр. Тӳлек ача вăл. Хăнăхсах çитрĕм ăна. Мĕн чухлĕ спорт вăййи вĕрентмерĕ пулĕ вăл. Палаткă карма, костер чĕртме тата ытти лайăх вăйăсем вĕрентрĕ. Ăçтан хăй çавсене пĕлет-ха? Вăл иртнĕ çул Çĕрпӳри пионерсен лагерĕнче каннă иккен.

— Спорт ăмăртăвĕ ирттеретпĕр-и?— ыйтатпăр эпир унтан.

— Ку ăмăртăва пурте кĕрет,— ăнлантарать пире Елиç.— Çак вăйăра çĕнтерекенсене чăн-чăн спортсменсем, туристсем, санитарсем, теме юрать.

Елиç ăмăрту условийĕпе паллаштарчĕ. Вăл хушнă тăрăх пилĕк çынтан командă уйăртăмăр. Командăри ачасене кашнинех хăйне уйрăм вăрттăн ĕç тума хушнă.

Пĕри теприн патне çитиччен, унта ăна мĕн кĕтнине пĕлмест. Анчах та пирĕн кăтартнă вăхăтра, кăтартнă тĕле, пилĕксĕмĕрĕн те пĕрле çитмелле. Ĕç кунпах вĕçленмест-ха.

Манăн вăрманта ал туйи пысăкăш патак тупмалла. Чылай шыраса çӳрерĕм вăрманта. Горн сасси янрарĕ. Ку ĕнтĕ ăмăртун чи малтанхи тапхăрĕн вăхăчĕ иртсе пынине пĕлтерет. Çак вăхăтра эпĕ патак тупса тухрăм та ах вирхĕнтĕм малалла. Пурте мана вăйлăрах чупма ĕшкĕртеççĕ.

— Мĕн мĕшĕлтететĕн паян?— илтетĕп аякрапах пысăк юман çумĕнче кĕтсе тăракан ачаран.

Пашкаса çитрĕм. Куратăп, юлташ умĕнче шыв тăптулли тултарнă витре ларать.

— Чик часрах патака витре хăлăпне,— тет вăл васкатса.— Атя, йăт хăвăртрах, каяр!

— Ăçта?

— Хуран айне чĕртме!

Апла пулсан пире çатрака кирлĕ. Ăна виççĕмĕш ачи пухнă иккен. Вăл пирĕнтен тепĕр аллă метрта тăрать. Витрене йăтса малалла чупатпăр. Çитрĕмĕр.

— Эсĕ ывӑннă. Ил, ав, çĕрте выртакан çатракана,— терĕ виççĕмĕш ачи.

Пирĕн тăваттăмĕш ачи патне каймалла. Мĕншĕн? Унта типĕ çулçăсем иккен. Унсăрăн кăвайт часах чĕртме çук. Виççĕмĕр те малалла ыткăнатпăр. Çитрĕмĕр. Кĕтекенни типĕ çулçă самаях пухнă. Кăвайт чĕртме шăрпăк çук. Ку пиллĕкмĕш ачара. Татах аллă метр чупмалла. Тĕмсĕрлетпĕр. Мĕн амакĕ? Çĕр çинче Эва выртать.

— Шăрпăк пар хăвăртрах!

— Шăрпăк ман çумра мар.

— Ăçта эппин?

— Хамăр япаласем упранакан çĕрте.

Эпир Эвăна тарăхрăмăр.

— Мĕн выртан, атя, эппин, часрах.

— Эпĕ утаймастăп, курмастăр-и-мĕн? Йăтăр мана?— хушать Эва. Эпĕ хăрасах ӳкрĕм. Унăн икĕ урине те бинтпа çыхнă. Мĕн пулнă? Анчах тĕпчесе тăма вăхăт мар.

— Авель, çĕкле,— хĕтĕртрĕç мана.

Эвăна çурăм çине лартрăм та—(аманнă çынна çапла çĕклеме вĕрентнĕччĕ пире врач) малалла!

— Хăвăртрах, мĕн мĕшĕлтетен!—тет мана Эва.—Кая юлатпăр. Ĕлкĕреймеспĕр, мала тухаймастпăр.

— Горн пуласси инçе мар.

— Ут хастарлăрах!— хистеççĕ мана юлташсем те.

Темрен муртан ура çакланчĕ-çке, чикеленсе ӳкрĕм. Эва ман пуç урлах ыткăнса кайрĕ.

— Эх, упа!— терĕ вăл, манран кулса.

Тинех тавçăрса илтĕм. Ара, ку чăн мар-çке. Эва аманман. Вăййи çапла. Эвăна каллех çурăм хыçне лартатăп та малалла талпăнатăп. Эва халĕ пĕрре те йывăр мар пек туйăнчĕ.

Çитес çĕре çитрĕмĕр. Пирĕн чей вĕретмелле тата палаткă карса лартмалла. Витрене хăпăл-хапăл икĕ юплĕ шăчăсем урлă хунă патак çине çакрăмăр та хуран айне çатрака хурса чĕртме пикентĕмĕр. Васканипе пĕтĕм алура çыхланать. Эпĕ, шăрпăк чĕртсе, çап айне чикрĕм. Çук, чĕрĕлмерĕ, çавăнтах сӳнчĕ.

— Мĕн тăван эс? Айванла пулса тухать!— тет Эва.— Маннă-и-мĕн эсĕ: кăвайт чĕртме пире мĕн пурĕ те икĕ шăрпăк çеç панă, халĕ ĕнтĕ тепре çеç юлчĕ. Типĕ сулçă мĕншĕн пухнине пĕлместĕн-им?

Эпĕ тепре чĕртме тытăнтăм. Ку хутĕнче çулăмĕ йăлт, йăлт курăнчĕ, унччен те пулмасть шала кĕрсе çухалчĕ, тĕтĕм йăсăрланса тухать.

— Хамах чĕртетĕп. Эсир хăвăртрах палаткă карма тытăнăр,— хушрĕ Эва пире, вучах айне вĕре-вĕре.

Хăпăл-хапăл кутамккаран палаткă кăлартăмăр. Вăл çĕр çине шапа пек сарăлса выртрĕ. Тăвată кĕтесри кантрисене туртса, çĕр çумне çапнă шалчасенчен çыхса çирĕплетрĕмĕр. Мĕн ăнмарĕ? Палаткă çĕкленмест.

— Йăнăшнă эсир. Малтанах умне туя çине çирĕплетсе лартмалла,— вĕрентет пире вăйă ирттерекен комисси членĕ, комсомолец Микки.

Эх, эпир те çав, вĕреннине маннă. Хăнăху çитмест тата тулăксăр хыпаланни чăрмантарать. Палаткăна тепĕр хут сӳтсе лартмалла пулчĕ.

Ку темĕн хуран айĕнчи кăвайт та шартлатса çунма тытăнчĕ. Тепĕр темиçе самантран чей те вĕрерĕ.

Эпир хамăр карнă палаткă умне чей ĕçме ларсан

тата темиҫе вăхăтран тин горн сасси янăрарĕ. Вăхăтра ĕҫе туса пĕтерни савăнтарчĕ.

Пирĕн хыҫҫăн ытти командăсем ăмăртрĕҫ. Вăйăра пирĕн командă иккĕмĕш вырăна тухрĕ. Пур пĕрех эпĕ питĕ хĕпĕртерĕм. Савăнăҫлă вăйă, кăмăлтан вылярăм.

## КОММУНИСТ ПАНĂ РЕКОМЕНДАЦИ

Ҫерем ҫинче, вată юман айĕнче, темиҫе ача ларать. Вĕсем пурте — дружинă совечĕн членĕсем. Совет ларăвĕ пуҫланмалла. Хăйсен ушкăнне пырса ларма никама та чармаҫҫĕ. Пире чĕнчĕҫ те. Ҫапах пурте пыма пултарайманни савăнтармасть. Чылайăшсем ĕҫре: кукурузă сыхлаҫҫĕ, апат пĕҫереҫҫĕ. Эпир вара, ĕҫрен пушаннисем, совет ĕҫне хутшăнма пултарнăшăн питĕ хавас.

Кун йĕркинче — пурне те хумхантаракан ыйту: комсомола кĕме рекомендаци парасси.

Малтанах Таня ыйтăвне вуласа пачĕҫ. У-у-х пуҫланчĕ тăвăл. Пĕри апла, тепри капла калать. Пĕрисем рекомендаци парас, теприсем парас мар, теҫҫĕ. Таня аван вĕренет. Ку енчен илсе пăхсан, вăл комсомола кĕме тивĕҫлĕ. Анчах комсомола кĕме ку ҫителĕксĕр. Комсомола малти ретри ҫамрăксене ҫеҫ илеҫҫĕ. Таньăн ашшĕ таса кăмăллă, ретлĕ колхозник мар. Вăл колхоз ĕҫĕнчен пăрăнать. Ĕҫке ярăннă этем. Тем туянать, сутать. Ку вара хĕрне комсомолкă пулма чăрмантарать. Пионерăн ҫитменлĕхсемпе килĕшме юрамастех. Ҫавăнпа пионер та вăл.

— Пионер ахаль ҫынах. Мĕн тăвайтăр вăл ашшĕне хирĕҫ?— терĕ Таня.— Вăл манăн атте-ҫке.

Ҫак сăмахсем пионерсене пушшех вĕрилентерсе ячĕҫ. Тӳрех паттăр пионера — Павлик Морозова — аса илчĕҫ.

Юлашкинчен пирĕн аслă тус Кузьма Афанасьевич сăмах илчĕ.— Кунта тухса каланă ачасемпе нумайăшпе килĕшетĕп. Ашшĕне ҫĕнме пĕччен йывăртарах ĕнтĕ ăна. Акă эпир тĕплĕнрех шутлăпăр та Таньăна пулăшăпăр.

Таньăна рекомендаци пама тăхтас тесе йышăнчĕç.

Иккĕмĕш ыйту — Елиçĕн. Ĕç пачах урăхла. Кăмăллă. Иккĕллĕ шухăш пачах çук. Тухса калакансем пурте ырлаççĕ. Кам килĕшмест пулĕ кунпа? Кукурузăна сӳреленĕ чух мĕнлерех ĕçлерĕ вăл. Ывăнма пĕлмерĕ. Ачасене ĕçре шӳтлесе те кулса хавхалантарать. Вăйăсене тата мĕнле йĕркеллĕ те савăнăçлă ирттерет! Ăмсанса кăна тăр.

Дружинă совечĕ Елиçе комсомола кĕме рекомендаци пама йышăнчĕ. Тĕрĕс турĕ.

Кузьма Афанасьевич вара пирĕн чăн-чăн ырă кăмăллă тус. Вăл Совет Союзĕнчи Коммунистсен партин членĕ. Елиçе комсомола кĕме рекомендаци пачĕ. Коммунист панă рекомендаци! Мĕн тери телей! Коммунист панă рекомендаци мĕн тери хаклă, вăл икĕ комсомолец панă рекомендацие тăрать.

Лару иртсен, эпир каллех Миккипе пĕрле. Савăнăçлă вăл. Мĕнле чун ан çĕклентĕр. Халĕ ĕнтĕ пирĕн шкулта виçĕ комсомолец. Шăпах организаци йĕркелеме çын çителĕклĕ.

### ХАМ АЛĂ ÇĔКЛЕП

Пирĕн лагерь умĕнчи ана маларах хуп-хура курăнса выртатчĕ. Юлашки кунсенче вара пачах урăхла. Аякран пăхсан вăл ем-ешĕл курăнать. Такам симĕс кавир витсе хăварнă, тейĕн. Кукурузă ӳсрĕ. Икшер те виçшер çулçă кăларчĕ. Туни парка. Çӳллĕшĕ шит пулатех.

Куншăн мухтансан та никам ятлас çук пире. Ара, эпир тăрăшса ĕçленĕрен килнĕ-çке-ха. Малтан кукурузă шăтайманнипе пăшăрхантарчĕ. Эпир ăна сӳрелерĕмĕр. Кун хыççăн кашни ачана аллăшар тĕп уйăрса пачĕç. Ăмăртса ĕçлеме лайăх капла.

Манăн касă хамăн туссенчен аякра. Эпир Алтаким ятлă ачапа юнашар.

Алтаким класра чи хыçалти партă хушшинче ларатчĕ. Унпа час-час калаçман та. Мĕнле кăмăллă ача иккенне пĕлмен. Вăл Микки пек те, Эва пек те мар.

Пире, Алтакимпа иксĕмĕре, кукурузă анин чи аякри кĕтессине хурал тăма уйăрчĕç. Кураксем ыйхă питĕ тутлă чух, тул çутăлса килнĕ вăхăтра кукуруза тапăнаççĕ. Çывăрса кайсан, уйрăмах çав вăхăтра вăранма питĕ хĕн. Çавăнпа пирĕн Алтакимпа иксĕмĕрĕн çĕрĕпе куç хупма юрамасть. Ыттисене чăрмантарас мар тесе палаткăран ерипен тухрăмăр. Алăра вăрăм патаксем. Çитес çĕре çитсе лартăмăр. Пăч-тĕттĕм. Юмахлатпăр, вăхăт ерипен шăвать. Анаслаттарать, çăвар карăлать. Ыйхă килет тÿсме çук. Тăсăлса выртрăм. Часах манăн куç çине тăмана пырса ларчĕ. Тĕлĕрсе те кайрăм.

— Авель, тăр-ха. Темĕскер куçса килет кунталла,— лăс-лăс силлет мана çурăмран Алтаким.

— Мĕн?— ыйтатăп ыйхă тĕлĕшпе.

— Усал мар-ши?

— Ăçта?

Алтаким мана сăрт çинелле, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ тĕлелле кăтартать.

— Тарар-р хăвăртрах,—хистет мана. Хăйĕн сасси урмăшнă. Чăнахах хăрать пулас.

— Алтаким, ниушлĕ усал пуррине ĕненен?— лăплантарма тăрăшатăп ăна.

— Хăр-ратăп, т-ту-упа-та,— тет. Хăй чĕтрет. Вăл чăнах та хăрушă япала курать-тăр.

Унччен те пулмарĕ, ман юлташ лагерь еннелле тапса сикрĕ. Манăн та ыйхă таçта кайса кĕчĕ. Куç-пуç чарăлсах кайрĕ. Мĕн амакĕ? Шикленсе пăхатăп тус кăтартнă еннелле... Çил кассăн-кассăн вĕрсе илет. Чим, чăнах, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ çĕрте пÿрт пысăкăш мăнă пичке мăкăлтатса, йăванса килнĕн туйăнать. Мĕн япала ку? Кирек мĕн пултăр, вырăнтан тапранмастăп. Мăкăлтатрĕ, мăкăлтатрĕ, ман пата тÿнсе килесси-мĕнĕ пулмарĕ. Çанталăк лăш пулчĕ. Пите лĕп сывлăш хумĕ лăпкать. Тул çутăлса килет. Çуллахи каç ытла та кĕске иккен. Вăрман енчен пĕр курак килсе ман пуç тавра çаврăнса вĕçсе иртрĕ. Ку курак разведчик пулчĕ. Кăшт тăрсан

кĕтӳпех тапăнса килчĕç. «Ан та килĕр! Пĕр çулçă та сăхтармастăп», тесе патак вĕçне тутăр çыхса кăшлататăп.

Унталла-кунталла чупса çӳресе, Алтаким сехрине хăптарнă япала çинчен мансах кайнă. Хĕвел çӳле хăпарсан, кураксем сырăнма пăрахсан тин пычĕ ман тус.

— Пăх та кур, санăн усалу мана пĕртте тивмерĕ. Мĕнрен хăрарăн вара эсĕ?— ыйтатăп хайхискертен.

— Тем пулчĕ.

Қаçхи мыскарана аса илсе тепĕр хут çав енне тинкерсе пăхрăм.

— Санăн усалу мĕн иккенне пĕлтĕм! Ав вăл, куратна?

— Йывăç-и?— тет йĕрсе ярасла.

— Паллах. Çил вĕрнипе йывăç тăрри сулланнă. Эх, эсĕ те çав... Хăравçăшăн çӳп те капан пек курăнать, тет.

— Тархасшăн, ачасене ан кала. Атту вĕсем манран кулаççĕ. Кузьма Афанасьевич ан пĕлтĕрччех.

— Юрĕ-çке, каламăп,— лăплантаратăп ăна.

Қаçхине ахальтенех çил вĕрмен иккен. Вăл кăнтăр енчен çумăр хăваласа килнĕ. Çумăр çуни ӳсен-тăраншăн аван-ха, нӳрĕ сĕтек кирлĕ.

Қукурузă ӳсет. Çакăнпа пĕрлех çумăр пире ĕç те тупса пачĕ. Çумăр çунă хыççăн кукурузă тĕпĕ тавра çум курăкĕ тапса тухрĕ. çĕр çине йĕп чикме ниçта вырăн тупаймăн.

Қукуруза çумран тасатмалла. Çитетĕп хам участок çине... Айтăрах! Такам çум курăк пуçĕсене татса вăтăрса тухнă. Пăхатăп, Алтакимăн та çавах. Қам ашкăннă кунашкал?

Алтаким шырлан пуçĕнче ларнă. Ман сасса илтсе пычĕ.

— Мĕнле ашкăннă? — терĕ вăл.— Санăн участокна çумран тасатнă. Кукурузă шыв нумайрах ĕçтĕр, вăйлă ӳстĕр тенĕ, эсĕ пур, кăмăлсăр.

— Эсĕ-и кăна? Эх, вĕтĕлти,— тетĕп ăна.—Ĕçӳ çыпăçуллă пулайман.

— Çынсен йӑранӗ çинче çум ашкӑрса ларать. Пирӗн таса. Кузьма Афанасьевич ырлатӑрччӗ.

Тек кӳршӗпе хурлашмарӑм. Юлташа мӗншӗн кӳрентерес? Тытӑнтӑм курӑк тунисене тымарӗ-мӗнӗпех тӑпӑлтарма... Чӑнах ӗç икӗ хут йывӑртарах пулчӗ, мӗншӗн тесен хӑш-пӗр курӑк тунисене тӗпӗнченех татнӑ, ывӑçа кӗмеççӗ.

Çум çумласа пӗтертӗмӗр, кукурузӑна тасатрӑмӑр. Вара пире Кузьма Афанасьевич пӗрле пухса малаллахи ӗçсем çинчен каласа пачӗ. Пирӗн кукурузӑ тавра çӗрне кӑпкалатса çемçетмелле. Унтан апат памалла. Анчах шел, колхозӑн кӳрсе килнӗ им-çам пӗтнӗ. Кӑштах кӗтме тивет.

Кам пулас умӗн, лагере темиçе çын хӑварса, яла катмаксем илме кайрӑмӑр. Килте пулманни нумай пулать. Пурте тунсӑхласа çитнӗ. Мунча кӗрес текенсем те тупӑнчӗç. Вара килте çӗр выртма калаçса татӑлтӑмӑр.

Лагере тепӗр кунне каçалапа тин çитрӗмӗр. Ирхине катмак çӗклесе хама уйӑрса панӑ йӑран çине кайрӑм. Алтаким пӗрер касӑ кукурузӑ хӑйӗнне те манӑнне те купаланӑ.

Кӳршӗ мана хавас куçпа кӗтсе илчӗ. Хӑпаланса тухнӑ аллине кӑтартать. Унпа иксӗмӗрӗн йӑран çинчи кукурузӑ ашкӑрса ӳсесси çинчен çӗкленсе калаçать. Тата вӑл ӗнерех темиçе тӗпе хӑйӗнне те, манне те апат панӑ. Имçамне пӗр витрене яхӑн амӑшӗнне, никама кӑтартмасӑр, вашкӑртса тухнӑ-мӗн.

— Эх, Кузьма Афанасьевич ырлатӑрччӗ,— тет хӑй.

Ӗçри юлташӑма эпӗ тав тӑватӑп. Тӗрӗссипе илсен, вӑл купалани, апат пани манӑн кӑмӑла каймасть. Ытла та тирпейсӗр купаланӑ. Им-çамӗпе кукурузӑ çулçисене вараласа пӗтернӗ. Анчах та хам кӑмӑлсӑррине кӑтартмастӑп, ӑна кӳрентерес килмест. Темиçе кун иртсен пӑхатпӑр, Алтаким апат панӑ кукурузӑ тӗпӗсем хӑрма пуçларӗç. Çулçисем шурӑхса типсе пыраççӗ. Хуйхӑ çитрӗ, мӗн пулчӗ-ши? Васкасах Кузьма Афанасьевича чӗнсе, чирлӗ

кукурузăсене кăтартатпăр. Мĕнле ĕçленине, мĕнле пăхнине ыйтса пĕлчĕ.

Тĕрĕс мар апат панă. Алтаким урокра вĕреннине маннă. Апатлантарнă чух кукурузă çулçисене им-çампа тивертме юрамасть. Çунтарса ярать. Апата кукурузă тĕпне çеç сапмалла.

Алтаким ырланине илтесшĕнччĕ, пулмарĕ.

Çирĕм тĕп кукурузă хăрать. Шутласа пăхрĕç те темиçе килограм вăрлăхлăх кукурузă çухалнине пĕлчĕç. Экскурсие пынă пек пĕтĕм ачасем пухăнчĕç. Вĕсемшĕн мĕн, тăрăхласа пултăр.

— Ĕçе кун пек хăварма юрамасть,— тет Микки комсомолец,— юлташсене пулăшмалла.

Мĕнле пулăшмалла? Никам та ним те калаймасть.

Ачасем саланчĕç. Эпир Алтаким, Эва, Микки шырлан пуçне ларса юлтăмăр. Хуйхăрса ларнă вăхăтра пирĕн пата Таня пычĕ. Пире пулăшасшăн хĕрача. Килне чĕнет. Вĕсем патне кайма темшĕн чун туртмасть. Ашшĕне, Элехван пиччене, килĕштерместпĕр, путех çавăнпа пулĕ. Анчах ним те тăваймăн. Нуша шурă кулач çитернĕ, тенĕ ĕлĕк ваттисем. Тиркештерсе тăма юрамасть. Пурте пĕрле кайрăмăр.

Таня пире хăйсен пахчине илсе кĕчĕ. Ним те калаймăн, илемлĕ пахча! Йывăç тем чухлех. Темиçе вĕлле. Кунтах сăнав йăранне куртăмăр. Шăкăр-р рет кукурузă ÿсет. Çÿллĕ, хÿхĕм. Таня çĕнĕ сорт кукурузă туса илессипе пĕлтĕртенпех ĕçлет имĕш. Калчисене парникре, хут стакансем ăшĕнче шăтарнă. Парник умне пырса тăрсан, ăна хамăр куçпах куртăмăр. Халĕ те ав, темиçе хут стаканра кукурузă калчи упранать. Инкек-синкек пуласран хăварнă иккен вĕсене парникре Таня. Каламасăрах ăнлантăм. Çак кукурузă тĕпĕсене вăл пире парнелет. Ырă кăмăллă хĕрача мар-и ĕнтĕ Таня? Эх, пĕр-пĕрне ытла та сахал пĕлетпĕр. Мĕншĕн çакăн пек пионера комсомола кĕме рекомендаци парас мар? Теприпче хам алă çĕклетĕп уншăн.

Парнеленĕ хут стаканти кукурузă калчисене пилĕксĕмĕр те тăватшар тĕп йăтса уя, хамăр участока таврăнтăмăр. Алтаким ним чĕнмест, хăйне пысăк айăпа хурать.

Хăрнă кукурузă тĕпĕсене тăпăлтарса ывăтсан, çĕннине лартрăмăр. Вирлех ĕçлеме лекрĕ вара. Апла пулин те, пĕччен мар, Эвăпа Микки пире шефа илчĕç. Таня та пырсах тăрать. Пурне те пĕлет, вĕрентет. Эй-эй, тем тесен те, вăл агроном пулатех. Агронома çитеймесен, уйхир ăсти пулĕ.

Куçарнă кукурузă тĕпĕсене уйрăм пăхатпăр. Ир-каç ăшă шывпа шăваратпăр. Çĕрне яланах çемçетсе тăратпăр. Апатне ытларах паратпăр. Ăмăртса ӳсрĕç тейĕн — юнашарти кукурузă тунинчен темĕн чухлĕ вăрăм.

Çапла ирттерсе ятăмăр ăш пиççине. Кун хыççăн Алтаким пĕрре те чăрсăрланмарĕ, пирĕнтен хăпса ĕçе пĕли-пĕлми пăсмарĕ.

Уйăх иртсен, эпир хамăр лагерьпе сыв пуллашса киле таврăнтăмăр. Текех пирĕн пулăшу кирлĕ мар. Кукурузă вăй илчĕ, ăна ярăнса ӳсме ним те чăрмантараймарĕ.

Эпир мĕнле ĕçлени çинчен колхоз пухăвĕнче Кузьма Афанасьевич тухса каларĕ. Ырларĕ вăл пире. Ырлани савăнтарать.

## ПУЛЬĂПА ШĂТАРНĂ ХУПЛАШКА

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа темиçе уйăх та иртрĕ. Эпир çиччĕмĕш класра вĕренетпĕр. Пирĕн класри комсомолăн пуçламăш организаци самаях ӳсрĕ. Унта темиçе комсомолец ĕнтĕ. Вун тăватă çул тултарсан, мана та комсомола илчĕç. Билет илме райкомола виççĕн: Эва, Микки, эпĕ кайрăмăр.

Хам савăнăçăма киле илсе таврăнсан, ун çинчен чи çывăх çыннăма пĕлтертĕм.

— Анне, мана комсомола илчĕç. Акă комсомол билечĕ.

— Тĕрĕсех калатăн-и? Кăтарт-ха!— тет вăл.

Манăн комсомол билетне илсе пăхсан, тĕлĕннипе анне шалт хытса кайрĕ.

— Ара, хăш вăхăтра ӳсрĕн эсĕ, ачам, комсомола юрăхлă пулмалăх?— тет. Хăйĕн те савăннипе, те кулян-нипе куççулĕ шăпăрах юхса анать,— тин çех пĕчĕккĕччĕ вĕт-ха эсĕ? Тăлăх пуснă пулĕ тесе кулянаттăм та.

Анне эпĕ ӳснине ĕненмесĕр кăмака çумне илсе пыр-са тăрататć. Унта тахçанах ман пӳ çӳллĕшне виçсе карт-лани пур.

— И-и-и, кур-ха ăна, мĕнлерех тăсăлса кайнă. Эх, ашшĕ çук, ашшĕ çук. Мĕн тери савăнĕччĕ. Çын пулчĕ вĕт, çын! Чим-ха, комсомол ретне тăнă ятпа сана памал-ли пур...

Васкасах анне арча уçать. Ун тĕпĕнчен чечеклĕ енчĕк туртса кăларать. Çыххине салтнă май хăй çаплах кала-çать:

— Аçу парни, ачам. Ăна аçу вилсен фронтран ярса панăччĕ... Чĕре çумĕнчи чи çывăх япали пулнă вăл. Чĕ-рине те, комсомол билетне те пĕр усал пульă шăтарса тухнă. Пĕл аçу мĕнле çын пулнине. Куратăп-ха, эсĕ те аçу пек маттур пулатăн. Халĕ ĕнтĕ саншăн пăшăрханма кирлĕ мар.

Пульăпа шăтарнă хĕрлĕ питлĕ, ВЛКСМ тесе çырнă хуплашка тыттарать мана анне. Эпĕ ăнлантăм: атте çак хĕрлĕ питлĕ хуплашка ăшĕнче хăйĕн комсомол билетне упранă. Вĕсене Тăван çĕршыв тăшманĕ аллинчен тухнă вилĕм кăна уйăрнă. Хамăн комсомол билетне илетĕп те пульăпа шăтарнă хуплашка ăшне меллĕн чиксе хуратăп. Туятăп: вăл мана Тăван çĕршыва атте пекех юратма хушать, уншăн кирек хăçан та хам пурнăçа пама хатĕр тăма вăй-хал парать.

#### ТАНЯ ТАТА КОМСОМОЛКĂ

Комсорг пирĕн — Микки. Унăн хăйĕн пĕр тĕллев — класри ачасене пурне те комсомола илесси. Кăçал шкула Çут ĕç министрĕн приказĕ килнĕ. Çичĕ çул вĕренмелли

шкултан вăтам шкул пулмалла. Вăтам шкула пирĕн клас малтан кĕрет. Вăтам шкулăн 8-мĕш класне пурин те комсомолец пулса куçмалла. Ҫомсомол класĕ теччĕр.

— Таньăна комсомола илме хатĕрлемелле,— тет Микки.

Ҫомсомола кĕме вăл хатĕр. Вăл хăйне ĕçре кăтартрĕ. Таньăна курсанах мана çуллахи асран кайми лагерь, хамăр çитĕнтернĕ кукурузă уйĕ куç умне тухать. Ĕçре хăйне лайăхпа кăтартрĕ. Юлташсене пулăшать. Ҫомсомола кĕме тивĕçлĕ.

— Ашшĕ аван мар çын. Ҫун çинчен эсир хăвăрах пĕлетĕр,— тет Микки.— Паллах, Таня ашшĕне юсасшăн, анчах вăйĕ çитмест. Ҫак ĕçре пирĕн, комсомолецсен, Таньăна пулăшмалла.

Ҫапла калаçнă хыççăн Таня ашшĕ, Элехван пичче, колхозри стена хаçатне — йĕплĕ çăмаха лекрĕ.

Нумаях та пулмасть комсорг, хаçатра вуласа, комсомолецсен çĕнĕ пуçарăвĕ çинчен пĕлнĕ. Вара ăна çине тăрсах хамăр хушăра сарма пикенчĕ. Шăматкун, урок-сем хыççăн, комсомолецсене пухрĕ те:

— Малашне эпир милиционерсене пулăшакансем — дружинниксем — пулăпăр,— пĕлтерчĕ вăл.— Ыран пасара тухатпăр, унти йĕркелĕхе ас тăватпăр.

Хăй çавăнтах пире хулсене çыхма хĕрлĕ хăмач татăкĕсем пачĕ.

Пасара тухсан, мĕн тумаллине часах куртăмăр. Ав вăл, Элехван пичче, ӳсĕрскер, магазин умĕнче çынсемпе чăркăшса тăрать. Милиционер пычĕ.

— Ҫав кирлĕ ăна, милиционер тыттăр та кайтăр, ĕçĕ те пĕтнĕ,— тет пирĕнтен пĕри.

— Элехван пичче милицире çывăркаласа намăсне курканă-ха,— пӳлчĕ Микки юлташ сăмахне.— Атьăр-ха урăхларах тăвар.

Эпир Элехван пиччене çавăтрăмăр та килне ăсатса хăвартăмăр. Ҫăмăлĕ шутсăрах çемçелчĕ вара хăйĕн, пире тав туса çитереймест.

Темиçе кунтан эпир Миккипе ăна урамра тĕл пултăмăр. Пире чĕнсе илчĕ те ыйтрĕ:

— Таньăна ман пирки комсомола илмеççĕ тени тĕрĕсех-и вăл?

— Эсир илтни чăнах, Элехван пичче,— тавăрса каларĕ Микки.— Сирĕн хăвăр хĕрачуна хисеплесчĕ.

— Ну, эс ан вĕрент мана,— терĕ те çавăнтах хăпса кайрĕ.

Ним ăнланмасăр юлтăмăр: те çилленсе кайрĕ, те ахаль çеç çавăн пек хăтланчĕ. Анчах тепĕр куннех Элехван пичче колхоза ĕçе тухнă. Вăл уя торф кăларнă. Кайран та вăл ĕçрен татăлмарĕ. Элехван епле кунашкал хăвăрт улшăннинчен колхозниксем те вара шалтах тĕлĕнчĕç.

Таня пирки комсомол организацине ырă хыпарсем çеç килсе тăчĕç. Урăх мĕн кирлĕ тата? Вăхăтра тӳрленме пĕлни пысăк пĕлтерĕшлĕ япала вăл!

Кĕтнĕ вăхăт çитрĕ, ĕнтĕ Таня та комсомолкă.

### ПИРĔН ЭВА

Микки ĕмĕчĕ хуллен пурнăçа кĕрсех пырать. Пирĕн класри ачасенчен халĕ камăн кăкăрĕ çинче комсомол значокĕ çуталса тăмасть? Пĕртен пĕр хĕрачан çеç — Эвăн. Унччченхи пекех Эва мăйĕнче виçĕ кĕтеслĕ хĕрлĕ галстук. Анчах та Эва чунĕпе те, ĕçĕпе те тахçанах комсомолкă. Ун пирки пăшăрханма кирлĕ мар. Çулĕ çеç çиттĕр. Вара комсомол ретне тăратех. Шкулти чи пултаруллă санитаркă пулнăшăнах ăна комсомолкă теес килет. Çавăнпа та шкул аптекине ăна шанса панă. Пӳрнене кассан-тусан, Эвăран меллĕрех никам та çыхса яма пултараймĕ. Эх, мĕн каласси пур. Малтанхи пулăшу пама пĕлесси питĕ кирлĕ ĕç. Малтанхи пулăшу майне пĕлмен пирки пирĕн класри Çемук инкек курса лăрнă. Каласа парам.

Пурте аванахчĕ. Коридорта кĕçĕннисене вăйă выляттараттăмăр. Пысăк перемена вăхăчĕ-çке. Чипер вылянă

çёртех пирён класра хыттăн йынăшни илтёнчё: кам-ши? Микки, Эва, эпё класа чупса кётёмёр. Аптечкă умёнче Çемук йынăшса, макăрса ларать. Мён пулнă? Акă мён пёлтёмёр эпир: Çемук — класра дежурнăй. Кёленчере чернил пётнё. Чернил кёленчине илет те кухньăна каять. Унта пысăк хуранта шыв вёрет. Курка илсе, вёрекен шыва ăсать. Мелсёр тытнă пуль-и куркине? Шывё ура çине шăпăрах тăкăннă. Каялла класа уксахласа чупса пырать. Тўсейменнипе пушмакёпе чăлхине хывать. Вара ўчё хёрелсе, шурă хăмпăллăн хăпаланса тухнине курать. Çемук суранне мёнле сиплемеллине пёлмен. Ыратнипе ним тума аптраса аптечкăран йод илет те урине, пёçертнё вырăна, сёрет. Чухла ёнтё, мёнлерех ăшаланнă унăн ури. Юрать, Эва маттур, тавçăруллă хёрача. Самант марганцовкă ирёлтернё шывпа Çемук суранне сăтăрса, вазелинпа сёрсе, бинтпа майласа çыхрё. Кайран та, ытти кунсенче, Çемук урине эмеллесех, бинтне улăштарсах çыхса тăчё.

Тёлёнеççё пирён Эвăран ал-ури çыпăçуллă пулнинчен. Ăçтан ăнкарать-ха вăл медицинă ёçне? Кунта сăмахё те перре çеç: чăн-чăн пионер вăл. Пионерăн законё çавнашкал: нумай ырă ёçе пёлме тăрăшмалла. Ахальтен мар вăл каникулта чух — медпунктра. Врачсем, тăрăшнине кура, ăна ёç майне вёрентеççё.

Çапла пирён Эва. Шанчăк парать. Вăл комсомола кёрсен пирён клас — комсомолецсен класё пулать.

Миккипе иксёмёр шухăшлатпăр: Эва пирёнтен чи çамрăкки, хамăр отрядри пионерсенчен чи кёçённи. Халь ёнтё унăн комсомола кёме çул çитнё, асра юлтăрччё çав кун. Класра пётём ачасемпе — комсомолецсемпе Эвăн çуралнă кунне уявласа ирттересчё. Тёрёссипе илсен, çав кун эпир хамăр ачалăхпа сыв пуллашни пулать. Мёншён тесен отрядпах çёнё пусăма, çўллёрех пусăма куçатпăр.

Пирён шухăшпа комсомолецсем килёшрёç. Эвăн çуралнă кунё çитесси пёр эрне юлсан, пуçланчё хёрў ёç. Асăнса пурăнма мён те пулин пама парне хатёрлемелле.

Тата тутлă çимĕç мĕнрен пĕçермелле-ха? Ку питĕ пысăк ыйту. Халиччен кам хăна пăхса курнă? Паллах, никам та. Хĕрачасем вĕри çатма çинчи пек ăшталанаççĕ, пĕтĕмпех хыпăнса ÿкрĕç. Ăс паракан кĕнеке шыраççĕ, календарь листисене уçа-уçа хупаççĕ. Ăна-кăна пĕçерме сахăр, çу, çăнăх, çăмарта килтен илсе килеççĕ. Пĕр-икĕ кун пĕçерчĕç. Мухтанаççĕ хăйсем, чĕлхĕрсене çăтса ярăр, теççĕ. Хутран-ситрен пире кăпăшка пиçнĕ печени тутантарса пăхтараççĕ. Чăнах та питĕ тутлă.

Тÿсейми кĕтнĕ кун çитрĕ. Шăпах канмалли кун. Класран партăсене кăлартăмăр. Темиçе сĕтел юнашар лартса тухрăмăр. Вĕсем çине хаçат витсен, апат-çимĕç хучĕç. Мĕн кăна çук-ши? Кукăль, хуплу, торт, печени, татах тем те пĕр. Хăнана Кузьма Афанасьевич та килчĕ, учительсем те кунтах. Унччен те пулмарĕ, Эва ячĕпе саламсем килме тытăнчĕç! Учительсем, юнашар класри ачасем, шкул директорĕ саламлать. Комсомол райкомĕ Эвăна обществăна усăллă ĕçре хастар пулнăшăн, çуралнă кун ячĕпе саламласа Хисеп грамоти ярса панă. Эпир, Миккипе иксĕмĕр, Эвăна фанертан касса-тĕрлесе ăсталанă пит шăлли çакмалли парнелерĕмĕр. Парнийĕ чаплах мар та, анчах эпир ăна илемлĕ тăвассишĕн нумайччен тăрăшса ĕçлерĕмĕр.

Часах вăйă, ташă-кулă пуçланчĕ. Кунашкал савăнăçлă утренник пирĕн нихăçан та пулман!

Эвăн комсомол билетне илме эпир райкомола пурте пĕрле кайрăмăр. Вăл шăп вĕренÿ çулĕ вĕçленнĕ, пире пурсăмăра та шкула — саккăрмĕш класа вĕренме куçарнă кун пулчĕ. Килес çул пирĕн класа комсомолецсен класĕ, тесе калĕç. Халĕ, кану кунĕсенче, хамăр комсомол ятне ахальтенех илменнине ĕçпе кăтартса парăпăр. Пире каллех колхоз уйĕ кĕтет.



ТУПМАЛЛИ

ЧЕНТЕРЛЕ КЕПЕР . . . . . 5
ТИНЕС ЧЕЧЕКЕ . . . . . 43
ВУН ТАВАТТА ТУЛТАРАС УМЕН . 77

Валентина Андреевна Андреева
(Валентина Эльби)

УЗОРЧАТЫЙ МОСТ
Повести

На чувашском языке

Оформление художника *Н. С. Краснова*
Редактор *М. Н. Ильин*
Художественный редактор *Э. М. Юрьев*
Технический редактор *А. Ф. Никитина*
Корректор *Ю. Т. Миронова*

НТ 02610. Сдано в набор 27/IX-1966 г. Подписано к печати 30/XII-1966 г. Формат 84×108 1/32. Типографская № 3. Физический печ. л. 3,75. Условный печ. л. 6,30. Учетно-изд. л. 5,33. Заказ № 4471. Тираж 7000 экз.
Цена 16 коп.

Чувашкнигоиздат, Чебоксары, К. Маркса, 36.

Типография № 1 Управления по печати при Совете Министров Чувашской АССР
Чебоксары, Володарского, 5.

Цена 16 коп.